И 87
Ч-46563

# НИКОЛАЙ ИСМУКОВ

# ÇЫРНИСЕН ПУХХИ

*Пĕрремĕш том*

Национальная библиотека ЧР
4-046563

«ЧӐВАШ ЕН»
Издательство-полиграфи комплексӗ»
уҫӑ акционер обществи



К84.09(=Чув)
ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
БЕСПЛАТНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

# Николай Исмуков

# Ҫырнисен пуххи

*Пӗрремӗш том*

Шупашкар
2014

УДК 821.512.111
ББК 84(2Рос-Чув)6
И 87

И 87 **Исмуков Н.А.**
**Çырнисен пуххи.** Пĕрремĕш том. - Шупашкар. - 2014. - 296 с.

«Çырнисен пуххи» пилĕк томпа тухать. Хайлавсене, пĕтĕмĕшле илсен, хăш çулсенче çырнине шута илсе вырнаçтарнă.

И-46563
Национальная библиотека
Чувашской Республики

ISBN 978-5-86765-480-1
ISBN 978-5-86765-481-8 (I том)

© Исмуков Н. А., 2014
© ОАО «ИПК «Чувашия», 2014

## ПОЭТ — ХĂЙ ÇИНЧЕН

Çăварни çатми пек тикĕс çĕрте вырнаçнă Патăрьел районĕнчи Аслă Арапуç. Урамсен ик айккипе ик аркăллă кĕпеллĕ инкесем пек ларса тухнă йăмрасем. Пирĕн кас умĕнчен пилĕкне авса юхан Пăла яланах тарават пире — хуларан кучченеçпе таврăнан ывăлхĕрĕсене шăнкăр-шăнкăр пуплевĕпе хирĕç тухса кĕтсе илет. Пĕчĕк пахчаран шенкер куçлă вĕтĕ чечексем пĕчĕк хĕрачасем пек вăтанса урамалла пăхаççĕ... Епле хитре сăмах каламăн хитре ялăм çинчен! Тăван тавралăха савса сăвă çырмах çуралнă пулĕ эпĕ 1942 çулхи мартăн 2-мĕш кунĕнче...

— Аçунтан пилĕк эрнере юлнă эсĕ, — каласа паратчĕ Анне. — Сăпкаран çĕклерĕ те сана вăрçа тухса кайнă чухне: «Эп сана текех кураймăп ĕнтĕ, ывăлăм, эсĕ мана кураймăн», — тесе сывпулашрĕ тет.

Чунĕ сиснĕ пуль çав хăй вăрçăран таврăнаймасса. Иван тете манран тăватă çул аслăрах пулнă — вăл лайăх астăвать аттене. Кĕрнеклĕ çан-çурăмлă та çӳллĕшĕпе икĕ метра яхăн пулнă вăл. Химически кăранташпа çырнă унăн юлашки çырăвне халĕ те упратăп. Иван пилĕкçĕр ытла хуçалăхлă ял историйĕнче иккĕмĕш врач пулчĕ. Нумай çул хушши Первомайски больницинче тĕп тухтăр пулса ĕçлерĕ. Утмăл улттăра пулсан та алли чĕтремест — хирург скальпельне çирĕп тытать.

Аннем сакăрвун çиччĕре вилчĕ. Вăл тăнлă та питĕ тирпейлĕччĕ. Тутине чăпăрт хупса çӳретчĕ. Калас сăмахне татса калатчĕ. Кăмăлĕпе те, хăйне тыткаланипе те тасаччĕ, çавăнпа кӳршĕ-аршăсене пăхăнтарса тăратчĕ.

Хăй сакăрвун улттăра чухне те сакăрвун ултă юрă пĕлетчĕ, эпĕ вĕсене çырса илнĕ чухне пĕр çаврăмне те икĕ хут калани пулмарĕ. Сакăрвун çичче кайсан та йĕп тиретчĕ, алса çыхатчĕ. Тӳсĕмлĕхне, ăсне-тăнне парса хăварчĕ вăл пире, анчах куç çивĕчлĕхне парса хăвараймастăн-çке.

Асаттен тăвата ывăл пулнă. Аттесĕр пуçне вĕсем пурте вăрçăран сыввăн таврăннă. Çавна лайăх астăватăп: кивелнĕ çурта сипленĕ чухне йыснасăр пуçне (Аннен йăмăкĕн упăшки Лысков Степан Миронович), никам та нимелле пулăшмарĕ. Хăйсем те чухăн пурăннă пуль çав, ачи пăчисем нумай пулнă. Асатте вĕлле хурчĕсем тытнă. Пире, Эверккен çурма тăлăх ачисене, пыл тутантарса пăхнине астумастăп. Ăçтан тупатчĕ-ши вăл ылтăн пек ялтра пĕрер puслăх укçине — пирĕн пата сайра-хутра килсен Иванпа иксĕмĕре пĕрер пус парса хăваратчĕ. Укçи вара шăрпăк курупки илме те çитместчĕ-çке... Анчах Макçăм тете ывăлĕ, Александр Максимович, вăрçăра офицер пулнăскер, пире тăвар илме укçа ярса тăратчĕ. Ун чухне, вăрçăра тăшманăн темиçе танкне е самолетне персе антарсан, вĕсене укçа панă иккен. Виççĕр тенкĕпе пĕр стакан тăвар илме пулнă ун чухне. Темрен килнĕ ĕнтĕ хытăлăхпа çынлăх туйăмĕ пĕр юнран килекен тăвансен?

Кукаçи ăста платник-столяр пулнă. Çĕпĕр çĕрĕнче пурăнакансен килĕ-çурчĕсене тĕрлесе-илемлетсе мул пухнă. Анат Атăк ялĕнче шыварманĕ тытнă вăл. Коллективизаци пуçлансанах (кĕвĕç чăвашсем хăйсен кӳрши-аршисене, тăванĕсене сутма та ăста пулнă-çке) унăн пĕтĕм пурлăхне çытма йĕмлĕ карма-çăвар активистсем тытса илнĕ, ăна хăйсем хушшинче уйăрнă. Çапларах ăнланнă пулĕ активистсем пĕртанлăх тенине. Çапла вара Илья Филипповăн ялти чи сумлă та

ĕçчен хĕрĕсем — Ксенипе Марье çуклăхра çӳре пуçлаççĕ. Кукаçие парти влаçĕ Шупашкар тĕрминче вĕлерет. Çакна эпĕ, хут вĕреннĕ çын пулсан та, ниепле те ăнланса çитерейместĕп: ăçтан, камран килет шăпа тени? Мĕнле асамлă вăй каялла тавăрса çитерет усала? Çав активист-коммунистсем, ĕçсе-супса, çынран мăшкăласа çӳрекен чунсăр çынсем, туртса илнĕ туприпе нумаях пурăнаймаççĕ, пурте пӳкле вилеççĕ: пĕрне, Шăхач çыннине Арсентьева, хăйĕн йытти çисе ярать; тепри чиркӳ чанне пăрахнă чухне ӳксе вилет; виççĕмĕшĕ — кукаçин шыв арманне хута янă чухне хĕсĕнсе пĕтет.

Пирĕн урама, ача-пăча питĕ йышлăран ĕнтĕ, вĕт ура касси тетчĕç. Тĕп килĕсенчен уйрăлса тухнă вăйпитти арçынсем уйрăм хуçалăхсем йĕркелеме пуçланă çеç — вăрçă пуçланнă. Çамрăк арăмĕсем вĕт-шакăр ачисемпе тăрса юлнă. «Чипер арăм касси» те тесе калатчĕç пирĕн урама. Çавăн пек ятлă сăвă та пичетлесе кăларнăччĕ эпĕ каярах.

Шкул çулне çитичченех тыр вырма çӳренĕ. Ултă чĕплĕ хур илнĕччĕ Анне пасартан. Çавсене пăхнă чухне самаях кĕнеке вуланă эпĕ.

Пĕрремĕш учительницăна Клавди Алексеевнăна ырăпа та, усалпа та аса илес килмест: ача чухне, сурана тăвар шывĕ касса кĕнĕ пек, сипленмелле мар амантса хăварнă вăл. Ăна куç умне кăларни — маншăн асап. Çак йĕркесене вуламалла пултăрах унăн. Пиллĕкмĕш класа куçсан, пирĕн класс руководителĕ улшăнчĕ. Математика вĕрентекен йăрăс пӳллĕ те хумлă-хумлă çӳçлĕ майра халĕ те умра тăрать пек. Икĕ çул çеç ĕçлерĕ пулмалла вăл пирĕн шкулта. Ырă кăмăллă Калерия Александровна, эпĕ сире яланах рифмăна вырнаçтарма тăрăшатăп, учитель ĕçне-хĕлне Сирĕн шайпа виçетĕп.


ИСМУК (тӗне кӗнӗ хыҫҫӑн — Кузьма)
МИТТА (тӗне кӗнӗ хыҫҫӑн — Никита)
Митта Гриши
Митта Ваҫлейӗ
Лава
Якур
Тимахви
Энтӗрвен
Мӗтри
Ҫтаппан (вӑрҫӑра вилнӗ)
Элексантӑр (вӑрҫӑра вилнӗ)
Якку (12-ре вилнӗ)
Коля (вӑрҫӑра вилнӗ)
Иван (вӑрҫӑра вилнӗ)
Петӗр (писатель)
Ваҫлей (поэт)
Илле (вӑрҫӑра вилнӗ)
Элекҫей (вӑрҫӑра пулнӑ)
Ванька (вӑрҫӑра пулнӑ)
Ехвин (вӑрҫӑра пулнӑ)
Илле (вӑрҫӑра вилнӗ)
Микулай (вӑрҫӑра пулнӑ)
Эверкке (вӑрҫӑра вилнӗ)
Петӗр (вӑрҫӑра вилнӗ)
Макҫӑм (вӑрҫӑра пулнӑ)
Вингер (учитель)
Атил
Александр
Рафаил (инженер)
Николай
Василий
Николай (философи докторӗ, профессор)
Иван (врач)
Илья (18-та вилнӗ)
Василий (12-ре вилнӗ)
Иван
Александр (офицер)
Василий (ученӑй-биолог)
Олег
Алексей
Алексей
Андриян
Николай (врач)
Александр (юрист)
Александр
Макар
Егор (студент, МГУ)
Гриша (аспирант)

Тепĕр аллă çултан шыраса тупрăм эпĕ ăна Вăрмар районне кĕрекен Кавал ялĕнче. Упăшки хушамачĕпе Исаева пулса тăнă вăл. Хăй мана астумасть иккен. Çавăн пекех тăнлă та çавăн чухнехи пекех йăрăс. Арăм парнеленĕ шенкер тутăрĕ шенкер куçĕсене питĕ килет... Карчăк теес те килмест. Тавах çутçанталăк саккунне — ырă кăмăллă çынсем яланах хитре. Виçĕ томлă сăвă кĕнеки тин çеç пичетрен тухнăччĕ, çавна парнелесе хăвартăмăр мăшăрăмпа. Калерия Александровна ăна та вĕрентнĕ. Шупашкара хĕрĕ патне килсен, ялти çурта хăнана илсе кайрăмăр, мунча хутса ятăм...

Ӳкерме юрататтăм шкулта вĕреннĕ чухне. Мухтав хучĕпе, саплăклă шăлаварпа Шупашкарти художество училищине пырса кĕнĕччĕ çичĕ класс пĕтерсен. Хальхи çамрăксем ĕненмеççĕ, ĕненме те май çук — аслă классенче те тăраниччен çăкăр çисе курман вĕт! Ача чухне чăкăт курăкĕнчен тинкĕле пĕçерсе панине те астăватăп. Епле чĕрĕ юлнă-ха?! Асфальта шăтарса тухакан симĕс курăк вăйĕ пур иккен çамрăк ӳт-пӳре. Çăвĕпе кашни кун калхусра ĕçленĕ, тыррине патшалăха пана. Социализм системи тунă-çке, нимĕççене те, негресене пулăшнă.

1955-1959 çулсенче класĕ-класĕпе комсомол путевкипе Çурçĕре, Çĕпĕре каясси йăлараччĕ. Шкула медальпе пĕтерекенсем те унта лекетчĕç. Эпĕ те Китайпа Монголи чиккинчи Борзяна кайнăччĕ. Пичĕкепе шыв турттарса килетчĕç, вăл вара баракра шăнса пăрланатчĕ, тимĕр куркапа пăр катса, çу нумай ярса лапша пĕçереттĕмĕрччĕ. Пĕр лайăх кун хамăр кас ачипе унтан тарса килтĕмĕр. Вара эпĕ пĕр вăхăт Аслă Чемен, Ишлĕ-Шетмĕ шкулĕсенче физкультура, рисовани, физика, астрономи, чăваш чĕлхи вĕрентрĕм. Свердловскри патшалăх университетне пĕтерсен, Мус-

каври Ленин ячĕпе хисепленекен педагогика институтĕнче философи енĕпе аспирантурăра вĕрентĕм. Эпĕ ун чухне авланнăччĕ ĕнтĕ, икĕ ача. Юлашки икĕ çулĕнче Ленин стипендине тивĕçни çемьене укçа-тенкĕ тĕлĕшĕнчен пысăк пулăшу пулчĕ. Пуçланă калаçăва каласах пĕтерем: каярах çав институтрах доктор диссертацине хӳтĕлерĕм. Ай-хай нумай тав сăмахĕ калас килет ыр çынсене.

Сакăрвуннăмĕш çулсенче КП-СС-ăн агонийĕ пуçланчĕ. Вăтăр çиччĕмĕш çул каялла çаврăнать пуль терĕм — ĕлкĕреймерĕ: парти пуçлăхĕсемех хăйсем ларакан турата касса ячĕç. Сутăнчăксем хальхинче хăйсем ăнланмасăрах ырă ĕç турĕç. Çак пăтăрмаха репресси вăхăтне тĕпе хурса «Ахăрсамана» сăвăлла трагедире çырса кăтартрăм. Мĕн тăвăн — тĕнче тĕрĕсмарлăхĕ тĕнче пĕтсен те юлать иккен. Çав Çитăр Кĕверкийĕсем, Кавĕрле Гавриловсем, Сахьянова-Ярмужсем тата «за» приставка хыçне пытаннă лысинпа славскисем вăрăм ĕмĕрлĕ иккен — вĕсем паян та, виле кĕтекен çăхансем пек, çын такăнасса кĕтеççĕ...

Сăвă çырма, ӳкерме 2—3-мĕш классенчех пуçланă. Пĕрремĕш сăвă Первомайски район хаçатĕнче «Коммунарта» 1954 çулта пичетленсе тухрĕ. Районсене пĕрлештерсен, «Авангард» хаçат редакторĕ хамăр ял çынни Фомин ман сăвăсене вĕлер те пичетлеместчĕ. Сăлтавне тепĕр 15 çул иртсен тин пĕлтĕм: шкул ачи лайăх шайра сăвă çырма пултарайместь, Исмук Миккулĕ таçтан йăкăртать пулмалла тесе каланă тет вăл пĕррехинче. Чăваш поэчĕсене вулама вăхăчĕ пулман ĕнтĕ парти çыннин, халăха коммунизмалла ертсе пымалла пулнă.

Пĕррехинче, çав Фомин чирлĕ чухне, редактор çумĕ, чăваш чĕлхине, поэзине витĕр пĕлекен Виталий

Киданов ман сăвăсене пĕр тулли страниципех, сăнӳкерчĕкпех кăларса пачĕ. Арапуç халăхĕ ăна хапăлласах йышăнчĕ. Çул-йĕр уçăлчĕ темелле. Кĕтмен çĕртен «Тăван Атăл» альманахра икĕ страницăна яхăнах ман сăвăсене пичетлесе кăларнă. Историйĕ акă мĕнле пулнă иккен. Василий Давыдов-Анатрие, çамрăксене яланах пулăшма хатĕр ятлă-сумлă поэта, хамăр ял çыннине, çулталăк каялла пĕр тĕрке сăвă парса хăварнăччĕ. Ăна вăл «Тăван Атăлăн» поэзи пайĕн пуçлăхне Блок сăнсăпатлă А. Лукин поэта çитерсе панă. Хама курмасăрах Аркадий Васильевич вĕсене пĕчĕк умсăмахпа тахçанхи сăнӳкерчĕкпе çапса кăларнă... Çапла уçăлчĕ манăн поэзи çулĕ, аллисем çăмăл пулчĕç мана ырсунакансен. Паян куна вун икĕ сăвă кĕнеки кăлартăм, вĕсен хушшинче турпас пеккисем те, самаях хулăн кĕнекесем те пур. Пысăк хайлавсенчен «Митта» поэмăпа «Ахăрсамана» сăвăлла романа палăртас килет. «Тăватйĕркен» рубаи кĕнеки вара Чăваш патшалăх премине тивĕç пулчĕ. Ăна сумлă поэт тата тăлмач Аристарх Дмитриевпа хальхи вăхăтри чи пултаруллă поэт Анатолий Смолин вырăсла та куçарчĕç.

Куçару тенĕрен, Г. Айги тăрăшнипе ман сăвăсене итальянла, французла, акăлчанла, полякла куçарса кăларчĕç. Нумаях пулмасть самаях хулăн тăвата томлă сăвăсен кĕнеки пичетленсе тухрĕ. Тĕнче философине пĕлни вара мана сăвăсене тĕплĕнрех çавăрса илме пулăшать. Тарăн шухăша поэзин çăмăл çунаттисем çине лартса вĕçтерме пĕлен сăвăçсене кăмăллатăп эпĕ.

Наука тĕлĕшĕнчен те кая юлма юрамасть, çын умĕнче философи докторĕн шайне, профессор хисепне тытса пымалла. Синергетика, гносеологи, наци культурин ыйтăвĕсемпе пилĕк монографипе çĕр ытла статья пичетлесе кăларма пултартăм халиччен. Вĕсенчен хăшĕ-

пĕрисене асăнса хăварам: «Диалектика единичного, особенного и общего в познании социальных явлений». (М.: ИФ АН СССР, 1984); «Диалектика национального и интернационального в духовной культуре». (М.: ИФ АН СССР, 1985); «Современность и проблема целостности национальной культуры». (Ч.: 1994); «Национальное измерение культуры (философско-методологический аспект)», (М.: Прометей, 2001); «Взгляд на мир». Том 1. (М.: Дашков и К., 2009).

Философи ыйтăвĕсемпе çырнă ĕçсенчен ман уйрăмах çакна палăртса хăварас килет. Чăваш ăслăлăх çӳпçинче мĕнле кăна пахалăх упранмасть пулĕ: литературăпа критика тишкерĕвĕсем, чĕлхе ыйтăвĕсемпе çырнă ĕçсем, историпе экономика тĕпчевĕсем т.ыт.те. Анчах ятарлă литературăра паян кунччен те чăваш халăхĕн философине тĕпчесе çырнă наукăлла статьясем курăнмаççĕ-ха. Ăс-хакăл тĕнчине мифологи шайĕнче пăхса тухнипех çырлахатпăр. Çитменнине тата, хăшĕ-пĕрисем философире наци хăйеверлĕхĕ пулма пултарнине йышăнмаççĕ çеç мар, хирĕçлеççĕ те. Ĕлĕкхи грексен, французсен, нимĕçсен, вырăссен философийĕ пур пулсан, мĕншĕн вара ытти халăхсен философийĕ пулмалла мар? Асăннă хăш-пĕр кĕнекесенче эпĕ матери, куçăм, пространство, вăхăт тата вĕсен татса татăлми çыхăнăвне чăваш хăй евĕр ăнланнине, çав ăнлавсене категори шайне çĕклеме пултарнине уйрăм тĕслĕхсемпе ĕнентерме тăрăшатăп. Тепĕр сăмах: ĕç ĕçлеме меллĕ инструмент-хатĕр кирлĕ, ăсчаха вара — ăнлав сăпрайĕ. Парадигмăсемпе вăхăтлă усă курни кирлех, çапах та хамăрăн философилле ĕç хатĕрĕсене те ăсталаса пымалла.

Вĕрентекен хăйĕн вĕренекенĕсемпе пуян. Поэзире ман вĕренекенсем пур тесе татсах калаймастăп. Фи-

лософире вара эпĕ ертсе пынипе тăвать çын философи наукисен докторĕ, икĕ çын философи наукисен кандидачĕ пулчĕç.

Пурнăç икĕ уйрăм вăхăтпа иртет пулсан, пĕрне поэзине, тепĕрне философине панă пулăттăм. Капла та килĕшме пулĕ-ха, анчах тумтир, çăкăр-тăвар илме пĕр-пĕр тиекре ĕçлемелле. Хальхи вăхăтра Мускав кооպераци университечĕн Шупашкарти институтĕнче философи кафедрин пуçлăхĕ тата декан ĕçне туса кун кунлатăп. Ĕçтешĕмсем лайăх, тусăмсем шанчăклă. Тата мĕн кирлĕ? Анчах поэзи пахчинче вăй хурса ĕçлейменнишĕн чун куллен йăшкасах тăрать.

Пĕр вăхăтра мана «Ялав» журнал редакцийĕнче ĕçлеме тӳр килчĕ. Ку мана пичетленме, кĕнекесем кăларма чылай пулăшрĕ. Çыракан çынсем тăтăшах пырса çӳретчĕç унта. Вĕсен — хăйсен тĕнчи. Тепĕр чухне çывăх юлташ текен этемех сана сутма хатĕр. Пулнă ун пекки. Çапах та тӳрĕ кăмăллă çыравçăсем нумайрах: литература, ăраснах поэзи, тасалăх çинче çех тытăнса тăрать. Темиçе çул Чăваш писателĕсен Союзĕнче поэзи секцине ертсе пытăм. Ун чухне СССР писателĕсен членĕсем — поэтсем — 32 çынна яхăнччĕ. Килĕштерсе пĕр-пĕрне пулăшса ĕçлеттĕмĕр. Çĕршыв салансан писательсен Союзĕ те темиçе пая пайланса кайрĕ. Халь çав тĕрлĕ союзсен ĕретне пĕр кĕнеке кăларса курман çынна та илеççĕ. Ушкăн-ушкăн çерçи вĕçнĕ пек пар-р та пар-р вĕçеççĕ вĕсем.

1990-мĕш çулта Раççей, 1991-мĕш çулта СССР писателĕсен съездчĕсем пулса иртрĕç. Ятлă-сумлă чăваш çыравçисемпе пĕрле эпĕ те делегат пулса хутшăнтăм унта. Юлашки съездсем пулчĕç вĕсем. Историне çавăнпа кĕрсе юлтăмăр пулас.

Ман литературăри пултарулăха хакласа тĕрлĕ хаçат-

журналсенче, тĕпчев кĕнекисенче чылай тишкерӳ ĕçĕсем çырчĕç ĕçтешĕмсем (В. Давыдов-Анатри, Ю. Айташ, В. Кервен, В. Эктел, Н. Ларионов, И. Чермаков, Л. Бахмисова, С. Сатур, А. Мефодьев, Н. Теветкел, А. Дмитриев çыравçăсем, М. Федотовпа В. Родионов профессорсем, Чăваш халăх поэчĕ Ю. Сементер т. ыт. те. Ăраснах Л. Бахмисова поэтессăн диплом тата диссертаци ĕçĕсене палăртас килет. Тавах вĕсене, хăйсен те ĕçĕ-хĕлĕсем ăнса пыччăр.

Пурăннăçем умра тумалли ĕçсем хушăнсах пыраççĕ, анчах пурăннăçем кунçулăм та кĕскелсех пырать. Мĕн тăвăн, кашни çыннăн виçсе панă хăйĕн каçалăкĕ, ĕçлес вăй-халĕ. Вырса-пуçтарса-кĕртсе ĕлкĕресчĕ тыррине.

Кам пĕлет, ку сăвăсен пуххине кĕреймен хайлавсем кун çути те курайміĕç. Çапах та тăхăмсенчен пĕри те пулсан ман юратнă ĕçĕме тăсĕç тетĕп. Несĕлсене астуса, вĕсене асăнса пурнасси — этем тивĕçĕ.

Эпĕ ку кĕнекере хамăрăн арçын енчен килекен йăх-тымарне илсе кăтартасшăн. Ăна Вингер Петрович Митта 1991 çулхи ноябрь уйăхĕ тĕлне хатĕрленĕ, малаллине тата тĕпчев сăмахĕсене эпĕ хушнă.

***Исмук*** (***исма***) – араб тата çĕнĕ перси (Исмаэл) сăмахĕсенчен пулса кайнă. Каярахпа тĕрĕксен ачашласа каланине пĕлтерекен — ***ук*** татăк хутшăннă, вырăсла — ***ов*** хушса хунă, вара Исмуков хушамат пулса кайнă. (*Бернд Шернер.* Арабские и новоперсидские заимствования в чувашском языке. ФРГ, 1977. – 153 с.) Митта Ваçлейĕн «Кун кĕнекинче» çапла çырса хуни пур: «...масар çине ... кайрăмăр. Унта ман мăн асаттесем — Митта тата Исмук». (*Митта Ваçлейĕ.* Çырнисен пуххи, 2 том. Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 2005. С. 393). Малтанхи Митта Ваçлейĕ манăн мăн асатте

пулнă. Исмук Элексейĕ (Сабир) каласа панă тăрăх, вăл вилнĕ кун (1908 çулхи мартăн 5-мĕшĕ) Василий Егрович Митта çуралнă. Ăна тĕне кĕртнĕ чух пуп: «Пĕр Митта Ваçлейĕ кайрĕ, тепри çут тĕнчене килчĕ. Апла Ваçлей ят хурас», — тенĕ пулать.

Исмук йăхĕ ăратлă пулнă. Малалла вăл, саманине кура, сайралса пыни курăнать. Митта Ваçлейĕпе (асли) Митта Гриши енчен пыракан арçынсенчен самай паллă çынсем тухнă. Вĕсем хушшинче — поэт-писательсем, ученăйсем, врачсем, офицерсем, инженерсем, юристсем т. ыт. те. Акă ĕнтĕ мăнукăмсем те çитĕнсе пыраççĕ. Пĕри Григорий, техника енĕпе курăмлă аспирантурăра вĕренет. Тепри, Егор, МГУ-ра механикăпа математика факультечĕн студенчĕ. Анчах ман малашнехи тăхăмсенчен пиртен ирттерекен паллă сăвăç тухасса шанас килет. Ара, поэт пуласси тăрăшса вĕреннинчен çеç мар, чи малтан юнран килет-çке.

# 1954-1960 çç.

* * *

Пурнăç чаплă иккен.
Пурнăç! Пурнăç аван.
Çутçанталăк килен
Çут коммун пек ялан.

Пĕлĕт – çамрăк ача,
Сар хĕвел – ун кулли.
Пирĕн кăмăл анчах
Шурă пĕлĕт йăли.

Кайăк-кĕшĕк туйра,
Çут хĕвел – мăн кĕрӳ.
Çак çĕр çийĕ вара
Этемпе пит хĕрӳ.

Таврара çуркунне:
Ӳсентран, юханшыв...
Çут коммун шевлине
Сапалать ман çĕршыв.

*1954 ç.*

И-46563



Национальная библиотека
Чувашской Республики

* * *

Лупасай çумне хальхаççăн
Тĕршĕнет çерçи.
Вĕсене унта хĕл каçăн
Сивĕ те мар-ши?..

Улăм витнĕ çурт аркийĕ
Пас тытсан вăйлах
Калăн, ватă кукаçийĕн
Куç харши майлах.

Сакă сапнăн кассăн-кассăн
Çывхарать Пукрав.
Урама килет тухассăм —
Тумтирри çукрах.

Хĕл илемĕ — чун хавалĕ,
Ан хухсам, ан чак.
Ав вĕçсе анать саламлăн
Картишне чакак.

Сивĕ, те пӳрте кĕртменшĕн
Те кулса, юри
Чӳрече çине ӳкерчĕ
Шур автан хӳри.

*1954 ç.*

* * *

*Хĕвел хĕрелсе ансан,*
*тăман тухать теççĕ.*

Хĕвеланăç хапхи
Хĕрлĕпе хĕрелсен,
Хĕпĕртерĕç хайхи
Хĕл мучи хĕрĕсем.

Харпăр хăй хирĕнсе
Хирелле хӳтереç,
Хăрварта хĕсĕнсе
Хĕвĕшеç хӳтĕре.

Хĕллехи хăнасем
Хушăксем хыпашлаç.
Хĕлмучи хĕрĕсем
Хăвăла хапăллаç.

Хăвасен хӳттипе
Хăраса хаклашаç,
Хурăнсен хуппипе
Хытăрах хашлатаç.

Хаваса хăнăхман
Хавшакрах хурлăхан
Хушăран-хушăран
Хăраса хурланать.

*1954 ç.*

* * *

Аслă çĕрĕн тăван
Илемне сĕртĕнсе
Ирсерен çуталса
Шурăмпуç хăпарать.
Касхи сĕм чĕтренсе
Майĕпен сирĕлсен,
Чăваш çĕрĕ çине
Йăваш çутă сарать.

Хырайран хĕрелсе
Сар хĕвел çĕкленсен
Ылтăн кайăк пекех
Илĕртет çав тери.
Ырă касăн парни
Сывлăм кĕмĕлленсен
Хӳхĕм тутăр çыхать
Улăх — пурлăх чури.

Ыйхăран вăранса
Ирхине ир-ирех
Ĕççынниййĕ васкать
Парти хушнă ĕçе.
Иксĕлми хаваспа,
Туслă харсăрлăхпа
Пурнăçлать вăл çĕршыв
Умĕнчи тивĕçе.

Ĕçĕн шавĕ ӳссе
Сарăлса пынăçем
Сарă кайăк юрлать
Юррипе киллеnce.

Пурнăç лайăх чухне
Шăвăнаççĕ майпен
Куç умне халиччен
Курăнман илемсем.

*1955 ç.*

* * *

Калăн, канăçсăр стихия
Шухăша пăтраштарать.
Кутсăр-пуçсăр тăман çех-и
Çынсене лăплантарать?

Çаврăнать, ÿкет, тăрать те
Лăпланать кăшт пĕр кана.
Çавăн пек вара юрать-и,
Асхавалĕ, лăпланма?

Шухăш-туйăм лăп ан тăтăр
Тĕлĕрсе пĕр вырăнта.
Çак тăман пек тапхăр-тапхăр
Уртăр, çаврăнтăр таçта.

Йăл илсе пуçлать кулма вăл
Арăш-пирĕш силленсех.
Тавлашма тăман пит хапăл, —
Исмуков Коля пекех.

Пĕр юрлать тăман пит çепĕç,
Пĕр кулать йĕре-йĕре.
Ман чĕре канать унта çеç —
Ирĕкри кĕрешÿре.

Калăн, канăçсăр стихия
Шухăша пăтраштарать.
Кутсăр-пуççăр тăман çех-и
Сăвăçа лăплантарать...

*1956 ç.*

* * *

*Хуран çунсан, тепĕр кун*
*çумăр пулать, теççĕ.*

Хуран çийĕ — вăрă касĕ
Хуралса çунса тăрать.
Пĕрчĕксем таçта васкаççĕ, —
Пĕринчен пĕри тарать.

Пĕринчен пĕри иртмесĕр
Шăвăнаççĕ малалла.
Калăн, савăнăçлă, ӳсĕр
Вырăссем ташлаç çапла.

Ан шикленĕр те, ан хăрăр,
Çырларан килен хĕрсем:
Хуран çийĕн хура хăрăм
Пытăрин ара хĕрсе.

Витĕр çутă, витĕр хĕрлĕ
Пĕрчĕксем юлашкинчен
Куç уçса илеç те чирлĕ
Çăлтăр пек сӳнеç ирччен.

*1956 ç.*

* * *

Чĕнтĕрленĕ çĕн кĕпер,
Юмантан — кашти.
Шыв ăсма анать сар хĕр,
Шыв юххи — утти.

Карлăкран çут çăл çине
Уртăш уртăнать.
Уртăшран хитре сăнне
Хĕр шывра курать.

«Икĕ каç та икĕ кун
Савнине курман.
Куççульпех-çке шур саппун
Шенкерленчĕ ман.

Тĕксĕмлетрĕм çут сăна,
Ăш хыпса çунать.
Юратмасть савни мана», —
Тет хĕр, кулянать.

Çаврăнса пăхать пике —
Ах, килет савни.
Витрисем çăла ӳкеç,
Тулчĕç туп-тулли.

Шыв ăсса килет сар хĕр...
Тутисем — çырла.
Чуп тăвать чун савнине —
Витрисем — çăлра.

*1957 ç.*

* * *

Шар çутă сÿнчĕ. Хĕвĕшсе
Текех вĕçмеççĕ лĕпĕшсем.
Пĕр сÿннĕ шелкĕм кăвара
Вĕрсе эс чĕртĕн-и вара?

Кĕленнĕ юрату текех
Хĕрÿлленмест те ăшăтмасть.
Кайран, çухалнă имшеркке
Мухтав пек манăçа юлать.

Çапла вăл: юрату сÿнсен,
Хĕрÿ сапмасть, çĕтсех пырать.
Анчах та, асăма килсен,
Чуна кăвар пек çунтарать.

*1957 ç.*

* * *

Хăçан та пулсассăн
Çапла асилсессĕн,
Тархасшăн каçар та
Пит айăп ан ту, —

Савмарăм та пулĕ ...
Ăçтан-ха пĕлетĕн
Кама та кампа
Тÿр килет юрату.

*1957 ç.*

* * *

Пуççаптармăш пур иккен сирте те:
Вăшт çеç ывăтан та кăтруна
Лĕпĕш пек умран вĕçсе иртетĕн
Юриех курми пулса мана.

Эп пĕлетĕп, эсĕ те пĕлетĕн –
Пĕчченшерĕн тунсăхлă утма.
Эсĕ ăнсăртран тĕлпулăп, тетĕн,
Эп юри тухатăп сан умна.

Пултăр-и сукмакĕ вăрăм ансăр
Тĕл пулма ялан иксĕмĕре.
Тав сана, мана юри курмасăр
Маншăн çеç çуннишĕн тĕнчере.

*1957 ç.*

* * *

Çутаяк пулли пек
Шур хăва çулçи
Пĕшкĕнсе илет те
Чĕнтренет шыв çи.

Е ку чуптуни-ши,
Е ачашланни?
Тен, хавас хăвашăн
Хум чăн-чăн савни...

*1957 ç.*

* * *

Ман пекех, атте, эс хăш чухне
Шухăша путса тен ларнă пуль.
Асаттен çухалнă тăприне
Шыраса çӳренĕ темĕн чул.

Сан ятна шырарăм тăрăшсах
Вилнисен сĕм палăкĕ çинче.
Тупаймарăм. Юлнă пуль выртса
Урăм-сурăм вăрçă хирĕнче.

Ĕмĕрлĕхех хупнă чух куçна
Мĕн-мĕн аса килчĕ-ши сана?
Аса илтĕн пуль тĕпренчĕкне —
Сăпкари пĕр пĕчĕк ывăлна.

Шуса иртрĕ пуль хаваслăхра
Иртсе пынă çамрăк вăхăту...
Çĕнтерӳшĕн çунакан чунра
Пулнă ĕмĕтӳ те хăвату.

Пĕр йĕрке пур çутă тĕнчере:
Сан ятна упраççĕ сыввисем.
Асăнмалăх юлчĕç аннере
Çĕр кĕскетсе çырнă сăввусем.

Тыл тĕрекĕ пулнă аннесем
Тăшмана çапса аркатнă чух.
Аттене асилнĕ чух сире
Асилмесĕр хăварма май çук.

Ман анне, мухтавлă ман анне!
Йывăр вăхăтра вăл пуç усман.
Хăй çимесĕр тупнă татăкне
Мана панă — выçă усраман.

Хут вĕрентнĕ мĕн вăй çитнипе
Кĕнчеле арланă каçсенче.
Ман валли çĕленĕ çĕн кĕпе
Хĕр чухне çĕлетнĕ кĕпинчен.

Çынпа тан ӳстернĕ, шеллемен
Халăхпа пĕрле пур вăй-халне.
Пиртен вăрттăн йĕнĕ каçсерен
Манаймасăр савнă мăшăрне.

Иртсе кайрĕ йывăр самана.
Манăçса пыраççĕ иртнисем,
Чун юратнă савнă çĕршыва
Таптама памарĕç аттесем.

Хĕрхенмесĕр çамрăк ĕмĕрне
Вĕсем çăлнă пирĕн пурнăçа.
Тайма пуçăм, аттепе анне,
Манас çук сире эп нихăçан.

*1958 ç.*

* * *

Çамрăк хурăна
Çил тайса вĕрет.
Çамрăк чунăма,
Ай, шиклентерет.

Мĕншĕн килтĕм-ши
Хурăн çырлине,
Курăп терĕм-ши
Турă çырнине ...

Çаврăм-çаврăм çил
Таткалать чуна.
Мĕншĕн саврăм-ши
Тусăм, эп сана?

Эс килмерĕн те —
Сӳнчĕ çут тĕнче.
Эс килмерĕн те —
Пушă çак тĕнче.

*1958 ç.*

* * *

*В. Митта вил тăприйĕ умĕнче*

Тухăçран пуçласа анăçа çитиччен
Çапса çумăр çăвать.
Пӳртлĕ çулĕ çумне тĕршĕнейнĕ пĕччен
Шур йăмраллă çăва.

Касса хунă çерем, пĕлтĕрхи тĕмеске
Ах пĕччен-çке сĕре.
Пуç вĕçне шăтса тухнă черченкĕ çеçке
Ӳпне выртнă – йĕрет.

*1958 ç.*

* * *

*«Юлташ пултăр хăвăнтан маттур»*
В. Митта

Ĕлĕкхи сăмахăн чăнĕ пур:
Юлташ пултăр хăвăнтан маттур.
Инкеке пайлатăр вăл икке,
Савнăçне те уйăртăр икке –
Ун чухне этем юлташ иккен.

Ак халькаççăн кĕчĕ йăлана
Шутламасăр каласси çынна:
Ĕçкĕре пĕрле пулсан – юлташ,
Йăпăл-йăпăл калаççан – юлташ,
Çавсемех сана кайран вăлтаç.

Ĕлĕкхи сăмахăн пур састаш:
Юлташ пултăр шанчăклă çулташ.

*1958 ç.*

* * *

Асаттен аслашшĕ тунă
Сак çинче ларатпăр вуннăн.

Сарлака хăми хыртан,
Урисем пурте пĕр тан.

Хăпарса ташла та сик эс —
Хускалмасть, тăрать тип-тикĕс.

Кивĕ, кивĕ тĕрĕсе
Ма хурлар-ха кив тесе?

Ун çинче паян вĕр çĕнĕ
Вунă тĕрĕслĕх çĕкленнĕ.

*1958 ç.*

* * *

Сивĕ-çке. Хыткан кĕрт тăрăх
Çил ачи чупать йĕрсе.
Ан ылхан, юлташ, ан тарăх
Шăпуна усал тесе.

Эс пĕлетĕн, пурнăç пирĕн
Тĕлпулу та ăсату.
Чик юпийĕ йĕркепĕрĕн:
Сан та тухмалла яту.

Сивĕ-çке. Хыткан кĕрт тăрăх
Çил ачи чупать йĕрсе.
Юр шăлса ан çĕтчĕр кăлăх
Малалла пыран йĕрсем.

*1958 ç.*

## ХЁВЕЛ АНСАН

Сарă кунăн чапĕ —
Сар хăвел ансан,
Хутланса, ача пек,
Çывăрать тюльпан.

Выляса пĕр касă
Ывăннă тăнче
Анаслать пек каçăн
Ăшă хĕвĕнче.

Шур уйран пек шурăх
Тĕтрепе шурса
Çывăрать мăн улăх,
Çывăрать шур сад.

*1958 ç.*

## ÇĂЛТĂР КУÇЛĂ ЧЕЧЕКСЕМ

Е çут çăлтăр, пăр ӳксен,
Хăпармарĕ урăхран –
Çăлтăр куçлă чечексем
Шăтса тухнă улăхра.

Пирăн кӳршĕ хĕрачи
Пăхса иртнĕ-ши кунтан –
Кăн-кăвак чечек пахчи
Улăх çумĕн манпа тан.

Шур чечек лаппи-лаппи,
Таптас марччă утнăçем.
Тен, вăсем Нарспи аппин
Çуса хунă тутрисем?..

*1958 ç.*

## ÇУМĂР ХЫÇÇĂН

Ут кĕтӳ-ши тĕпĕртетрĕ
Арапуç кĕперĕпе –
Тĕпĕр-тĕпĕр çуса иртрĕ
Çумăр çуртăн тăррипе.

Çуса иртрĕ те çухалчĕ
Аякри çулсем çинче.
Сар сакка çуса хăварчĕ
Чечекри сад пахчинче.

Урамра чупаç уç саслă
Кӳршĕ ачисем, куран.
Хам та чупăттăм хаваслăн
Ачапча пек çаруран.

Сар хĕвелĕн те пур мар-и
Ача ăсĕ кăшт кăна:
Авă, вăл та чăтаймарĕ,
Выртрĕ лĕп лупашкана.

*1958 ç.*

* * *

Тепӗр чух ман пурнӑҫ темшӗн
Ҫунӑк пек кӑна:
Эс пӗрре пӑхса илнишӗн
Парӑп эп ӑна.

Ҫӑмӑлттайлӑхшӑн, пӗлетӗп,
Кайрӑм эп чире.
Ак хӗлхем сиксе ӳкет те
Ялкӑшать чӗре.

Ӗмӗрех эс пушӑ, ҫурӑк
Усрӑн-и чуна? —
Е шуйттан, е ӑслӑ турӑ
Йышӑнать ӑна.

Чӗрене нимех хушаймӑн
Хӑть те мӗн эс ту,
Сивӗ шыв сапса яраймӑн —
Килчӗ юрату.

*1958 ҫ.*

## ХĔРЛĔ АСТРА

Тăм ÿкрĕ, çумăр асрĕ,
Лÿшкерĕ пĕр кана.
Ан парăн, хĕрлĕ астра,
Йĕпе-сапа куна.

Эс, çуллахи хĕвелĕн
Пĕр ванчăкĕ пулса
Ыр туйăмсем парнелĕн
Анне пек йăл кулса.

*1959 ç.*

* * *

Хĕвел, йăмăхтарса куçа,
Шевле пулса йăл-йăл çиçейрĕ.
Кайран хуллен куçа-куçа
Ман витрене кĕрсех ÿкейрĕ.

Эс мар-и çавă сар хĕвел,
Хавас шевле сан куллу мар-и?
Кĕрсех вăл ÿкрĕ ман хĕве,
Анчах мĕскершĕн ăшăтмарĕ?..

*1959 ç.*

* * *

Мĕскер вăл юрату? Ун ячĕпе
Хăвна хӳтелесе хăвах пĕр хушă
Çунса иккĕленни? Кӳренӳпе
Çут тĕнчене эс сӳнтерсе пĕр хушăн
Унта каллех хĕвел туса çутни,
Вара, виçесĕррĕн хавхаланни,
Ăна анчах тиркевсĕр хапсăнни?

Тен, çакă юрату? Вăл маншăн
Ăс тупсăмĕ, анчах çав вăхăтрах
Хыпса çунни те кирлĕ-кирлĕ маршăн,
Асаплăн тасални те çав вутра,
Çынна çех мар — хăвна та тиркени,
Шăпа мĕн çырнине ӳпкелени,
Телейлисен шайне çитес тени...

Çĕр пин ыйту — хурав пĕрре кăна,
Çĕр пин этем — пĕр ăнлану тупаймăн.
Çук япала пек юрату — ăна
Çырса та каласа та ăнланаймăн.
Тибулл, Хафиз, Петрарка, Ювенал...
Епле йĕрлеççĕ ĕмĕрсем ăна.
...Тăмхасăр хăвармарĕ вăл мана.

Пурах-ши юрату? Вăл çырана
Хумсем лăпка-лăпка ваклани мар-ши?
Çĕр тĕпренсе шур хăйăр тухмасан,
Юхатчĕ-ши вара çăл-шыв тасан,
Çырми пулатчĕ-ши шыв юхмасан?
Сыв пултăр юрату сар хĕршĕн, аршăн.
Çынна чун панă эмелех вăл маншăн.

*1959 ç.*

## ПУÇ ЯНĂ КУКАÇИН ÇЫРĂВĔ

Иртсессĕн ыйхă пек çу каçĕ,
Тĕтре майпен шуса иртсен,
Черет тăрса шуса тухаççĕ
Кун-çулсăр сарăлнă сăртсем.

Салху кĕтӳç юрри пек кĕлмĕç
Çил юхăмĕ килсе лексен,
Чечек татма кунта тек килмĕç —
Тĕпреннĕ мĕскĕн чечексем.

Чул-хăйăр, тупаймасăр канăç,
Çил çилхинче пĕр хĕрĕнсен,
Куçа курнайрĕ хĕвеланăç
Хăмла çырли пек хĕрелсе.

Вара виç талăк чарăнмасăр
Йĕпхӳ тек хĕвĕшет, çăвать.
Ăçтан тăратăн хускатмасăр
Ун чух чунри калаçăва.

Пуç янă çыннăн икĕ кунĕ
Ик-виç султалăка тăрать.
Танлаштару тĕнчин саккунĕ
Хăех çапла шутлаттарать.

Çăл Атăкĕ, паян эп сансăр
Пуçларăм темĕн ăнкарма:
Кунта Хуркайăк çулĕ ансăр,
Кăвак тӳпе те янкăр мар.

Мĕнле ытарлă, çыпăçуллă
Тăван сăмахĕ аякра.
Чăваш енче сăртсем кун-çуллă,
Кĕтӳç юрри те савăкрах.

Ытах та пĕчĕк çăл пек тарăн
Шухăшăмсем йăвашлансан,
Эп çул шутне манма пултарăп,
Тăван яла вара – нихçан.

Сан ятупа, сăваплă Çĕрĕм,
Ыратăва та тӳсĕпĕр:
Пĕр ӳт те пĕр чĕре-çке пирĕн,
Пурнас ыранхи кун та пĕр.

Апла пулсан эп килĕп, килĕп
Вăй-хал кӳме сан ытамна.
Атте-аннен сăваплă пилĕ
Çитет пуç янă ывăлна.

*1959 ç.*

## НАПОЛЕОН

Манмасть хăшне нихçан та халăх –
Кама мĕнле килет шăпа.
Çар пуçĕ, ĕмĕр асăнмалăх
Мĕнпе эс тухнă-ха чапа?

Е эс пĕрре сулсах ун-кунăн
Тустарнă ирсĕр тăшмана?
Е харсăр паттăр пек пуç хунă
Хӳтĕлесе хăв çĕршывна?

Ун чух тĕнчен хĕвеллĕ умĕ –
Европă тунă самана.
Хăватлă революци хумĕ
Мала кăларнă та сана,

Пĕрне эс пуç таран кĕскетнĕ,
Хăшне çĕкленĕ сăпкаран.
Çапла тронран çӳле çĕкленнĕ
Пулас хуçа Европăра.

Шлепке хывса сана пуç тайнă
Мĕнпур патшалăх патшисем,
Мĕскĕнленсе чĕнмесĕр тăнă
Вăтанчăк лавăç пек вĕсем.

Анчах шăпа вылять санпа та;
Мухтав вăл – ал çупма кăна.
Çур ĕмĕрне вăрça эс патăн,
Çур ĕмĕрне – чĕр тыткăна.

Улăшăнать пушарăн тĕсĕ
Тӳпе тĕсĕпеле, çапах
Вилме выртас чухне те эсĕ
Аташнă юнлă вăрçăпа.

Чӗтренӗ властелин ӳт-пӗвӗ.
Юн карнӑ куçсенче çаплах
Штыксем ялтранӑ çиçӗм евӗр,
Йӑваннӑ салтаксем, анчах

Çапӑçура персе антарнӑ
Салтакӑн юн тумламӗнчен,
Кӗрен чечек шӑтса хӑпарнӑн
Çухатнӑ шпора хушшинче,

Çӗкленнӗ касӑлнӑ Европӑ,
Çӗкленнӗ хӑй суранӗпех.
Патшалӑх ӳснӗ лаптӑк-лаптӑк
Картсем сарса пӑрахнӑ пек.

Хыçра çеç мар, малта истори:
Ӗçхалӑхӗ сывах пулсан,
Çӗршыв та ӗмӗр сывӑ тӑрӗ,
Путланмӗ манӑçа нихçан.

Хӑшне савсах лартаççӗ палӑк,
Манаççӗ çавӑнтах хӑшне.
Теприсене вара ӗçхалӑх
Упрать коллекци вырӑнне.

Аваллӑх — ӑс вӗрентекенӗ.
Саманине кура — çынни.
Халь çӗнтерӳçӗ, чӗрӗ гений
Вӑрçа чарса лартаканни.

Çавна савса халь лартӗ палӑк
Тӗнче ӗçхалӑхӗн алли.
Чап юлтӑр ӗмӗр асӑнмалӑх,
Мир пултӑр ӗмӗрӗн палли.

*1959 ç.*

## ÇИЛ-ТĂМАН ХУСКАТНĂ ШУХĂШ

Çил ачисем таçтан чупса тухаççĕ,
Шур пир валли кумаççĕ ураççи.
Лаша тăлли явать тăманлă каçĕ...
Çапла куçса ире кĕтет Раççей.

Çĕкленчĕ юр хӳме пек. Чун уççийĕ
Кунта пăлхавлă шухăшра тăма.
Ăçта-ши йăпшăнать, юртать кĕрт çийĕн
Кĕвак песец семьи пек çил-тăман.

Хатарлă куçăм, кĕрешӳллĕ куçăм,
Çав куçăмран тăрать пуль çут тĕнче.
Чулра хĕм каннине курать ман куçăм
Çĕр ĕмĕрĕн кал-кал утăмĕнче.

Тахçан çапла тăман пекех тĕркешнĕ
Этем йăхне хускатакан эшкер.
Пĕр хускалсан Атрек таран тăм ишнĕ
Усун Пешевартан хускалнăскер.

Юпах тиха юнне ĕçсе вăй илнĕ
Скифсем лаша тăлланă ют çĕрте.
Сар Ази хăйăрне выртса йĕрленĕ
Гун йăхĕ чăвашра кăвайт чĕртет.

Аталанса çитсе хăçан-ши тăнă,
Тăп чарăннă хытса Çĕр хумĕ – ту?
Ăçта, хăçан, этемлĕх, сан капланнă,
Тĕнче хуçи пулмалăх хăвату?

Нумай хыпар усрать-çке çак истори:
Тутар-монгол, швед, турăк йĕрĕсем...
Пулассисем килсен, пулни вăл тарĕ
Каллех истори авăрне кĕрсе.

Итек таптанă çĕр майпен йăл илнĕ.
Этем ширанă сивĕ çут çăлкуç.
Çилсем тустарнă хурăн пек çĕкленнĕ
Сенкер пĕлĕчĕпе хăватлă Руç.

Ĕмри иртсе пырать çул çӳрекенĕн,
Ӳксен те ӳкĕ вăл мала пăхса.
Тем-тем тăвас çынсем те çĕре кĕнĕ
Чĕррисене чĕр ĕмĕт хăварса.

Халькаççăн пурте вăхăта виçетпĕр
Этем пурнăçĕпе, шанчăкĕпе.
Этемлĕх ĕмĕчĕ – Хĕвел-Октябрь
Каçас вар урлă хыврĕ мăн кĕпер.

Халь пĕр çемье пек тĕрлĕ халăх йăхĕ,
Пĕр юррăн илтĕнет вĕсен сасси,
Чăваш чĕлхи те шăнкăр-шăнкăр юхĕ
Çĕршывăм тăрăх – ку вăл пуласси.

Эпир вара? Эпир йĕр хăвармасăр
Çухалăпăр-и халăх хушшинче?
Пулма пултараймасть! Эпир пĕр уссăр,
Пĕр тĕлсĕр пурăнман çак çĕр çинче.

Кĕрешӳре хастарлăн иртнĕ ĕмĕр
Вĕрентнĕ туслă пурăнма пире.
Пуласлăхшăн çунаççĕ чĕресемĕр –
Пĕлсе кăна тытса пыр чĕлпĕре.

Çут кăшăлри мерчен чулсем пин тĕслĕн
Ялтранă евĕр ярăм çутăпа
Эпир пĕр çемьере пулни кĕтеслĕ.
Пĕр çемьере çын çутă çул тупать.

*1959 ç.*

* * *

Ак каллех хĕл çитрĕ çаврăнса,
Савнă ялăм шупăр пĕркенет.
Калаймастăп нимĕн çавăрса:
Те шур юр, те тунсăх чӳхенет.

Ах, савни, мĕскершĕн ăш çунать? –
Асăнатăп вĕççĕр сан ятна.
Шур хĕлтен ыйтас-и çил-çунат
Вĕл вĕççе пымашкăн сан патна.

Çак асамлă юрăн касĕнче
Пĕтĕм ĕмĕт-шухăш сан çинчен.
Юр пĕрчи пулам та эп, пикем,
Пирческӳ çине пырса ӳкем.

*1959 ç.*

* * *

Утрăм эпĕ ютесе
Миçе çухрăм.
Савнине курас тесех
Вăййа тухрăм.

Эй мĕн чухлĕ хĕрача —
Пулас арăм,
Кăвак куçлă хĕр анчах
Кураймарăм.

Вăйăра пуçа ухса
Çӳреймерĕм,
Уттăм тухрĕ пуль ухсах,
Кăмăл — эрĕм.

*1959 ç.*

* * *

Çак салхуллă сехетре
Ман асамçă пек пуласчĕ:
Пĕчĕкçеççĕ ĕмĕтрен
Кăкăрхӳтлĕх* шăратасчĕ.

Чĕмсĕр те усал çынсем
Чечеке пырса таптанăн,
Тунсăх, шанчăка çĕнсе
Чӳрече умне капланнă.

Вăхăта эс анăça
Хăвалаччĕ, кăнтăр çилĕ.
Унчченхи савăнăça
Ал лаппи çине эп илĕп.

Утаман ӳсĕмĕпе
Çĕкленет черченкĕ сисĕм.
Çӳллĕ хырлăх çумĕпе
Пĕчĕк хурăнлăх пĕр ӳсĕм.

Пурте йăрăс та çинçе,
Пурте савăнма çуралнă.
Ах, мĕскершĕн вĕсенчен
Пĕри çех ирех саралнă...

Кам мана халь хӳтĕлет?
Кам мана ыталĕ, шеллĕ?
Ĕнтĕ тунсăхпа телей
Яланах пĕр пек виçеллĕ.

---

* Кăкăрхӳтлĕх, питлĕх – щит боевой.

Тен, телейĕн тутине
Тунсăх пур чухне çеç сисĕн?
Йӳç сăмах чăтсан тинех
Çĕнтермешкĕн тупăн тӳсĕм.

Тăрăп пурпĕрех — ӳксен,
Сехри хăптăр чĕр тăшманăн.
Кунран кун çапла ӳссе
Çĕкленет хăюлăх манăн:

Çак салхуллă сехетре
Тосканини пек пуласчĕ:
Парăнман çут ĕмĕтрен
Çутă питлĕх шăратасчĕ.

*1959 ç.*

* * *

Пĕчченех пӳлĕмре. Сарлака кăмака
Путексем хырнипе ватă пек.
Шухăша перапа каласса канакан
Хут çинче çутатса татăп эп.

Иртнĕ кун пӳлĕмре юлнăнах сыхланса,
Умăмра — ĕнерхи шанчăкăм.
Пурпĕрех ĕнерхи пек çунса-вылянса
Ялтрамарĕ телей ванчăкĕ.

Сар стена çумĕпе чӳхенен ман мĕлке
Тĕллеве йĕрлесе пынă-ши?
Çырăнмасăр юлсан çынна тивĕç йĕрке,
Нумайччен вăл чунра йынăшĕ.

Чĕререн асаппа тухнă сиплĕ сăмах —
Утса тухнă шырав çухрăмĕ
Çавăрса каялла тахçанхи сассăма
Пулса тăчĕ тĕллев ахрăмĕ.

*1959 ç.*

* * *

Эп парăмлă çак вăхăт умĕнче:
Аттесемпе пĕрле çан тавăрса
Пăшал йăтса эп каяйман вăрçа,
Выртса юлман таçти çĕршывсенче.

Тетесемпе лартман çап-çут кермен,
Çеремлĕ Çĕр уçман, туйман терте.
Хывман эп чукун çул та Çурçĕрте –
Каçарăр: çитĕнсе ĕлкĕреймен.

Çула тухсан, умра пыл-çу пулман.
Çапах та утнă пурнăçпа пĕр тан.
Юратнă çĕршыва чунтан-вартан,
Савăнăçне анчах тытса юлман.

Атте-аннесене, тетесене,
Çĕршывăма, ырми ĕçтешсене
Сăвва-юрра та кĕртмесен тата
Парăмсене мĕнле парса татам?

*1959 ç.*

* * *

Çуралнă ял — сăваплă çĕр кĕтесĕ,
Паян сывпулашатăп санпала.
Анчах мана куç илейми кĕт эсĕ,
Эп — ывăлу, ман килмеллех калла.

Ытарайми илемлĕ Пăлаенĕ
Мана куç хывнă ĕмĕрлĕх иккен.
Пуянлăх, чап, таçти çĕрсен ĕлккенĕ
Чун-чĕрене уйăраймасть икке.

Кунта ман асатте çуралнă, ӳснĕ,
Тарпа шăварнă типĕ уй-хирне.
Авал мĕн чухлĕ хура-шур вăл тӳснĕ,
Анчах ялтах ирттернĕ ĕмĕрне.

Кил-çуртăма, яла епле-ха манăн? —
Кунтан аттем ман кайнă-çке вăрçа.
Тăван кĕтесшĕн пурнăçне вăл панă
Ачисене аттесĕр хăварса.

Пĕччен пулсан та пирĕншĕн, аттешĕн
Анне, ав, сӳнтермест кил вучахне.
Сисетĕп, ватă аннепе те темшĕн
Сывпулашмашкăн йывăр ку чухне...

Çулçӳренсем пĕтев* çакса çӳреççĕ
Çул ăнăçлă вĕçленессе кĕтсе.
Ăçта пулсан та каяллах килеççĕ
Малашлăх ачисем — ман ĕмĕтсем.

*1959 ç.*

---

* Пĕтев — талисман.

* * *

Мĕскершĕн, кӳршĕ пахчинчи шур хурăн,
Сана эп кăмăлларăм уйрăмах?
Анчах паян тăратăн эс те хурлăн —
Сисетĕн тейĕн: вăхăт уйрăлма.

Ан пăшăрхан, кичемлĕх тăмĕ ĕмĕр
Çут куншăн каснă чӳречесенче.
Хăлат чĕппи пек ак çĕкленчĕ ĕмĕт
Вунçиччĕри хăюлăхăм çинче.

Тав шăпама, чечек пек шанчăк чĕрĕ —
Вăйна кăна, тăванăм, ан шелле.
Арпашнă хутăмсем çине ӳкейрĕ
Хĕвел çеçкийĕ — йăлтăрти шевле.

Сывпул, шур хурăнăм, аса илмесĕр
Тăрайăп-ши сана ют çĕрсенче?
Чăваш пики пулса тĕрленĕн эсĕ
Шур чечексен çӳхе тĕлĕкĕнче.

*1959 ç.*

* * *

Çĕнĕ çĕрте çĕн çын. Мĕнех,
Халь çĕнĕлле пурнам кунта.
Мĕнпур пулни-иртнисене
Манам сасартăк паянтан.

Эп çырнă сăвă унччленех,
Татах çырас-и – е çитет?
Те, ташласса çĕн çулчченех
Ура тупанĕ кĕçĕтет.

Вунçиччĕре эп. Эй, кĕрле,
Çамрăклăха çĕклен илем.
Эп çĕн юлташсемпе пĕрле
Кĕрекери чыса илем.

Шалтти курка, ĕçер йăлтах –
Тĕнче хитре кĕрекере.
Тата мĕн кирлĕ поэта,
Юратура çуннăскере.

Çĕклем-çĕклемĕн çĕкленсе
Поэзи астăр сăвăра.
Инçе çĕрте çĕнĕленсе
Эп хитререх пулам вара.

Чу! янăран пăр çийĕ пек
Тасан янрам эп ют çĕрте.
Пулас чăваш сăвăçипе
Мĕн пулĕ-килĕ кĕçĕртен.

*1959 ç., Борзя, Чита облаçĕ*

* * *

Вĕсем те çуркуннесĕр çурăлмаççĕ
Чĕре сури — мăнтарăн сăввисем.
Чуна ыраттармасăр çуралмаççĕ
Çав савăнăç е тунсăх чĕпписем.

Мухтатăн е хурлатăн — сăвăç ĕçĕ
Салтакăн çирĕп совĕçĕ пекех.
Поэтăн вилĕм кĕпине çĕлеççĕ
Туй кĕпине çĕленĕ пĕр йĕппех.

Хаваслă чух юрла эс шăпчăк майлă,
Салхуллă чух юрла салтак юрри.
Кирлех пулсан, Митта пек пул сăпайлă,
Кирлех пулсан, Хусанкай пек вĕри.

Юрлас килсен кăна юрла эс, сăвăç.
Анчах çакна пăхмасăр пĕлмелле:
Çырма хĕрне лартан пулсассăн йывăç,
Кил еннелле пăхса ун ўсмелле.

Вара вăл çырана та тĕреклетĕ,
Тăван киле те сыхлĕ тăвăлран.
Кашлавĕнче сана асилĕ питĕ
Хăв аякра чухне тус-тăванран.

Поэт каять. Анчах та чĕрĕ, сывă
Лартса ўстернĕ савнă йăмрисем.
Чĕре таппи пек çемĕллĕ çĕн сăвă
Калаччăр асăнса шкул ачисем.

*1959 ç., Борзя*

* * *

Пурнăçа поэт пулса
Çăмăл юрă тăваттăм.
Юрату тертне туйса
Халь эп, каччă, çунмăттăм.

Çĕнелсе килен юрра
Çитĕнӳ кĕтет пуль, тен?
Кам пĕлет, ман сăвăра
Хам телей пуçламăш те...

Тӳпере анчах вилет
Ăмăр ăмăрткайăкĕ.
Шăп хам пек юрлас килет –
Хам начар-и, лайăх-и.

Таврара вăрман, сăрт-ту
Ешерет сип-симĕсĕн.
Сăвăра ман юрату,
Сăвăра ман тивĕçĕм.

*1959 ç., Борзя*

* * *

*В.Б.*

Мĕскер çырам, хаваслăх уйĕ,
Чечеклĕ альбому çине?
Çырас-и-ха чăвашăн туйĕ
Епле илемлĕ иртнине.

Е Тухăç хулине сăнлас-и
Е шухăшлă Манчьжурине,
Е хут çинче пĕрре ташлас-и
Сыпмасăрах çав «шуррине».

Салам сана, Борзя чечекĕ!
Юратупа мана тухат.
Сан ятупа çут çăлтăр çех-и —
Хĕвел хавасланса тухать.

Пĕрремĕш хут сана чуптурăм,
Пĕрремĕш хут пурнăçăмра.
Халь эсĕ — ман пĕртен-пĕр турă, —
Чĕркуçленетĕп сан умра.

Сан чухлĕ вучахри кăвар та
Ăшăтаймасть ман чĕрене.
Эс пур та — манăçа хăвартăм
Сартутлă пĕр чăваш хĕрне.

*1959 ç., Борзя*

* * *

Эй, ăçта-ши çухалчĕ çав ырă самант?
Ĕненес те килмест вăл чăнах пулнине.
Куç умне тухнă чух ан васка, асамат,
Илĕртен çич тĕсне ӳкерме шыв çине.

Асилӳ çутипе уçăлсассăн тĕтре,
Паянхи пек куратăп эп сăн-сăпатна.
Асамат витĕр тухнăн каллех эп хитре,
Каллех, çамрăкскер, çул тытап сан патна.

Тутасем пĕрлешсе, хамăра мансанах
Хăйсемех пурăнаççĕ вĕри туйăмсем.
Чарăн, ырă самант, скульптор пек эп сана
Ăсталам гранитра çакăн пек тăнăçем.

Асилӳ — шур çилхеллĕ лаша-çке вăл ман:
Вăхăт витĕр тухса эп çӳретĕп ялан.
Ах, ăçта ӳкрĕ-ши çав хитре асамат? —
Туйăмсем çӳхелеççĕ, сӳнет ыр самант.

*1959 ç., Борзя*

## БОРЗЯРА ПУЛНӐ ЮЛТАШӐМСЕНЕ

Умра ялан халь телевизор.
Килтен тухмастпӑр сӑвӑр пек.
Утам-и пӗр пӑшӑрханмасӑр
Унччен ҫӳренӗ ҫулсемпе.

Ҫитсе курам паян Ҫӗршывӑн
Асран кайми кӗтессине.
Манми туссем хавассӑн, сыввӑн
Кӗрейччӗр сӑвӑ ҫеммине.

Каллех сӑнам эп Ҫӗпӗр каҫӗн
Ӳпне ӳкен ҫут уйӑхне.
Куҫран пӑхса тӑрам сар Азин
Тӗпренчӗк хӗрлӗ чечекне.

Кашни чечек – пӗр кун илемӗ.
Пӗрер-пӗрерӗн вӗсене
Унчченхи пек эп парнелем-и
Ӗҫре ӗшеннӗ хӗрсене?

Тӗк татнӑ пек, поэт каларӑш,
Иртейрӗ вӑхӑт сиккипе.
Ҫут ҫӑлтӑрсем пек сапаларӗ
Пире шӑпа Ҫӗршывӗпех.

Ӑҫта-ши халь эсир, ман савнӑ,
Ман кӑйкӑр куҫлӑ йӗкӗтсем?
Аса килеҫҫӗ-и асамлӑ
Вӑй-халлӑ ҫамрӑк вӑхӑтсем.

Пурне те халь сире пухасчӗ
Ӗҫкӗре мар – ҫав стройкӑрах.

Кăвайт чĕртсе каллех ларасчĕ
Ал ăшăтма вучах тавра.

Хаваслă кулă пек çиçетчĕç
Пăлхавлă çулăм пĕккисем.
Çав татăк-татăк çулăм пекчĕ
Ун чух вĕри чĕремĕрсем.

Сикетчĕ çиçĕм-сварка çуттăн
Вĕт çăлтăрсем ума сапса.
Хуран тулли вĕретчĕ битум
Хуллен-хуллен хăмпăланса.

Паталлă алсемпе маттуррăн
Пăралука пăра-пăра
Хăватлă шăнăр-арматура
Хĕрсех çыхаттăмăр вара.

Барак выранĕнчи хĕвеллĕ
Сап-сар çуртсемĕр сых ятне
Упраççĕ-ши ĕçчен чĕреллĕ
Чăвашăн тараватлăхне?

Лебедкăпа çĕклем-çĕклемĕн
Бетон хăпартнă çурт çине
Эпир шăратнă та çĕкленĕ
Хальхи ăру çирĕплĕхне.

Ăçта-ши халь эсир, ман савнă,
Ман кăйкăр куçлă йĕкĕтсем?
Аса килеççĕ-и асамлă
Вăй-халлă çамрăк вăхăтсем?..

*1960 ç.*

* * *

Çырури сăмахсем
Чĕрене чĕркеленĕ:
Юратман эп сана,
Юратмасăр çӳренĕ.

Хĕр чухне хĕрĕх тус, —
Эп çавна ĕненмерĕм.
Сарана вырăнне
Патăн мар-и йӳç эрĕм.

Астăватăп, ун чух
Çĕмĕрт шур çеçкереччĕ.
Пĕтĕм çут тĕнчере
Иккĕн çеç, иккĕн çеçчĕ.

Эс телейлĕ-и халь?
Сывламастăн-и ассăн?
Тем хĕсет пек чуна
Çырăвна вуласассăн.

*1960 ç.*

## ПĔРРЕМĔШ ЛĔПĔШ

Çурхи хаваслă шăв-шавра
Йăмра хайларĕ çĕнĕ юрă.
Çул хĕрринчи юханшывра
Хĕвел çап-çутă тĕрĕ турĕ.

Çур хăнисем хavasланса
Вĕçсе килеççĕ ушкăн-ушкăн.
Карта çинче асапланса
Çырать, ав, сăвă пĕчĕк Пушкин.

Пăт-пат çĕр тухнă урамра
Пĕрремĕш лĕпĕш вĕçсе иртрĕ.
Чĕрем кăлт турĕ те — умра
Ачалăх çаруран вĕлтлетрĕ.

*1960 ç.*

## ИРХИНЕ

Ылтăн кайăк чĕппи пек хĕвел
Çунатне сарса тухрĕ хаваслăн.
Çулçă айĕн çупкамлă кĕтмел
Хĕр-пĕрчи пек пăхать тем каласлăн.

Чĕтренсе кăвак пурçăн мĕлке
Хурăнсен хыçне вăрттăн пытанчĕ.
Сывлăмпа питне çунă ĕлккен
Чечексем, ай, ытла та вăтанчăк.

Çил сикет йывăçран йывăça,
Сикнĕ майăн шевле тăкăнать те —
Пĕр чарусăр пакша савнăça
Вăрман тăрăх çаплах кустарать пек.

*1960 ç.*

## ХЫРАЙ ВӐРМАНӖ

Ҫил тухнӑ та, каш-каш кашлать
Кӗрхи вӑрман манпа калаҫнӑн.
Пилеш ҫулҫи ташла-ташла
Прачак урлах вӗҫсе, ав, каҫнӑ.

Кашлать вӑрман хӑй кӗввипе,
Хӗвелпеле тӑрри хӗмленнӗ.
Пӗр йӑлӑхмасӑр кунӗпе
Эп сахал мар ӑна итленӗ.

Ун кӗввинче сӑпка юрри –
Анне сасси – юхать ачашшӑн.
Тен, ҫавӑнпа кунта юри
Килсе ҫӳреттӗм йӑпанасшӑн.

Ҫав юрӑ май куҫ умӗнчех
Иртсе каятчӗ пӗчӗк тертӗм...
Вӑрманӑм, чӗрҫиттӳ ҫинче
Эс вылятса мана ӳстертӗн.

Пӗрле тӑрса юрлаттӑн пек
Эпир вӑййа тухсан, вӑрманӑм.
Пӗрремӗш хут кунта хӗрпе
Ҫӳренине ӑҫтан-ха манӑн?

Ир-каҫ юрлатчӗҫ кайӑксем.
Канмастчӗ шӑпчӑкӗ-ӑстаҫӑ.
Хӗвел шевли пек кунӑмсем,
Ҫут уйӑхлӑ каҫсем ӑҫта-ши?

Çул çӳресе эп тӗнчере
Нумай илемлӗ вырӑн куртӑм,
Анчах упранчӗ чӗрере
Тӑван тавралӑхшӑн ыр туртӑм.

Паян кунта эп. Тӗлпулу!
Чӗрем сиксе тухас пек манӑн.
Эп килтӗм — санӑн ывӑлу,
Эп килтӗм, манӑçми вӑрманӑм.

Умра хӗрелнӗ вӗрене,
Юратнӑ хӗр пек шурӑ хурӑн...
Ытла та çывӑх чӗрене
Ачаранпах сӑваплӑ вырӑн.

Юрла, вӑрманӑм, кашласа.
Сассу сан ирӗклӗ те уçӑ.
... Хӗвел çинче вӑй выляса
Вӗçет, вӗçет сап-сарӑ çулçӑ.

*1960 ç.*

## КĔРХИ ИЛЕМ

Мăн улăхра кĕтӳçĕ
Кĕтӳ кĕтсе çӳрет.
Кĕр кунĕсем килӳçĕн
Çĕн сăн кĕрет çĕре.

Хирте кивелнĕ хăмăл
Çилпе тем пуплешет.
Асаилӳллĕ кăмăл
Хама та килĕшет.

Таçта упаленеççĕ
Кĕрхи ват пĕлĕтсем.
Кичем-çке пĕчĕкçеççĕ
Сар чечексем пĕтсен.

Малтан, сап-сар сăмсаллă
Чĕкеç чĕппи пекех
Пилеш çулçи салхуллăн
Çĕре вĕçсе ӳкет,

Вара, тăм ӳкнĕ хыççăн,
Хĕвеллĕ ирхине
Шур хурăн ывçăн-ывçăн
Сапать çулçисене.

Калхус кĕлечĕ çийĕн
Йăвалансах пĕр си,
Вир уйăраççĕ тейĕн,
Кĕшĕлтетет çерçи.

Эй, чĕрĕ çутçанталăк,
Эй, тĕк тăман тĕнче!
Кашни хăй евĕр савăк,
Хитре вăхăтĕнче.

*1960 ç.*

* * *

Тем кĕтетпĕр, тем туса çӳретпĕр
Лăпланас та ĕç тăвас чухне.
Хамăр телее шыратпăр тетпĕр —
Аташса çӳретпĕр тем чухлех.

Тем шыратпăр, темĕн хапсăнатпăр
Вăй виçмесĕр тĕплĕн шайланса
Такăнсан та малаллах пăхатпăр
Унчченхи сурансене манса.

*1960 ç.*

## АТТЕНЕ

Хӗрсем утă çулнă чечен улăхра,
Хитре кайăксем савăк юрă юрланă.
Хӗвел йăл-йăл кулнă сенкер уçлăхра,
Тавралăх туллин, уççăн-уççăн сывланă.

Анчах пӗринче, вăрçă тухнă тесе,
Хăрушă хыпар сарăлать хир-хир урлă.
Мана эс, атте, сăпкаран çӗклесе
Чуптунă та тухнă вăрçа тарăхуллăн.

Хӗрсем утă çулнă салху улăхра,
Хитре кайăксем хурланса юр юрланă.
Хӗвел тӗксӗмленнӗ синкер уçлăхра,
Çӗршывăм аманнă салтак пек сывланă.

Пуç хунă çынсем çапăçу хирӗнче.
Атте, эс унтан каялла таврăнмарăн.
Ларатпăр анне чӗркуççийӗ çинче
Ик тăлăх, чӗкеç чӗпписем пек, мăнтарăн.

Мана тек курман эс, йӗрсен — йăпатман,
Пылак çитермен, сиктермен сăпкара та.
Кунсем иртнӗçем сарăхса пыракан
Салтак çырăвне эп пӗтев пек упратăп.

Çут шуçăм килсен çирӗмри куççенче
Сӳнейрӗ пуль çăлтăр — çунатлă çут ӗмӗт.
... Ман паттăр атте, манăн ӗçӗмсенче,
Ман ӗмӗтсенче эсӗ пурăнăн ӗмӗр.

*1960 ç.*

## АННЕМ ПИЛĔ ÇИТĔ

Умра, тантăшсемĕр,
Телейлĕ кун-çул.
Сулмаклăн утмашкăн
Вăй-халăм мĕн чул!

Юратнă Çĕршывăм,
Епле эс хитре!
Хаваслă кун сăнĕ
Çиçет сăн-питре.

Çĕршыв вăл анне пек
Ялан чĕрере.
Çак икĕ сăмахăн
Пĕлтерĕш пĕрре:

Аннесĕр, Çĕршывсăр
Пулать-и этем?
Вĕсем пулмасассăн,
Ӳкем те пĕтем.

Аннемĕр инкекĕ —
Çĕршывшăн инкек.
Вăл маншăн та йывăр
Арман чулĕ пек.

Çĕршывăн телейĕ —
Аннешĕн телей.
Хăвна шеллемесĕр
Ăна хӳтĕле.

Тăван амăшне те
Манан çынсене
Епле шанса парăн
Çĕршыв пурнăçне?

Тăван çĕршыва
Юратсассăн кăна
Анне пилĕ çитĕ
Мана та сана.

Çĕршыв-аннене
Халаллатăп сăвва.
Вăл сывă пулсассăн,
Эпир те сывах.

*1960 ç.*

## ЧЕРКЕС ÇĔРĔНЧЕ

*Кави Юлдашева*

Ман сана, юлташ, хам ăссăн
Ăс çӳпçи теес килет:
Шухăшусемпе – философ,
Юррупа чăн-чăн поэт.

Ахаль мар çунаççĕ ăсшăн
Куçусем çап-çут черккен.
Тĕнчене йăлтах курасшăн
Çуралайнă-мĕн черкес.

Тĕлĕнсе кайса пăхмалăх
Пур Çĕршывăмăр паян.
Савăнса пăхса утмалăх
Черкес çĕрĕ те пуян.

Аслаçу пек шурă çӳçлĕ
Çав мăнаçлă тусенчен
Ма пĕри çеç шĕвĕр вĕçлĕ?
Тен, Парнас вăл сирĕн, тен...

Ай, чĕлхӳ япшар та тăчă:
Тусене тухатнăçем
Вĕсенчен пулса та тăчĕç
Ылтăн-кĕмĕл куписем!

Чăн та, пит хитре ӳкерчĕк, –
Аултан тухса, çил пек

Карагезĕпе вĕçтерчĕ
Кăвак ту умне Казбек.

«Хура ту» енчен çу касĕ
Айлăма шуса ансан,
Пикесем вăййа тухаççĕ,
Акăшсем пек ярăнса.

Ашшĕсен ятне ямаççĕ
Кăйкăр куçлă йĕкĕтсем –
Еплерех вĕсем ташлаççĕ,
Чĕрне вĕççĕн çĕкленсе!

Аван мар тесе эп тăмăп –
Тăпăр-тăпăр ташшăма
Чăвашла хуçса кăтартăп
Хамăн тус-юлташăма.

Йăмăку, Кави, шап-шурă
Аркă сыпнă кĕпепе
Шыв юххи пек тикĕс шурĕ
Савăк кĕвĕ майĕпе.

Шкул вĕреннĕ чух тухатнăн,
Вут хыптарнăн чунăмра
Эп вилсе кайса юратнă
Бэла* мар-и ман умра?

Маларах тĕл пулаймарăм,
Хитре йăмăкăм, сана.

* М. Лермонтовăн «Герой нашего времени» хайлаври черкес хĕрĕ.

Çӑмӑл тунсӑхӑм, мӑнтарӑн,
Темшӗн халь хӗсет чуна...

Пурпӗрех черкес пикишӗн
Савӑнатӑп, тупата.
Ёлӗкхи хӗрсен шӑпишӗн
Хурланса илеп тата.

Тарават, якши ту çӗрӗ!
Пурпӗр чун туртать киле...
Шур саппунлӑ чӑваш хӗрӗ
Тӑтӑшах аса килет.

*1960 ç.*

## ШУПАШКАРА КИЛНИ

Эп кунтан, инçетрен, çул çине тухнă чух
Чуптуса ăсатса яракан çыннăм çук.
Айăпа эп кĕмен, çук ман парăм-кивçен,
Анчах темĕн çитмест, темшĕн питĕ кичем.

Мĕн-ха юлчĕ ӳксе вăхăт пуйăсĕнчен? –
Тĕмсĕлсе эп пăхатăп вакун куçĕнчен.
Тăрса юлчĕç çуртсем пухăна-пухăна,
Чӳрече çумĕпе вĕçрĕ шухăш кăна.

Акă Атăл умра, – те юхать, те юхмасть,
Хăв анса курмасан ĕненме юрамасть.
Ĕнертен паяна, паянтан ырана
Вăхăт хум пек иртсе улăштарчĕ мана.

Эп киле килесси – паянхи шухăш мар.
Сывă-и, сăвăçсем пурнакан Шупашкар?
Сан патна васкаса, юратса килнĕ чух
Мĕншĕн хирĕç тухса кĕтекен çыннăм çук...

*1960 ç.*

## ÇĔРШЫВĂМА

Тăван тавралăха чунтан эп саврăм.
Ыр туйăмшăн тавах несĕлсене.
Кунта çуралнă сăвă çаврăм-çаврăм
Кĕрсе юхать Çĕршывăм çеммине.

Эп тăвăла сисен сар ейĕк евĕр
Сан инкекне систетĕп инçетрен.
Эп, санăн чĕрӳнте пуçланнă кĕвĕ, —
Хам инкеке кăна сисмерĕм тен...

Антив, мана тискер çынсем тулаччăр,
Ят-чысăма пĕтерччĕр таптаса, —
Чĕркĕмĕл пек таса эп — сирĕн ачăр,
Ĕмĕтĕмсем те манăн тап-таса.

Шăпам ман пулчĕ май та хирĕçле те,
Пĕрех писмерĕм хам саманаран.
Çĕршывăм ячĕпе эп тĕрĕслетĕп
Пурнăçăма кашни чике таран.

Тăшмансемпе сутăнчăксен эшкерĕ
Сана, Çĕршыв, персен пăшалпала,
Паян тесен паян эп вута кĕрĕп
Сан ятупа та саншăн, санпала.

*1960 ç.*

# 1961-1977 çç.

## «ЧИПЕР АРĂМ» КАССИ

Сакăлталлă çул çине тухатăп.
Пăрăнса кĕреп те сылтăма,
Шлепкене хывса эп саламлатăп
Хам çуралнă кивĕ çуртăма.

Сывă-и, чĕкеç йăви пек пĕчĕк
Килĕм-çуртăм, савнă çуртăм ман?
Манăçман-и ывăлун сăн-пичĕ? —
Эп сана ним чухлĕ те манман.

Асилем тесессĕн, асилмешкĕн
Иртнĕ вăхăт сахал мар умра.
Халь пулас-и ĕлĕкхи пек вĕçкĕн,
Ташласа иртес-и урамра?

Çӳç вире, тута та чăпăрт хупă,
Костюмран кăларнă шур çуха...
Темшĕн Çĕмĕрткас енче хуткупăс
Урăх кĕвĕпе халь каçăхать.

Урăх вăхăт — урăхла ташлаççĕ,
Ĕлĕкхи пек юрламаççĕ халь.
Ушкăн-ушкăн урама тухмаççĕ,
Чăвашла та ташлакан сахал.

Кĕçĕр каç сасартăк эп ăнлантăм
Çамрăклăх иртсе те кайнине.
Салхулантăм, шăхăрмасăр антăм
Хамăр «Чипер арăм» кассине.

*1961 ç.*

## САМАНИ ТЕ, КĂМĂЛ ТА АВАН

*Арапуçăн çĕрĕ хĕсĕр мар*
В. Митта

Самани те, кăмăл та аван.
Мĕншĕн юрлас мар-ха ман, тăван?
Ал сулса пуçлам-и çĕнĕ юрă —
Çуркуннесĕр ирĕлтĕр шур юрĕ.

Ушкăнпа тухсассăн акана
Тыră çеç-и? — туслăх акăнать.
Тус-юлташлă пурăнар, ачсемĕр, —
Тулли пулĕ кĕреке те ĕмĕр.

Авăнса юхать ялтан яла
Сăвăçсен сăпкийĕ — çут Пăла.
Шур хăвалăх — шур хумханчăк тĕрĕ,
Çамрăклăх сăвви çав пулĕ терĕм.

Арапуçăн çĕрĕ хĕсĕр мар —
Лартнă йывăç яратех тымар.
Ав мĕн чухлĕ вăйпитти çыравçă
Ывçăн-ывçăн савнăçне сапаççĕ.

Пăлаен çемçе таса чĕлхи —
Шăнкăр-шăнкăр çăл шывсен юххи.
Пăтратмасăр эп ăна ăсам-и —
Куçтăр кăшт мана та ун асамĕ.

Хĕрлĕ мăкăнь, хĕрлĕ чечексем,
Тек ан ларăр пуççене пĕксе.
Çĕкленет паян патвар та сывă
Çĕн хунав — ăс-хакăллă хĕр-ывăл.

*1961 ç.*

## ШУПАШКАР ÇĂКИСЕМ

Шупашкар çăкисем, çавракa питлисем,
Алла-аллăн хитре çавтăнса тăнисем,
Шуçăм килнĕ чухне, çуллахи лăпкă ир
Ялтан килнĕ сăпайлă хĕрсем пек эсир.

Çеçкеленнĕ чухне тăхăнсан шӳлкеме,
Ăшă çил силлесен хушпусен тенкине,
Тĕпĕлкке хĕр тесе, савнисем пуль тесе
Тытса юлнă сире хулари тетесем.

Халь шап-шур пушмакпа,
симĕс пурçăн тумпа
Çăнăхта ăсатма тухрăр пулĕ пылпа...
Ĕçкĕ-çикĕ чухне тăкăнать пыл-сăра –
Йăрлатса патлатать çавракa çулçăран.

*1961 ç.*

## КĔР ПАСАРĔ

Кĕрхи чечек, йăмра эрешĕ,
Пĕрĕхтерсе пылне сапсан,
Хĕлле валли апат илесшĕн
Сĕрлет, кĕшĕлтетет сăпса.

Сап-сар хĕвел чĕппи пек сарă
Пыл хурчĕ пăрахман ĕçе.
Кĕрлет кунта та кĕр пасарĕ,
Мухтать çу панă çимĕçе.

*1961 ç.*

* * *

*Тики-тики...*
П. Хузанкай

Çил асать, вĕçет вĕт çулçă.
Тупаймасăр, тен, тĕрек
Çул çинчи чирленĕ çын пек
Авăнсах анать тирек.

Тăруках пуçланнă çумăр
Хӳмене çапса çăвать.
Кантăкран килсе пăхсамăр
Кăшт татса калаçăва:

Тĕкме çумĕн, курăк çийĕн
Шыв шурса шаркать, хартать.
Кӳршĕн пĕчĕк хĕрачийĕ
Пăларан хур хăпартать.

*1961 ç.*

* * *

Ах, гитара, ҫичӗ чӗлӗх эсӗ,
Ҫичӗ чунлӑ, пӗр чӗреллӗ эс.
Кӳршӗ хӗрӗн юррине пӗлмесӗр
Кӑмӑлне тупма ӑҫтан пӗлес?

Хӗмленсе хӗрелчӗ шурӑмпуҫӗ.
Савнӑ шӑпчӑк савӑнса юрлать.
Кӳршӗ хӗрӗн мӑшӑр хура куҫӗ
Чунӑма кӑвар пек ҫунтарать.

Ҫичӗ тӗрлӗ шухӑшӑм — пӗр туртӑм,
Ҫичӗ хӗлӗх тӗрлӗ сассенче.
Ҫичӗ терлӗ ҫичӗ юрӑ хутӑм,
Пурте пулчӗҫ, тусӑм, сан ҫинчен.

*1961 ҫ.*

## ХĔВЕЛЛĔ ÇИЛ

Кăшт салху та,
Çапах савăк кĕр кунĕсен
Чунăма илĕртен
Вырăнсем пит нумай.
Лапама выртса юлнă
Йăмра çулçисем
Ылтăн çĕрĕ пулса
Çаврăнаççĕ пĕрмай.

Улăхран пуçласа
Хир çырми тăршшĕпех
Ачапча каç енне
Пĕр çĕре хур пухать.
Ту çинчен выляса
Анакан тăр шыв пек,
Кĕр калчи
Вĕтĕ хумлăн та хăвăрт юхать.

Ушкăн-ушкăн саркайăк
Вĕçсе иртнĕнех
Çамрăк хурăнлăхран
Сарă çулçă вĕçет.
«Кукамайĕ» вара
Вĕçеймест те — мĕнех,
Халлĕхе, ĕрехмет,
Тап-таса-ха инçет.

*1961 ç.*

## ÇЕРЕМ ÇИНЧЕ

Ал тупанĕ пек çеремлĕх
Ял айкки-укăлчара
Çаруран та çӳремелĕх
Симĕсленчĕ те, вара

Ачасем çӳхе йĕм вĕççĕн,
Кӳттерсе урисене,
Çĕрлене юлса çӳреççĕ
Çавăтса ĕнисене.

Вут хурсассăн, васкамасăр
Йăлăма тарать тĕтре.
Вĕлтĕрен çинче хăюсăр
Вут çути чĕтрет, чĕтрет...

Тин кăна çуралнă сывлăм
Шурут курăкĕ çинчен
Сар ача пек пăхрĕ сыввăн
Çутă уйăх кусĕнчен.

*1962 ç.*

## ХУРАТНĂ КĔМĔЛ

Юнашарах иккен тĕнчен
Хĕвел кулли те хĕл куççулĕ...
Ăçтаваскать юр айĕнчен
Хуратнă кĕмĕл пек шыв çулĕ?

Пуласлăх ăнтăлать мала
Мăн улăхри юпах тиха пек.
Çамрăклатан шанчăкпала
Çурхи куна чупса тухап эп.

Çӳрет пек умăмрах вĕçсе
Хавхалану — хама виçеллĕ.
Тавах, — ăнаççĕ-ха ĕçсем,
Паян ак сывлăх та йĕркеллĕ.

Тата мĕн кирлĕ тĕнчерен? —
Сăлтавĕ пур-мĕн савăнмалăх.
Анчах мĕскершĕн каçсерен
Чуна шăнтать çурхи çанталăк?..

*1962 ç.*

## КĔРХИ УÇЛАНКĂРА

Инçе çултан кĕмерĕм эп киле те –
Çул кĕскетсеваскарăм вăрмана.
Килес темен çĕртен каллех килетĕп
Пĕрре телейлĕ пулнă вырăна.

Уçланкăра пĕччен эп. Тунсăхланă
Хырсем тимлеççĕ тахçанхи сасса.
Нумай пулмасть кунта телей вылянă
Пĕр пĕчĕк çавраçил пек алхасса.

Паян вара сар çулçăсем ӳкеççĕ –
Сар савăнăç анать çунат усса.
Ман шанчăкăм ытла та пĕчĕкçеççĕ,
Ан ӳктĕрччĕ вăл çулçă пек çунса.

Эп хам та асилӳ... Вĕçсе анаççĕ
Сар çулçăсем – ман иртнĕ кунăмсем.
Кĕлтунă пек вĕрин пăшăлтатаççĕ
Пĕр сан ятна, Мария, хурăнсем...

*1963 ç.*

* * *

Ах, ыйхă вĕçрĕ ман. Çутăласса кĕтсе
Çĕн ĕмĕт çуралинччĕ, иçмасса.
Пурнăçланман хĕвеллĕ ĕмĕтсем
Çунтарчĕç ăшăма сĕм каç пулса.

Çĕн ĕмĕт, çĕнĕ кун, çĕн туйăмсем,
Сире кĕтетĕп эпĕ халиччен...
Кĕрхи тĕтре пек йывăр шухăшсем
Саланччăр сарă кантăк умĕнчен!

*1963 ç., Свердловск*

* * *

Çырмастăн та...
Манса та кайрăн-ши
Е ĕнĕретĕн эсĕ урăх кĕвĕ,
Е çула май иртен-çӳрен çын евĕр
Ахаль çеç тĕлпулу ку пулчĕ-ши...

Пуçа çавăрттаран, ӳсĕртекен
Хăватлă туйăмсем йăвашлансассăн
Хаш сывласа шутлатăп халь хам ăссăн:
Ку вăл ахаль тĕлпулу çеç иккен.

Иккĕленӳ – сар тутăр вĕлкĕшет, –
Тин çеç тулли тĕнче йăлтах пушанчĕ.
Анчах мĕскершĕн канăçсăррăн шанчăк
Ăшра сӳнмен кăвар пек тĕлкĕшет...

*1963 ç.*

## КĂВАК ЧЕЧЕКĔМ

Мĕн чуль чечек! Танлаштарам тесен
Санран хитри пурах-ши? – çук пуль ахăр.
Çил чӳхекен çаран çинче ӳсен
Кăвак çеçке сан куçусем пек чакăр.

Эп аякра паян, эс – аякра,
Хушшăмăрта çулталăк çурă пирĕн.
Кун шутласа эп çӳрĕп тайгара,
Кун шутласа кăвак шăрçа эс тирĕн.

Тытмастăп сансăр савăш куркине,
Çук, кирлĕ мар мана нимле тупра та.
Хĕвел çеçки пек çӳç пайăркине
Хайлав кĕнекинче тытса упратăп.

Ан тив, çут çăлтăр сӳнтĕр тӳпере,
Ан тив, çил вĕртĕр май та, хирĕçле те, –
Сан ятупа пуçлатăп эп ире,
Сан ятупа яри куна вĕçлетĕп.

Эй кивелми хăватлă юрату,
Эй çĕнелсе пыран чи аслă сисĕм, –
Инçе выртан çула эс çывăх ту,
Инçе вĕçен ĕмĕтсене пар тӳсĕм!

*1963 ç., Нижний Тагил*

## ÇУЛСЕМ ÇАВĂРСА ТУХЧĂР САН ПАТНА

Те ир тухсан юратчĕ, те кайран,
Те каласан юратчĕ, те чăтсан...
Çул хыççăн çул тухать Урал таран,
Çул хыççăн çул тухать çула татса.

Калас сăмахăм пурччĕ ман малтан, —
Калас теменнине каларăм, тен,
Çула тухмаççĕ пурнăç çăмăлтан,
Тухмаççĕ кĕрхи каç тăван килтен.

Хыçа юлать пусарăннă тĕкме,
Мĕлкийĕсем тараççĕ çутăран.
Каллех, каллех çул юппинче тăран,
Мана эс ăсатан каллех кĕтме.

Эс панă шанчăк пытăр çутатса,
Вара кун-çулăм тĕрĕс çул тытса,
Каллех çавăрса тухтăр сан патна.
Чӳклевçĕ пек пăшăлтатап ятна.

*1963 ç., Свердловск*

* * *

Пӗр хуҫӑлать, пӗр сыпӑнать ҫунатӑм —
Ытла та тӑнӑҫсӑр иккен шӑпа.
Пӗрре сӳнсе пӗрре хыпса ҫунатӑп
Эп сан вӗри, вӗри сывлӑшупа.

Ах вӑхӑт! Вӑхӑт улшӑнмасӑр тӑмӗ, —
Кӗрхи сив сывлӑм ӳкрӗ чун ҫине.
Китай чечекӗ — лӑпкӑ хризантема
Упрать асаилӳллӗ кунсене.

*1963 ҫ.*

* * *

Хум пӗччен тухмасть, пӗлетӗн,
Хум хума кӗтсе илет.
Эс манпа телейлӗ тетӗн —
Телейпе телей килет.

Ан хӑра, ман юратӑвӑм
Улталамӗ нихӑҫан.
Сӑввӑма эс юрӑ тӑвӑн,
Юрӑ тӑвӑн пурнӑҫа.

Ҫепӗҫ чунлӑ ман саркайӑк,
Юрласа йӑпат чуна.
Ҫак хӗвеллӗ пурнӑҫ лайӑх —
Юрату пулсан кӑна.

*1963 ҫ.*

* * *

«Кӑмӑлтан» кӗнеке упранать кӑмӑлра,
Шӑрӑх кун сыпкӑм шыв ӗҫнӗ пек вуланать.
Хӗрӗх те пӗр илем ҫап-ҫутах кӑшӑлра
Хӗрӗх те пӗр тӗспе пӗр чӗре шӑранать.

Хӗрӗх те пӗр илем хӗрӗх те пӗр ҫӗртен
Пӗрчӗн-пӗрчӗн суса суйласа илнисем.
Савнӑ сӑвӑҫ чӗри таткаланнӑ тӗлте
Сарӑ ҫулӑм чӗлхи хӑпарать хӗмленсе.

Тӗкме ҫумӗн йӗпеннӗ хура вӗлтӗрен.
Тӗкме ҫумӗн халхавлӑ кӗрхи самана.
Пурнӑҫа ӗненсе пурӑнма пӗлнӗрен
Вӑл Ҫӗршыв ячӗпе тӗрӗсленӗ ӑна.

Эй эс, тӗрӗслӗх*. Ирӗклӗх учӗн ҫулне
Такӑрлатрӑн пулсан, ҫуталать сӑн-сӑпат.
Кил хӗвелӗ пулса ывҫӑн-ывҫӑн сапать
Пахчари хӗвелҫаврӑнӑш сар шевлине.

Ыткӑнса ут ҫулаҫҫӗ хӗрсем улӑхра,
Йӑванса ҫеҫ юлаҫҫӗ хыҫра паккуссем.
Арапуҫ пӑрҫине хуралланӑ кунсем,
Ҫаврӑнса ан килейӗр эсир урӑхран.

Халь те питӗ хитре тӑванах Арапуҫ,
Ҫаруран чупса анӑттӑм ун кассине.
Савнӑҫ пек тап-таса шӑнкӑр-шӑнкӑр ҫӑлкуҫ
Паян кун та упрать пек поэт сассине.

*1964 ҫ.*

---

* В. Миттан «Кӑмӑлтан» кӗнеки.

* * *

Çамрăклăх, ытла ан ашкăн,
Лăпкăнрах вĕç малалла.
Малашне те юратмашкăн
Иртнине асăнмалла.

Аллăм мар — ачаш çунатăм
Çупăрлатчĕ çивĕтне.
Ах, епле хыпса çунаттăм
Саншăн эпĕ ун чухне.

Халь те саншăн тĕмсĕлетĕп:
Каччă хăйĕн савнине
Питĕ кĕтнĕ пек кĕтетĕп
Эс ĕçрен килессине.

Лар-ха çуммăн, ĕç хуратнă
Аллуна алла илсе
Кăвакарчăн кăлтăртатнăн
Калаçар килĕштерсе.

Çамрăклăх, ытла ан ашкăн, —
Лăпкăнрах ут малалла.
Унчченхи пек юратмашкăн
Лайăха асăнмалла.

*1964 ç.*

* * *

Шутланăччĕ: сĕткенсĕр йывăç типĕ,
Савнисĕр çын — тункатапа пĕрех.
Сасартăк хыпса илчĕ вут кĕлти пек
Çунма та маннă пĕр-пĕччен чĕре.

Пĕрремĕш юрату хĕрӳ иккен те,
Ку, юлашки, тата хĕрӳллĕрех.
Шуралнă уйăх та çапла, пĕлетĕп,
Каç пулнăçем таса та çӳлĕрех.

Хăвачĕ çук вĕçмешкĕн ун, ан тейĕр —
Çунат хушса çĕкленĕп çӳлелле.
Ахрат çырми умне тăп тăнă евĕр
Чуптунисем ытла çӳçенмелле.

*1964 ç.*

* * *

Чунăма, ах, кичем-çке ытла та
Уйрăлайнă чухне санпалан.
Мĕншĕн ассăн та ассăн сывлатăн
Çул çине тухас умĕн ялан?

Чĕрери туйăмсем çухалас-тăк,
Çухалаççĕ каллех тупăнма.
Эс вара çаплипех ăнланмастăн:
Уйрăлатпăр каллех тĕл пулма...

*1964 ç.*

* * *

Тап-такăр çул çинчех хура та тарăн
Çĕр çурăкĕ куçа хăратнă пек
Чун ыратать, туртса сурать, мăнтарăн,
Хĕвеллĕ кун пĕр уссăр иртнипе.

Ан тив, каç уйăртăр сăпат-сăпатăн
Сар çутăран, ыран тăвас ĕçрен.
Кунпа куна пĕрех ĕçпе сыпатăп —
Манра та вăхăт тăсăлтăр вĕçрен.

Вара хама каллех эп туйăп ирĕк.
Килес кунсем тулли лав пек пуян.
Хастар поэзи — философи ирĕ
Виçесĕр шухăша виçет паян.

Пĕр кун килет çап-çут,
тепри — халхавлă,
Поэт пĕрех хăй пек çеç юлмалла.
Шăпа мĕн пӳрнине курни сахал вăл,
Пĕччен утни те çитмĕ тăвалла, —

Аташнисемшĕн пул эс çул маякĕ,
Сасне çухатнă çыншăн — хурçă чан.
Тӳссе ирттернĕ кун йӳççи-пылакĕ
Чи чаплă кĕнекӳ пулайĕ сан.

*1965 ç.*

## СĂВĂ ÇЫРĂНМАН ЧУХ

Ытла çунатлăччĕ ĕмĕтĕмсем,
Хайлавăмсем чухахчĕ, начар марччĕ —
Тур панă çул çинчен тем аташтарчĕ,
Умра халь хурăн мар — хура тĕмсем.

Сар çулçăсем — çухалнă ĕмĕтсем,
Ăçта çитсе, ваклантăр-ши, мăнтарăн.
Халь мĕн ĕçре мĕскер туса ăнтарăп —
Чун хурланать чăваш юрри илтсен.

Шур теттесем пекехчĕ кунăмсем
Вĕçсе килсен хавхалану саманчĕ.
Хама кура ытлаванах аванччĕ
Çĕр кĕскетсе хайланă сăввăмсем.

Чапа эп хапсăнмастăп сăвăра,
Унчченхине анчах ман тавăрасчĕ.
Пĕрер йĕркеллĕ çаврăм çех çырасчĕ —
Вара мана нимех те кирлĕ мар.

*1964 ç., Свердловск*

## ÇУЛÇĂ АЙĔН ПĔРЛĔХЕН

Çулçă айĕн пĕрчĕк-пĕрчĕк
Витĕр хĕрлĕ пĕрлĕхен
Темшĕн халĕ асилтерчĕ
Пирĕн çамрăк пĕрлĕхе.

Вăрçă хыççăн йывăр пурнăç
Вăрçăпах, тен, утнă тан.
Йывăрлăх эпир те курнă,
Курнă-çех-и? – чăтнă та.

Çăкăр та пулман, анчах та
Выçăпа вăрра кайман.
«Пирĕн чысăмăр ан чактăр», –
Тенĕ пуль эп те, айван.

Ай, ытла та йăрă пулнă!
Каласассăн чăннипе,
Çитнĕ-и, çитмен-и вуннă,
Тытнă вăрăм тилхепе...

Хамăрах капан хыватпăр,
Хамăрах кун каçиччен
Лап та лап кĕлте паратпăр
Кăвапа ыратиччен.

Ĕç пĕтсен, киле вĕçетпĕр:
Хăвăртрах хуран çакса
Аннене вара кĕтетпĕр
Вырмаран таврăнасса.

Хуҫлатса ларатпăр меллĕн
«Чĕппи» тухнă урана.
Пăрахатпăр хыр йĕкелĕ —
Лайăх ҫунтăр хуранай...

Куҫ умне юмах килетчĕ:
Хĕрача ҫӳл Хырайра
Пĕрлĕхен пуҫтарнă пекчĕ
Ҫав хуран ҫунни вара.

Пуҫтарнах-ши?.. Тен, салатнă
Ӳснĕ май шăпа пире.
Харпăр хăй пек хытă тытнă
Пурнăҫ пană чĕлпĕре.

Иртнине асилнĕ майĕн,
Тусăмсемĕр, ман сире
Пĕрлĕхен пек ҫулçă айĕн
Пуҫтарасчĕ пĕр ҫĕре...

*1966 ç.*

## ИРХИ ЎКЕРЧĔК

Тин кăна тавралăх шăпчĕ,
Çил те çукчĕ тин кăна, –
Шăхăрса та ячĕ шăпчăк,
Йыхăрса килес куна.

Шурăмпуç – пĕветнĕ енчĕк –
Шуралсах ĕлкĕриччен
Сарă кайăк пек çĕкленчĕ
Сар хĕвел сăрт хыçĕнчен.

Юратса пăхса илетĕн:
Сывлăмпа çиçен хирте
Шенкер куçлă симĕс йĕтĕн
Кӳршĕ хĕрĕ пек хитре.

Пăла çумĕн аслă улăх,
Çăкасарĕ çеçкере.
Сан пекки, ман ялăм, урăх
Çук та пулĕ тĕнчере.

Çĕнĕ кун илемĕ анчĕ
Куçкĕски пек çут кӳлле.
Шăпчăк майĕпен шăпланчĕ,
Çил те чарăнчĕ хуллен.

*1967 ç.*

## КĔРХИ ТУЙ

Çу кунĕ техĕмне пĕтернĕ,
Çапах та çăмăл чĕрене.
Хĕрсем йĕс тенкине ӳкернĕн
Силлерĕ çулçă вĕрене.

Çумăрпала кăштах хуралнă
Пĕр хурăн сар тутăрĕпе
Тăрать çиçсе йĕке ураллă,
Сар çӳçлĕ кӳршĕ хĕрĕ пек.

Кăшт çил тухсан, — пăхса çӳреп эп:
Тин ӳкнĕ çулçă Хăрварта
Кушак çурин сап-сар хӳри пек
Пăлтăртатса кăна выртать.

Ут туртайми лавпа ял-халăх
Уйран ĕç пĕтерсе кĕрет.
Нумайлăха асра юлмалăх
Вара туй-çăнăхта кĕрлет.

Чăваш сăри! Курка парсассăн,
Хăну йăвантăр пăлтăра.
Ирпе ирех сиксе тăрсассăн
Тавсси! темелĕх пултăрах.

Вăхăтĕнче этем тарлатăр,
Мухтатăр ăнăçлă кĕре.
Халь савăнма та намăс мар-тăр
Хăна пулса кĕрекере.

Пуçна пăрса, тăпăртатса та
Тăсах эс, вăйăç, купăсна:
Пуса каччи ташлать, куратăн,
Паян илемлĕ ăраснах.

Карталанса тăрайнă çакă
Турикасси хĕрачисен
Утмăлтурат çеçки пек чакăр
Çиçсе тăраççĕ куçĕсем.

Шалчипеле хăмли тееççĕ,
Такмак вăлтаççĕ иккĕшне:
Сар йыснăшне тĕртсе илеççĕ,
Савса юрлаççĕ инкĕшне.

Тавах, кĕр кунĕ! Ĕмĕр-ĕмĕр
Тулли тытсам сĕтел çине.
Çак туллăха тытма пĕлсемĕр,
Теесшĕн эп çĕн çынсене.

Е тепĕр чух кĕрхи вĕт çумăр
Тăрать пулсан та пĕрĕхсе
Юпах тиха пек çамрăк чунăр
Çаплах çӳретĕр ĕрĕхсе.

Кĕр кунĕ! Çăмăллăн туятăп
Эп хама хам çак сăвăра.
Хавшанă аллăмри туя та
Хавхалансах пырать вара.

*1968 ç.*

* * *

Савни, эп таврăнтăм киле —
Кĕтсе илместĕн темшĕн:
Е тарăхатăн, ÿпкелен
Мана час килейменшĕн.

Инçе çав пулчĕç çулĕсем,
Сукмакĕсем пит тăвăр.
Курсант шăпи саккунĕсем,
Пĕлетĕн хăв та, йывăр.

Пĕр çул пулсан та Çĕпĕрте
Сана асран ямарăм.
Анчах та эсĕ кĕçĕртен
Пулатăн кÿршĕ арăм.

Каçса курас-и сан туйна,
Хăвна пăхса юлас-и?
Тавах килнишĕн, — тен, — мана,
Анчах çук чун хавасĕ.

Куçран пăхмастăн, аллуна
Саппун айне пытартăн:
Çунса тăран юратуна
Эс çук тума пултартăн.

Хама çунма, сана çунма
Халь кÿршĕсем пулар-и?..
Юлашкинчен, ларса çумна,
Калаçасси пулмарĕ.

Тутлатăр иксĕр «йӳççине»,
Тутлантăр пыл та иçĕм.
Çапах эс тух сукмак çине
Сывпуллашма, савниçĕм.

Лăпкатăр юратса мана
Инçе çулсен ытамĕ.
Савни пулма сан вырăнна
Сар чечекрен ыйтам-и...

*1968 ç., Нижний Тагил*

* * *

Çыран çине сике-сике
Хумсем алхасрĕç айăн-çийĕн.
Вăхăтсăрах çĕре ӳкет
Куççуль пек улмуççи çеçкийĕ.

Çил тухнă. Пӳтсĕр, шухă çил...
Инкек çапла çапсассăн вирлĕ,
Çумра эс кирлĕ, сывăх çын,
Сан ăшă сăмаху пит кирлĕ.

*1969 ç.*

## ТĂВАН КĔТЕС

### I

Хур шуйхашни те илтĕнмест текех.
Кĕтӳ анса тусан лăпланнă ĕнтĕ.
Хевтесĕр çил вĕçтерейместь тĕке,
Тӳнтерлĕ ларчĕ суккăр вĕлтĕрен те.

Теме сиссе кĕлет кĕтессинче
Каçса кайсах юрлать пĕр шухă шăрчăк.
Пуплет ыран мĕн тумалли çинчен
Правлени умĕнче пĕр ушкăн карчăк.

Мĕн юлнă урамра? Мĕскер асра?
Теме кĕтсе теме тимлетĕп питĕ:
Çук, илтĕнмест паян çӳлти касра
Саккăрлатса хатарлăн пир çапни те.

Кун вăйĕ майĕпен сӳнсе пĕтсен
Хура куçĕсемпе пăхать те каçĕ,
Çӳл йăмрасем — кĕрнеклĕ йĕкĕтсем —
Çавăтăнса каçхи вăййа тухаççĕ.

Шыва пăрça ӳкернĕн сас парса,
Çутаяксем пытанмалла выляççĕ.
Хумсем вара, ыталанса пырса,
Хăва çулçисене чăп! чуптăваççĕ.

Хăй евĕр пурăнать каçхи тĕнче.
Ăна курма, туйма кăна пĕл эсĕ.
Мир пултăр ăшă чĕрçиттӳ çинче,
Мир пултăр чунунта, тăван кĕтесĕм.

II

Ирсем, ирсем! Саркайăк тĕкĕпе
Шывпа пуçса сире ӳкернĕ пулĕ:
Епле хитре, черченкĕ! Тĕкĕр пек
Ума тухать ик юплĕ Шетмĕ çулĕ.

Чĕкеçĕн йăвинчен тирпейлĕрех
Йăмралăх айĕнчи ман савнă ялăм
Хăна кĕтейнĕ пек кĕтет ире.
Тавсси килекене! Тавсси, вăй-халăм!

Пуç тăрринче чĕвĕлтетсе ларан
Сап-сар хĕвел чĕппи пек сарă кайăк,
Чăвашăн шăпчăкĕ эс пулнăран
Юрру умне пуçа пырса эп тайăп.

Саламлă çыру евĕр кун килет.
Унпа мĕнпур пуласлăх, шанчăк, ĕмĕт.
Илемлĕхе савса юрла, поэт, —
Ир пултăр та кун килтĕр ĕмĕр-ĕмĕр.

Хăй евĕр пурăнать ирхи тĕнче.
Ăна курма, туйма кăна пĕл эсĕ.
Мир пултăр ăшă чĕрçиттӳ çинче,
Мана пит тарават тăван кĕтесĕм.

*1969 ç.*

## САРӐ КАЙӐК ТӖКӖ...

Тайӑлса ӳсет ҫӳл сӑрт ҫинче
Пӗр тӗпренчӗк шӑрчануй чечек.
Сӑнасан, кунти вырӑнсенче
Ӗмӗрсен мӗлкийӗ шунӑ пек.

Чӑрӑшсем тӑратчӗҫ хуралта
Ӗлӗкхи чӑваш чаппанӗпе.
Эп вара ҫап-ҫутӑ Ҫавалта
Хур пӑхаттӑм кунӗ-кунӗпе.

Сакӑлталлӑ ҫул ик айккипе
Сарӑ кайӑк тӗкӗ – сар чечек.
Сар ачалӑх иртрӗ сиккипе,
Ҫак тавралӑх ҫаплипех чечен.

*1970 ҫ.*

## АСАМАТ КĔПЕРĔ

*Асамат кĕпĕрĕ айĕнчен тухсан,*
*çын телейлĕ пулать теççĕ.*

Халăх сăмахлăхĕнчен

Çичçĕр çитмĕл çичĕ тĕслĕ
Кĕвенте-асамата
Ӳкерсе памалăх тĕс те
Эп тупаймăп, тупата.

Тĕрлĕ тĕс, ав, уйрăмшарăн
Пит хитре те, пурпĕрех
Çума-çумăн, юнашаррăн
Вăл тата илемлĕрех.

Асамат кĕперĕ мар-и
Ăшă çумăр пĕтсенех
Ыталарĕ, çупăрларĕ
Пăлаен ялĕсене.

Пĕр енче Çĕн Çармăс, авă,
Шăнкăртам – тепĕр енче.
Варринче, йĕс шăнкăравăн,
Арапуç куç умĕнче.

Чăвашпа пĕрле ирçе те,
Атте тусĕ те – тутар,
Пĕр шайра сире виçетĕп,
Пĕр çулпах апла утар.

Катаччи чупса çухатнă
Çӳрен утăн таканне
Ахальтен-и çапса хунă
Укăлча хапхи çине?

Астăватăп: выçлă-тутлă
Çав мишер ачисене,
Пирĕн ялăн икĕ хутлă
Çĕн шкулне çӳренине.

Вăрçă хыççăн та, кайран та
Тем те курнă пуль тӳссе.
Пурнăç çăмăл пулмасан та,
Çамрăклăх пулнах, туссем.

Ирçесен уявĕ «Хурăн»,
Чăвашсенĕн — акатуй.
Тутарсенĕн урăм-сурăм
Виçĕ кунлăх сабантуй.

Кĕрешеттĕмĕр. Пуçхĕрлĕ
Ывăтсассăн «тутарла»,
Чăвашсем вара пит вирлĕ
Кăшкăратчĕç: «хамăрла!»

Ăмăртса вылянă, кулнă,
Хавхаланнă çамрăк чун.
Çапăçса кайни те пулнă, —
Килĕштернĕ тепĕр кун.

Эрнере пĕрре кĕрлетчĕ
Арапусĕнче пасар.
Тутарпа чăваш пĕрлеччĕ,
Ирçе тус та юнашар.

Кашнинех куçран пит ăшшăн
Пăхтăр тенĕ пуль телей.
Пурнăçланнă ĕмĕт-ăсшăн
Хатĕрлетĕп сĕтеле.

Хирĕçлемĕр-и лартсассăн
Сара йĕс сăмавара?
Шăкăл-шăкăл калаçсассăн
Кăмăл тулмĕ-и вара?

Пуçăмра тутар парниййĕ –
Турилкке пек тюбетей.
Пӳлĕме ирçе тĕрриййĕ
Илемлетрĕ питĕ те.

Мĕншĕн-ха ирçе юрриййĕ
Вут чĕлхем çине килет?
Мĕншĕн-ха тутар юрриййĕ
Чунăма пырса тивет?

Кукамай енчен лекетĕп
Эп тăван ирçесене.
Сăн-сăпатăмпа килетĕп
Эп тутар çыннисене.

Асилсе кăштах ларар-и, –
Асилӳ вăл хăй парне.
Е сăра ĕçме каяр-и
Арапуçăн пасарне?

Çăм краски тутар сутатчĕ,
Ейĕк çăпати – ирçе.
Майĕпен чăваш тухатчĕ
Сухалне шăлса илсе.

Çăнăх йӳнелмен-и, – тетчĕ, –
Тунсăха, яшка юрма.
Хĕрĕсем валли илетчĕ
Икĕ ярăм каптăрма.

Ирçесем чăваш сăхманĕ
Çĕлесе çӳретчĕç тек.
Хăйсене савăнтарман-и
Симĕс тĕрĕллĕ итэк?..*

Пурнăçа саплаштаратчĕç
Аннесемĕр çаплалла.
Чăвашла татса калатчĕç:
«Пур – пĕрле, çук – çурмалла».

Пурнăç халь – хитре ӳкерчĕк,
Пурте пур мĕскер кирли.
Шурă çăнăхран икерчĕ,
Пыл шерпечĕ, çĕр çырли.

Кам калană, иртнĕ кунăн
Çути çук тесе пĕртте?
Аттесем кĕпер пек хунă
Туслăх çухалман пирте.

Пурăнмашкăн уйрăмшарăн
Пултарайнă пуль, пĕрех
Тус-тăванлăн, юнашаррăн
Пурăнма илемлĕрех.

Асамат кĕперĕ витĕр
Тухнă-ши эпир, туссем? –
Чăн-чăнах та туслă питĕ
Паян кун пăлаенсем.

*1970 ç.*

---

* Качака тирĕнчен çĕлетнĕ çăмăл пушмак.

## МАЙ УЙĂХĔ

Çут тĕнче саккунĕ хăйне май:
Кăлтăрмач пек кусрĕ кайрĕ май.

Сăрт çинчен анать вăл улăха,
Улăхран сăрта вăл улăхать.

Савăнса пăхса иртмессерен
Шур пĕркенчĕк тăхăнчĕ сирень.

Май иртет те, шухăлăх иртет,
Ăшă çил сирень çеçки иртет.

Тумламшарăн тăкăннă çеçке
Çуркуннен çап-çут куççулĕ-çке!

Çут тĕнче саккунĕ хăйне май:
Кăлтăрмач пек кусрĕ иртрĕ май.

*1970 ç.*

## ВУНТĂВАТТĂ ÇАПСАН

Çуркуннепе çапсассăн вунтăваттă,
Тантăшсемпе, тетесемпе пĕрле
Кашни çулах çапла чупса васкаттăм
Пăр кайнине курма Пăла хĕрне.

Епле кĕрлетчĕ пăр, епле шатăртататчĕ,
Вут чулĕ пек, кăвак хĕмсем сапса!
Ăçтан кăна тухатчĕ ун хăвачĕ —
Çуратчĕ çырана пырса çапса.

Кĕрешĕве тухас пек кăмăлсемччĕ
Салтак çулне çитейнĕ тетесен.
Пăрсем çине хураттăмăр пуш енчĕк,
Чир-чĕр тасалтăр пирĕнтен тесе.

Пăла кăçал та шăнкăрти юхма-тăр
Хăйне хырса тасатрĕ туйăнран...
Шавлатăр пурнăç тепĕр чух,
шавлатăр,
Пăр ирĕлтĕр, пăр кайтăр чунăмран.

*1970 ç.*

## ЧЕЧЕКĔМСЕМ

Кивелнĕ сад. Анчах та питĕ лайăх
Ларса канмашкăн ун сулхăнĕнче.
Юратнă юррине юрлать пĕр кайăк
Тахçантанпах садри тĕм хушшинче.

Тӳр чунлă кайăк. Çĕнĕ сад чĕнсен те
Улăштармасть вĕреннĕ кĕтесе.
Çĕр çитмĕл çичĕ тĕслĕ чечексем те
Лараççĕ пек савнисене кĕтсе.

Утмăлтурат, кăвак çеçке, сар ейĕк,
Çумрах-çке шурă пурçăн шур çеçке.
Е сăнаман-ши ун чухне сире эп,
Е çамрăклăхăм пулнă-ши кĕске?

Чечекĕмсем, саркайăк хĕпĕртейĕ
Куçран пăхса ларас пулсан сире.
Уç конвертсем вĕçсе çӳреççĕ тейĕн,
Сар лĕпĕшсем вĕçеççĕ вĕçсĕрех.

Ай, чечексем, эсир асилтеретĕр
Чап-чакăр куçлă шукăль хĕрсене:
Çавăтăнса вăй картине кĕретĕр,
Юрлатăр лăпкăн çăлтăр юррине.

Ах, чечексем... Ун чух эп çамрăк каччă —
Пĕлнех-ши суйлама та юратма?
Анчах пĕри, пĕри вут хыптаратчĕ
Тин çеç вăраннă çамрăк чунăма.

Пӗрремӗш юрату, сӳнмен кӑвар та
Сан пек суран тӑваймӗ чӗрере.
Чуна ӗнтсе тӑмха ҫапса хӑвартӑн,
Асаилӳ хӑвартӑн ӗмӗре.

Паян та ак кӑвак чечек пӗлтерӗ
Сан куҫусем ҫинчен пӑшӑлтатса.
Кунсем иртсен те ӗмӗр иртмӗ терӗм,
Анчах та ӗмӗр иртрӗ шӑл катса.

Кӑвак хуппи пек хӑвӑрт иртрӗ ӗмӗр,
Ыйтса та юлаймарӑм телейне.
Кивелнӗ садӑн чӗр ҫеҫкийӗ евӗр
Ҫап-ҫамрӑк туйӑм юлчӗ чӗрене.

*1971 ç.*

## ТĂВАН ЯЛА КИЛНĔ ЧУХ

Кашни ялăн ячĕ хăй пĕр кĕвĕ:
Çĕрпӳел, Чурачăк, Патăрьел...
Ял çинчен ӳкернĕ кино евĕр
Куç умне тухайрĕ хамăрьен.

Хыр вăрманĕ çумĕн, ял-ял умĕн
Пилĕкне авса юхан Пăла
Унчченхи пекех таçтаваскать-мĕн
Хăвапа харшанă çулпала.

Çаплипех çиçсе тăран мăн улăх,
Ай, ытла хитре-çке, тупата.
Пирĕн пек вăл ватăлмасть те урăх,
Пирĕн пек туймасть вăл вăхăта.

Картинкка çинчи пек пăхăр хырлăх,
Юнтапа енче тăваткăл хир...
Çакăнтан тата илемлĕх, ырлăх
Тек ниçта та курас çук эпир.

Çăварни çавра çатми пек тикĕс
Айлăма вырнаçнă Арапуç,
Сăнасассăн, кайăк йăви пек эс,
Сан çинчен кайма пĕлмерĕ куç.

Сывă-и, ĕрчев тытан ял-йышăм?
Хăв кăларнă çирĕп виçепе
Хут вĕреннĕ ывăлна эс йышăн —
Тивĕçлĕ пулсан вăл хисепе.

Кăшт пулсан та ячĕпе хисепĕ
Айăплă туятăп-çке хама,
Ма тесен, чалтун хăна пек эпĕ
Пит сайра килетĕп ялăма.

Е инçе, е пушă мар тени те
Сăйланса тӳрре тухни кăна.
Пурнăç япăх чупнă чух тинех, тен,
Асилетпĕр çывăх тăвана...

Ан вăрçсам, ял-йышăм, манăн шухăш
Сан çинчен çеç пулнă яланах.
Ахальтен-и сăввăма пит шухă
Ял кĕвви вырнаçрĕ аванах.

Акă ĕнтĕ хамăр кас урамĕ,
Акă хамăр лартнă йăмрасем.
Чуптăвам-и вĕсене? — юрамĕ,
Ӳсĕр килнĕ тейĕç ватăсем.

Ачаран чунтан юратнă вырăн
Ытамне лексессĕн, мĕн тума
Асилӳ вăратрĕ ырă-ырă
Тунсăх йывăрлатнă туйăма?

Урампа пăхса майпен иртетĕп:
Утăмран утта — танлаштару.
Ĕлĕк чух çаплаччĕ пурнăç тетĕп,
Халь капла иккен лару-тăру.

Çулĕсем тата ăнтан кăларĕç,
Çӳреймест автобус йĕпере.

Çул тумашкăн, ваттисем каларĕш,
Те чул çук, те чун çитмест пире...

Астăватăп, – кам-ха ăна манĕ? –
Кашни çул, çăва тухмассерен,
Кĕреçе тытма пултараканĕ
Çул тума тухатчĕ килсерен.

«Çул эрнийĕ» ятлăччĕ уявĕ.
Уява кам тухтăр укçалла?
Кирлĕ марччĕ ун тӳлевĕ, тавĕ, –
Чăн, ĕçленĕ коммунизмла.

Вăй-хăвачĕ çук-и халь калхусăн,
Пуçлăх çук-и ял Советĕнче?
Тĕлĕнсе ăнтан каян пĕр хушă
Çав ăслайлă пăлахайсенчен.

Ăнланмашкăн пирĕн вăхăт ĕнтĕ:
Ĕçлесех тесессĕн çĕнĕлле,
Пуçлăхсен те, пирĕн пек çынсен те
Пăспа мар – ăспа ĕçлемелле.

Çитĕ «çĕтĕлмешкĕн», тиркешмешкĕн.
Савнă тăван килĕм, ман килес.
Пĕчĕк пахчана илем кӳмешкĕн
Шур çеçке çурать хура пилеш.

Унчченхи пекех умра акаци,
Шашулккасăр пĕчĕк калинкке.
Хĕрлĕ мăкăнь ун умне акатчĕç,
Халь те мăкăнь хĕмленет иккен.

Ĕмĕртен тирпейлĕ пулнă халăх
Кунĕн-çĕрĕн ĕçлесе ялтах
Савăнса этем пек пурăнмалăх
Ăсталанă кирлине йăлтах.

Арчара тупра, лавкка кавирĕ,
Сар улпут апачĕ – умĕнче.
Кĕнеке те, таса хут та ирĕк, –
Ĕлĕкхи пек чухăн мар тĕнче.

Тӳррине тӳрех калас пулсассăн,
Пурнăçăмăр халĕ пыл та çу.
Пурте пур пек, шутласа пăхсассăн,
Анчах тем çитмест пек, темĕн çук.

Хамăрпа танлашнă çак пуян та
Çак ытла хитре саманаран
Тем илмесĕр юлнă пек туятăн,
Тем çухатнă евĕр хуйхăран.

Кантуртан хитре çуртсем лартатпăр,
Машина тавраш та килсерен...
Урамра, ав, пылчăк, ăпăр-тапăр,
Тупаймастăн саплăк пек çерем.

Иртнине эп асилсе пыратăп.
Анчах кам ĕненĕ-ши тинех
Тĕкме çумĕн аслă урамра та
Чечексем ӳсме пултарнине?

Ялтипе виçсе танлаштарсассăн,
Мĕншĕн-ха хула урамĕнче

Ешерет çеремлĕх кассăн-кассăн,
Ăпăр-тапăр çук çурт умĕнче?

Манăçса пырать иртниййĕ, пурпĕр
Йывăррăн çунаççĕ макăньсем.
Вĕсенче аннемшĕн тунсăх пур пек,
Тен, аттесĕр иртнĕ кунăмсем...

Çамрăк чух çунаттăм эп пĕлесшĕн, —
Халĕ тин ăнкартăм йĕркине —
Мĕншĕн, мĕншĕн çав хура пилешĕн
Çеçкисем шап-шурă иккенне...

Халь тĕнче, чăнах та, савăк, тăнăç —
Тав тумалăх пур патшалăха.
Пурпĕрех чечеклĕ мирлĕ пурнăç
Ан мантартăр иртнĕ хуйăха.

Çав хăрушă вăрçăра пуç хунă
Савнă аттесемĕр ячĕпе
Акнă мăкăнь кĕп-кĕрен саппунăн
Йăмăхтăрччĕ пĕтĕм ялĕпе.

Чи хисеплĕ палăк чул та мар вăл,
Сарă ылтăн кĕлетке те мар:
Чаплă палăк — халăх асĕнче вăл
Йăх ятне тытса пыран тымар.

Ахаль мар пуль аннесем упранă, —
Манмалла-и пирĕн вĕсене? —
Куççульпе те вăхăтпа сархайнă
Аттесемĕр çырăвĕсене.

Ах, салтак шăпийĕ, мĕншĕн эсĕ
Виç кĕтеслĕ çырупа пĕр пек? —
Çырăнса пĕтмесĕр, вĕçленмесĕр
Таталатăн тунсăх йĕркепе.

Ватăлма ан васкăр-ха, тархасшăн,
Паттăрсен чипер мăшăрĕсем?
Ав, сире стена çинчен курасшăн
Ĕмĕр çамрăк юлнă аттесем...

Ĕнтĕ шухăш çип çăмхи пек кусрĕ,
Тупрĕ пулĕ хăйĕн еккине.
Акă кил хуçи те алăк уçрĕ,
Кил хуçийĕ — тăр-пĕччен анне.

Савнăçне нимле пытараймасăр,
Чăвашсен сăпайлă йăлипе
Ытлашши сăмахсăр, чуптумасăр
Çупăрларĕ икĕ аллипе.

Кĕтекен хăна ялан сăваплă,
Пĕлеен-ши, чунăмçăм анне,
Маншăн эсĕ пурăнни пит хаклă,
Эсĕ хăв телейĕм иккенне.

Шур çăка хуппи пек пĕркеленчĕк
Тăп-тăваткăл сăн-питӳ çине
Хăш çулсем çапла-ши йĕркеленчĕç
Шыв çурса антарнăн хирсене?

Яланах тирпейлĕ эс çӳретĕн:
Икĕ аркă, аçлăклă кĕпе...

Ман ятпа пылак шерпет ҫӗклетӗн
Пӳрнеске пек пӗчӗк черккепе.

Ҫулупа пулсан та эсӗ ватӑ,
Ӑстӑну сан ҫивӗч-ха, анне, –
Ҫитмӗл ҫичӗ сӑвӑ астӑватӑн
Ҫитмӗл ҫичӗ самана ятне.

Пирӗншӗн чунран пӑшӑрханатӑн,
Чи кирли ялан чӗлхе ҫинче.
Пур пулса иртен япалана та
Хак паран патшалӑх шайӗнче.

Сӑмахна эп итлесе ларуҫӑн
Шухӑша путап самантлӑха.
Чун-чӗрӳ сан ялти ҫурт пек уҫӑ,
Кӑмӑлу сан – уй пек сарлака.

*1972 ҫ.*

## АСЛӐ АРАПУҪ ПАСАРӖНЧЕ

I

Анат чӑвашсен авалхи йӑлипе
Пасар хапхинчен ҫакса янӑ такан:
Сана, илекен, ҫут телей лавӗпех,
Сана — канлӗхпе ӑнӑҫу, сутакан.

Вӗлле пек пасар хӗвӗшет те сӗрлет:
Япшар — сутаканӗ, тиркеш — илекен.
Чеелӗх, тӳркӑмӑллӑх — пурте пӗрле,
Вӗсен хушшинче пурнӑҫ ҫулӗ иккен.

Ак ват кинемей, хӗрупраҫ та чикан
Курса савӑнаҫҫӗ — таварӗ ахрат.
Хӗвел еннелле тинкерсе пӑхакан
Кушак куҫӗсем пек выртать виноград.

Пӗр пысӑк витре те пӗр пысӑк карҫын
Пӑрчкан ҫӑмарти пек шултра хурлӑхан.
Кунтан ырлӑха хапсӑнать-и ыр ҫын? —
Пурпа савӑнатӑн, ҫукпа ҫырлахан.

Кама мӗн астарӗ? — Ак пур ҫӑпата,
Вӗр-ҫӗнӗ ала та ҫӑка ҫӑпала...
Пӗр вӑхӑт тӑрсах тӗлӗнетӗн тата:
Мӗн чухлӗ сана кирлӗ мар япала!

Апла та шутлатӑн, капла та шутлан,
Пасар анлӑшне ҫирӗм иккӗ хутлан.
Хӑш чух туянсан лайӑхрах, тен, хӑш чух
Тӳлевсӗр парсан та илме кӑмӑл ҫук.

Ан пĕттĕр тесе-ши телей шыракан
Пасар хапхинчен çакса янă такам
Ытла илĕртӳллĕ çап-çутă такан?
Анчах та кам пултăр телей сутакан...

II

Уçăлать те хупăнать
Тимĕр тĕнĕл янă алăк, –
Арапуç пасарĕнче
Вĕркĕшет тем чухлĕ халăх.

Кам сутать те кам илет,
Пур пăхса çӳрекенсем те.
Сителсем сутаç сĕтел,
Сĕнтĕрсем илесшĕн чĕнтĕр.

Кирлине тăваç сутма,
Çуккине илесшĕн пурте,
Илеймеççĕ те вара
Пасара тăраççĕ тӳртĕн.

Сутаять-и сутакан,
Илеет-и илекенĕ –
Вăхăчĕ килсе çитсен,
Сĕврĕлет пасар ĕлккенĕ.

Кам сăнанă? – пасарта
Ывăнсан канма лармаççĕ.
Ачасем, пасар пĕтсен,
Вак укçа халь пуçтармаççĕ.

Эсӗ, пурнăç, аслăрах
Арапуç пасарӗ мар-и? –
Тăп-тăваткăл çут тӗнче
Куçăмран пӗртте каймарӗ.

Кам килет кунта юри
Чап, суту-илӳ тумашкăн,
Кам килет кунта юри
Калаçмашкăн, савăнмашкăн.

Çав курса çӳрекенсем,
Ӗлӗкхи ăсчах калараш,
Чи телейлӗ этемсем.
Тен, вӗсем мана палларӗç?..

*1972 ç.*

## СĂРТСЕМ

Çĕрпӳ енчи хысак сăртсем –
Тăп чарăннă çĕр хумĕсем,
Пăхсассăн, шухăша яратăр:

Е утса тухнă çулсене,
Е вăйпитти вăхăтсене
Салхуллăн асилсе ларатăр?

Тен, ĕлĕкхи çапăçăва,
Ун хыççăнхи калаçăва
Санрав* салтак пулса тăнлатăр?..

*1975 ç.*

* * *

Хĕрлĕ мăкăньсем, хĕрлĕ мăкăньсем –
Пĕчĕк пахчари пĕчĕк ялавсем,
Кайăк каннă чух пĕр асамлă ир
Мĕншĕн васкаса тăкăнтăр эсир?

Е тăм ӳкрĕ-и, е куç ӳкрĕ-и,
Е ют çын кунтан шуххăн иртрĕ-и...
Савăнса пăхса юлас тенĕ чух
Пĕчĕкех пахчан халь илемĕ çук.

Вăхăт çитрĕ-и е вăхăтсăрах
Сӳнчĕç ĕмĕтсем – пĕчĕк ялавсем.
Манăн чунăмра – пĕчĕк пахчара
Малалла чĕнсе вĕлкĕшмĕç вĕсем.

*1975 ç.*

---

* Санрав – хăлхасăр, илтмен çын.

* * *

*А. Лукинпа Ю. Айдаш поэтсене*

Тĕрĕс мара чунпа тӳссе
Шутлаттăм йӳтесе:
Поэт нумай та, чăн туссем
Пĕрре те çук, тесе.

Пур, пур! Тавах, — эп пĕлтĕм тин —
Ик тĕрлĕ ик юлташ:
Вăрăмраххийĕ — Арк. Лукин*,
Тепри вара — Айдаш.

Лукин — Блок сăнлă мăн кĕрӳ,
Нихçан пусмасть уксах.
Ура тапса пуçа ухса
Юрлать вăл пит хĕрӳ.

Тухать-и Атăл хĕррине,
Е стройкăна килет —
Хавхалануллă юррине
Унтах хывать поэт.

Эп çаврăнатăп шухăшра
«Çĕр тĕнĕлĕ»** тавра:
Унта пулатăп, Пакăшра***,
Унтан ак — Мускавра...

---

* «Арк. Лукин» тесе алă пусатчĕ Аркадий Васильевич Лукин.
** А. Лукинăн сăвă кĕнеки.
*** Пакăш — поэтăн çуралнă ялĕ.

Ăçта кайсан та поэтпа
Утатăп савăнса.
Инçе çулта та çак çынпа
Ĕççем пыраç ăнса.

Виçеççĕ-мĕн поэзипе
Тăван çĕршыв чысне.
Пăхасчĕ сăвăç куçĕпе
Хам пурнăçăм çине.

Айдаш вара, пĕрре пăхсан,
Философ чăн-чăнах.
Сăввисене вулас пулсан,
Ăна эс туянах.

Çĕкленнĕ пек каплам-каплам
Плуг айĕнчен çерем,
Сулмаклă шухăшсем çапла
Тухаç йĕркесерен.

Мĕн иртнине пĕтĕмлетет
Тĕнче шайне хурса.
Çак пĕчĕк ĕмĕлкере те
Пĕлтерĕшлĕх курса.

Калла чакса, таçтан вара
Тăнлать вăл хăй чунне.
Çапла, тен, шухăша ярать
Ир пулнă кĕркунне...

Шупашкарта ман пур, эппин,
Ик тĕрлĕ ик юлташ.
Пĕрре пулас килет Лукин,
Тепрехинче – Айдаш.

Анчах епле ман вĕсенчен
Пĕр săваç калăплас? –
Вара чăваш поэзинче
Исмук пулса юлас...

*1975 ç.*

## КĔРХИ ШУХĂШ

Кăшкăрашса чупаç-и класĕпех
Шкултан тухсан вĕт-шакăр ачасем? –
Автобус хыççăн сивĕ шоссепе
Кĕпĕрленсе вĕçеççĕ çулçăсем.

Кĕр кунĕ – алăк умĕ, çу – тĕпел,
Эпир унта хăна-вĕрле кăна.
Пĕр чăмăркка сар çу пек сар хĕвел
Текех ӳкмест çавра уçланкăна.

Хуралçă пӳрчĕн мăрйине лексе
Упаленеççĕ ватă пĕлĕтсем.
Шăпа çырни-ши? – кĕтесле вĕççе
Хуркайăк ăсанать, чуна йĕртсе.

Эй, хĕрупраç! Аллăрсене сулса
Курăнмиччен ăсатăр вĕсене,
Вара хĕлкаçĕн, шăппăн юрласа
Саппун çине ӳкерĕр вĕçевне.

Кунсем кĕскелнĕçем хуллен-хуллен
Вăрăмланса пыраççĕ шухăшсем.
Вак-тĕвексем тăватпăр-çке куллен,
Тен, çавăнпа çукрах ятăмăрсем...

Кам çыхнă хура тутăр çу каçа? –
Каçсем çинчен сирсе сирмелле мар.
Ай-хай, иртет-çке вăхăт васкаса,
Çурхи шыва пӳлсе пӳлмелле мар.

Автобус иртрĕ, çулçă хускалмасть.
Юр ларĕ чи малтан çул хĕрринче.
Калас сăмах пек канăç тупаймасть
Хуралнă çулçă хурăн тăрринче...

*1975 ç.*

## ТĂМХА

Хитре çанталăка кура
Хитре танлаштару шыратăп.
Тупайăп-ши? Хура курак
Хура курать хăйне шывра та.

Йăлтах йĕркеллĕ пек, анчах
Çул айккинче пĕр хускалмасăр
Тăрать сĕм-суккăр хĕрача —
Çут тĕнчене асăрхамасăр.

Ах, аслă, аслă çутçанталăк,
Сан пĕчĕк, пĕчĕк йăнăшу
Чуна тивсе тăмха çапмалăх
Çуратрĕ чиксĕр йынăшу.

*1975 ç.*

* * *

Юратăва çарпуçĕ пăхăнать,
Юратăва асамçă ăмсанать.
Сар лĕпĕш пек, каçхи кăвайт тавра,
Шăпа та çаврăнать пуль ун тавра.

Каçса кайсах юрлатчăр шăпчăксем,
Çынсем пекех юратчăр чечексем.
Пĕрне-пĕри хĕрӳллĕн савнă чух
Умра нимле чару та пулас çук.

Питне çăвать ир тăнă çĕнĕ кун,
Йĕпенчĕ сывлăмпа кăвак саппун.
Арапуçсен кивелнĕ садĕнче
Мĕн-ма раснах хитре ирхи тĕнче?

Çĕн кун пек çĕнĕрен-и çуралас? –
Куçусенче ӳкерĕнсе юлас.
Çак телее çарпуçĕ пăхăнать,
Çак телее асамçă ăмсанать.

*1975 ç.*

* * *

Сар çăка хăех ӳкерчĕк:
Çавракa сар çулçине
Сарă кайăк пек вĕçтерчĕ
Çывăхри çерем çине.

Чĕмсĕр çил пĕрер-пĕрерĕн
Пуçтарать те вĕсене
Йĕркелет асамлă çĕрĕ
Илĕртмешкĕн хĕрсене...

Ылтăн çĕрĕ ма çавра-ши? –
Шухăша кайса тăран.
Е çак Çĕр çаврăннăран-ши,
Е кунсем çаврăннăран?

Кам чунне пăлхантармарĕ
Сарă ылтăн кĕркунне.
Çулçă евĕр ӳкрĕ мар-и
Тепĕр çул ура айне...

*1976 ç.*

* * *

*...Сторож-çил*
*Çулçăсене ман умранах шăлать.*

Ю. Айдаш

Кĕрхи илем — хавхалану саманчĕ
Хыпса илсе çунса-çунса пĕтсен,
Сар кайăк чĕпписем пек пĕр саланчĕç,
Пĕр пухăнчĕç хĕвеллĕ ĕмĕтсем.

Çу кунĕн сар чĕппи — сап-сарă çулçă,
Мĕн-ма аскан «хĕреслĕ урама»?
Чи юлашки çулçипеле ал сулчĕ
Тĕкме çумне таяннă хурама.

Ах, çулçăсем, мĕскершĕн пурнăç панă
Пĕлсе тăрсах сире халь пĕтессе?
Самантлăха кăна мĕн-ма янранă
Орган сасси пек техĕмлĕ тĕссем?

Сăн-питĕрсем тулли сар мăйăр тĕслĕ.
Выртатăр, мĕскĕнсем, лупашкара.
... Шухăшăмсем пулса çитейнĕ, тĕшлĕ —
Мĕн-ма вĕсен те пĕтмелле вара?

*1976 ç.*

## ÇĔНĔ КУН

Хĕвеллĕ çĕнĕ кун, салам сана!
Эс вăхăт шутĕнче чи кĕçĕнни.
Чӳречене яр-уçă уçсанах
Пĕлес килет: мĕн парнелен çĕнни?

Пулаççĕ-и санпа унчченхилле
Утас çулсем тап-такăрах çатма?
Е килĕç иртнĕ йăнăшсем каллех
Утас çулта сулăнкăна çапма?

Эп çĕн куна кĕретĕп иртнипе:
Хĕнпе хĕрсе çирĕпленен ăспа,
Çунса тасалнă сарă савнăçпа,
Тӳсĕмпеле, çукран пур тунипе.

Анчах пулассипе пурнап паян:
Çĕн çитĕнӳшĕн пултăр утăм ман,
Хавхалануллăн юхтăр юррăм ман,
Мал ĕмĕтпе ман пурнăçăм пуян.

*1977 ç.*

* * *

Асăма ан килтĕр терĕм
Иртнĕ йăнăш, иртнĕ кун —
Çулăма кунта тĕллерĕм,
Кантăр терĕм кӳтнĕ чун.

Куç тулли çап-çутă кӳлĕ,
Кăкшăм-курăк айлăмра.
Кичем мар-çке, — ма каçкӳлĕм
Ĕсĕклет кунта тăмра?

Кӳлĕ çумĕн йăрăс яхтă,
Çурчĕсем пит вырăнта.
Танлаштартăм та, чăнах та,
Кăкшăмри пекех кунта.

Тавтапуç, паян эп сывă.
Тăрă кӳлĕ умĕнче
Выртнă та çыратăп сăвă
Малашри кунсем çинчен.

Çĕн çĕрте вĕр-çĕнĕ шухăш.
Пĕр-пĕрне тусла кĕтсе
Черетленчĕç çивĕч, шухă
Чĕкеçсем пек ĕмĕтсем.

Шĕвĕр вĕçлĕ сăркăч вĕççĕн
Эп тытам та вĕсене
Ĕмĕр-ĕмĕрлĕх вĕçмешкĕн
Антарам шур хут çине.

*1977 ç., Мускав*

* * *

Вешникрен шыв кайнă евĕр
Çумăр хыççăн темĕнччен
Электричкăсен кĕрлевĕ
Чарăнмарĕ çурçĕрччен.

Сарă çарăк пек сар купол
Ĕлĕкхи чиркӳ çинче.
Мăнаçне упранă кун вăл
Сармантей саманинче.

Çĕнĕ юр – çĕн  каç саманчĕ...
Çĕнĕ юр – çĕн çул çути
Çепĕç  кулă пек саланчĕ
Ильичевкăна çити.

Философи аспиранчĕн
Шухăрах шухăшĕнче
Çĕн юрпа, тен, ансатланчĕ
Философилле тĕнче.

*1977 ç., Мускав*

* * *

Кĕркунне! Пĕр пĕтĕм
Тĕнчене, чуна
Лăплатать пуль, теттĕм, —
Пăлхатать кăна.

Çаврăнать çил-тăвăл
Урлă урамра.
Хурăн çулçине вăл
Шăлчĕ туххăмрах.

Сарă, сарă çулçă
Тутăр вĕçĕнче, —
Ĕмĕлки çеç юлчĕ
Чӳрече çинче.

Пĕчĕк, ăшă пӳлĕм —
Лăпкă кӳлемек*.
Кӳтнĕ чун каç кӳлĕм
Кăшт лăпланчĕ пек.

*1977 ç., Мускав*

* Кӳлемек — залив.

* * *

Ăнман кунсем ман çулсене
Пӳле-пӳле хурсассăн,
Пирус туртап çине-çинех,
Сывлатăп ассăн-ассăн.

Эп лайăх пурăннă чухне
Юлташ та пур, савни те.
Ума халь тухрĕç тем чухлех
Савни те, савманни те.

Пĕрре апла шутлан, тепре
Капла шухăшласа пăхатăн:
Çапах та тĕрĕслĕх тĕпре,
Тасалăхра хăватăм.

Чăтăмлăхпа пĕр хурăнташ,
Хавхаланулăх, эсĕ.
Юлташ ман пултăр кăранташ,
Савни тени – поэзи.

*1977 ç.*

## ПУЛЬНИЦĂРА

Тем анлăш палата та тăвăр.
Кунсем те, каçсем те пĕр пек.
Паян эс çырайăн-и сăвă
Çаплах, унчченхи хĕрӳпех?

Асать, хумханать чĕрĕ тунсăх —
Йĕпеннĕ хура вĕлтĕрен.
Çунатăм ман ывăннă, усăк,
Те лăпкăн вĕçме пĕлменрен?..

Çапла, пуррине упраймастпăр,
Йĕретпĕр вара çухатсан.
Ăçта-ши хĕвеллĕ те капăр
Çӳхе парне тутăрĕ сан?

Епле çăмăл пулĕччĕ, ырă
Ялан эс пулсассăн çумра.
Манра эс çуратнă пĕр юрă,
Пĕр юрă — пĕр ĕмĕт умра:

Каллех ĕлĕкхи пек пырасчĕ
Санпа алла-аллăн тытса.
Текех чирлес марччĕ — утасчĕ
Пĕр тикĕс, пуçа ывăтса.

Тăрам-и апла эп, утам-и
Çӳхе кĕпе вĕççĕн кăна.
Тăван пек, мăн улăх ытамĕ
Савса ачашлатăр мана.

Сипетлĕ чечекĕн шăршийĕ,
Сывлам ăна кăкăр тулли.
Ирхи таса сывлăм шевлийĕ, –
Тен, ман савнă çыннăн кулли...

*1977 ç.*

* * *

Эс кайрăн та палата пуш-пушах.
Чечек анчах сар сĕтелӳ çинче.
Çапла вăл ăсатсан чăн юлташа:
Тĕксĕмленет сăн-пит кун çутинчех.

Чĕнмесĕр калаçаççĕ чирлисем,
Тимлеççĕ эс унччен пупленине.
Çапла туяççĕ пуль ыр аннесем
Килте ун ывăлĕ çитменнине.

Çухатăва çитеймĕн хăнăхса.
Çил чарăнса тăрать чечексенче.
...Хĕвел шевли ӳкет те йăмăхса
Шырать çӳçне пуçелĕкӳ çинче...

*1977 ç.*

* * *

Валакра — хĕвеллĕ тĕрĕ,
Таврара — вăрман, сăрт-ту.
Пушкăрт хĕрĕ, пушкăрт хĕрĕ,
Ытала мана, чупту.

Çеçенхир чĕппи! Хальччен эп
Сан пекки чăнах курман.
Çăлтăрпи тесе эп чĕнĕп —
Пул эс çутă çăлтăр ман.

Кĕçтенти каланă тăрăх,
Çĕршыву сан ытарми.
Валак шывĕ уçă, тăрă —
Сан сассу пек, Çăлтăрпи.

Тепĕр чух салху эс питĕ.
Мĕн асилтĕн-ши, пике?
Чĕлхӳпе те, ĕçӳпе те
Эс Нарспи аппу пекех.

«Нарспине» вуланă майĕн
Кăмăлна текех ан хуç:
Паян кун хĕрсем телейлĕ,
Ăраскаллă халь Слакпуç.

Çӳçенсе-çунса илмелĕх
Ытала мана, чупту.
Çиле хирĕç тăр, йĕлмелĕх,
Çиле хирĕç тăр, сăрт-ту.

*1977 ç.*

* * *

Мĕскер çинчен юрлатăн эс, пике? —
Сассу ытла салхуллă сан паян.
Элле тăван енне асилнипех
Куçна хупса эс шухăша каян...

Пĕлместĕп эпĕ пушкăрт чĕлхине,
Йăли-йĕркисене пĕлместĕп эп.
Анчах хĕр юррине, хĕр чĕрине
Чăваш хĕрĕсенни пекех сисеп.

Кăвак куçсем — Слакпуç çăлкуçĕсем,
Юрру юхать пек çӳллĕ валакра.
Йăмра мĕлки юхать те, юхнăçем
Сан кăтрусем пек туйăнать вара.

Пăрах эс пушкăрт йĕкĕтне, пике, —
Мĕнрен кая унран чăваш каччи!
Пĕрле илемлетсе йĕлме пĕкке
Пĕрле чупар-и савнăç катаччи.

*1977 ç.*

* * *

Элеги пек салху эс яланах,
Аллу та ӳкнӗ хуҫӑлнӑ ҫунатӑн.
Анчах та ӑшунта хыпса ҫунатӑн,
Хыпса ҫунсах вулатӑн сӑввуна.

Вара... сӳнсе ларатӑн та — шӑпах.
Ман ҫул-йӗрпе, тен, эс те утса курнӑ?
Тӑвата йӗркерех вырнаҫнӑ пурнӑҫ,
Тӑвата йӗркерех ак пӗр шӑпа.

Эс хӑв та чӗрӗ тӗвӗ, ырату,
Суран ҫине ӳксе суратӑн мар-и...
Тен, лайӑх ку? — шӑпа пире памарӗ
Ыратуран ҫуралнӑ юрату...

*1977 ç.*

* * *

Вăл вăхăтра — мĕн калăн? — çамрăк пулнă:
Хыçалалла çавăрăнса пăхман,
Йăнăшсене курман та йышăнман,
Пĕр хăрамасăр çĕнĕ утăм тунă.

Паян асăрхануллă, шăп утатпăр —
Çул юппинче хăратпăр ӳкесрен.
Тен, çавăнпа теветкелрех ĕçрен
Сăлтав тупса сăпайлăн пăрăнатпăр.

Халь тăтăш-тăтăш асилме пуçлатпăр,
Шеллетпĕр иртсе кайнă савнăça.
Вара иртейнĕ кунсенче пурнатпăр...
Çапла, тен, сулăнатпăр анăça.

*1977 ç.*

* * *

*Геннадий Айхине*

Салам, Мускав çынни.
Салам! Мĕнле пурнатăн?
Хыпар-хăнар çĕнни
Мĕн каласа паратăн?

Мана, килекене,
Кăштах эс хăналасшăн
Лартан кĕрекене, —
Йăли çапла чăвашăн.

Вара, куллен-куллен
Çăлкуç йăл илнĕ евĕр,
Юхать çемçен, хуллен
Анатьенсен пуплевĕ.

Çырулăх ĕçĕнче
Сăну сархайнă темĕн? —
Индус сăн-питĕнчен
Санра кăштах пур тейĕн...

Чăвашăн несĕлне
Тĕпченĕ майăн эсĕ
Ăна индус енне
Туртатăн, тен, пĕлмесĕр.

Тĕнче поэзине
Хакланă чух сăпайлă

Митта сăввисене
Картатпăр хамăр майлă.

Мĕн-ма япалана
Пур чух тăкак тытатпăр?
Поэт кайсан кăна
Ĕçне-хĕлне хаклатпăр?

Шутламăпăр паян
Вĕçне тухан çула та –
Эс французла вулан,
Эп арапла вулатăп.

Чăн, вакласан нумай,
Пĕтет сăмахĕн тĕшĕ.
Пурăнăçна çул май
Эс ирттермен, ентешĕм.

Чăваш поэзине
Тĕнче умне кăлартăн.
Кăранташу çине
Ялан саркайăк лартăр.

Мехел çитнĕ таран
Меслет тупса вăй хутăн.
Пăхсассăн катаран –
Историре халь ху та.

Пĕлен, сар çу ӳкет
Пăтравлă уçласассăн...

Сана курса, поэт,
Кăшт тасалать пек сассăм.

Эс юратни, çунни
Ытла та çывăх маншăн.
Тавах, Мускав çынни,
Чăвашлăха манманшăн.

Çак шавлă хулара
Эс тарават пулни те
Шап-шурă флоксăра
Çемçе тĕссем курни, тен...

*1977 ç., Мускав*

# 1978-1987 çç.

* * *

Этемлĕхĕн пуçламăшĕ — танмарлăх
Тĕвĕленсе пĕр чăмăр пуличчен
Эпир халь юратса пурнан тавралăх
Ăна хĕстернĕ шелсĕр пур енчен.

Тĕнче умне этем хĕвел пек тухнă
Хăй тупнă вутăн сарă çутипе,
Вара мĕн чухлĕ çутă ăс вăл пухнă
Çӳренĕ май хатарлăх çулĕпе.

Танмарлăх, пăхăнманлăх, уçă ярхăн —
Çак кĕтесре çех ирĕклĕх пулать.
Чăваш пики пулман нихçан та хăрхăм,
Тухман нихçан та лавăça Булат.

Эй ирĕклĕх, эй ирĕклĕх этемĕ!
Çав пăхăнманлăх çунатти çинче
Тĕллев патне çитсе ӳкет те ĕмĕт,
Вăй пуçтарса каллех вĕçет инçе.

Хăв шăпуна куçран пăхма хăйсассăн,
Эс çутçанталăк вăйĕпе пĕртан.
Ăçтан вăй илтĕн эс? — танлаштарсассăн,
Пăхса илен те йывăça хăртан.

Унччен эс пулнă вăхăтăн таптавĕ,
Халь хăв ăна утатăн таптаса.
Çĕр пăхăнать сана, анчах ун тавĕ
Хăв тап-таса пулсассăн çех таса.

*1978 ç.*

* * *

Кӗвӗҫсе тӑрсан та, эсӗ
Пит ан савӑн-ха ытла:
Пуҫ усмасӑр, йӳнелмесӗр,
Кур, каятӑп поэтла.

Ӗненместӗн-и? — каятӑп,
Ҫаврӑнса пӑхмасӑрах.
Юратсан-юратмасан та
Каймаллаччӗ паҫӑрах.

Савӑшу тенийӗн терчӗ
Суяна чӑн пек туни.
Халь хама та иментерчӗ
Антӑхса эс чуптуни.

Эп пӗлетӗп, эп сӑнатӑп —
Ҫиллӗ вӑхӑт иртнӗҫем,
Сан суя калаҫуна та
Хурӑп сӑвӑ-кӗвӗсем.

Пуҫлӑп вӑрттӑн асилме эп
Иртнӗ кун ҫутисене,
Ах, анчах та сӗртӗнеймӗп
Сан хура кӑтрусене.

Эс те тунсӑхна сирмешкӗн
Иртнине шутла-шутла
Унчченхи пек юрлӑн, мӗскӗн,
Авӑк юрӑ пушкӑртла...

Савмасан, мĕнех – каятăп.
Пурпĕрех, тăвап тупа,
Çын чĕлхи çинче ман ятăм
Юнашар сан ятупа.

*1978 ç.*

* * *

Те мансах пыратăн эс те,
Савнă çыннăм, савнине:
Лĕпĕш пек вĕçсе килместĕн
Манăн чӳрече умне.

Тĕмсĕлсе аса илместĕн
Эс мана, тен, урăхран.
Чечексем пухса кĕместĕн
Ман пата эс улăхран.

Унчченхи пек, йăпанасшăн
Ытлашши салху чухне,
Пĕчĕк кайăк пек ачашшăн
Ӳкес çук чĕркем çине...

*1978 ç.*

* * *

Паян телейлĕ эсĕ çав тĕрлех:
Сан ятупа ĕçет хăна-вĕрле.
Кĕрекӳне мухта-мухта юрлаççĕ,
Кайран вара... хăвна мансах ташлаççĕ.

Телей яланлăх килнĕн савăнан,
Тус-юлташу çинчен пачах манан.
Хуйха-суйха эс уйăрма пĕлетĕн,
Анчах пайламалла-мĕн телее те.

Уяв иртет те пушанать сĕтел,
Пĕччен юлсассăн, савăк мар тĕпел.
Ултав, паллах, малтан илемлĕ ĕнтĕ –
Эп тĕрĕсне каларăм та – çиллентĕн.

*1978 ç.*

* * *

Тĕттĕм каç хăрушă,
Сарă кун таса.
Çак чикке пĕр хушă
Тăтăм тăнласа.

Акă пĕчĕк шăпчăк
Ячĕ шăхăрса,
Чĕрене сасартăк
Çурмаран çурса:

Вăрттăн савăнмалăх
Тунсăх кунсенче
Шухăшсăр ачалăх
Юлчĕ пĕр енче.

Кĕсйерен ўкернĕ
Шурă теттесем
Пулчĕç те ешернĕ
Çĕмĕрт çеçкисем,

Ни сиксе каçмашкăн,
Ни çавра кайма:
Юрату — ах каскăн,
Тăчĕ ман умма.

Кĕмĕл саслă кĕвĕ
Çăл валакĕнчен
Хĕр куллийĕ евĕр
Юхрĕ темĕнччен...

Ах, савни, савнийӗм —
Савӑнӑç ташши,
Сивӗннӗ телейӗн
Сивӗннӗ ӑшши.

*1979 ç.*

* * *

Тек кураймӑп. Ӑсатрӑм сана ал тытса,
Манса кайӑп тесе пӗреххут.
Пӳлӗмре халь выртать чунӑма хӑратса
Шурӑ хут, шурӑ хут, шурӑ хут.

Йӑрӑм-йӑрӑм юхса сар сӗтелӗм çинче
Çеçкеленчӗ хӗвел пайӑрки.
Темшӗн çав çутӑпа иртнӗ савӑш çинчен
Çырӑнмасть савӑш сӑвӑ йӗрки.

Чӗрене çӑмӑлрах куллуна мансанах —
Эс каллех ав тухан ман тӗле.
Алсене хире-хирӗç тытса ман сана
Куç илмесӗр каллех кӗтмелле.

Шурӑ хут, тен, чӑнах парне тутӑрӗ сан —
Асилӳ, асилӳ пӳлӗмре.
Кӗтмелли пулмасан, сӑвӑ çырӑнмасан,
Пурӑнни те харам ӳлӗмрен.

*1979 ç.*

## ЭЙ, ĂСЧАХСЕМ

*«Авалхи тĕнче историйĕ»*
*кĕнекере куç шăрçисĕр ӳкернĕ*
*философсем инçете-инçете пăхса*
*ларнă пек туйăнаççĕ.*

Эй, ăсчахсем! Кив кĕнекесенче
Пăхса ларан кив ĕмĕр ачисем!
Пĕр пĕтĕм улшăну саккунĕнче
Текех нихçан та улшăнман çынсем.

Эсир, хисеплĕ суккăр сутăç пек,
Виçесшĕн мар-и вĕççĕр уçлăха? –
Шур илнĕн курăнан куçăрсемпе
Çаплах пăхатăр çут малашлăха.

Элле шыратăр хăвăр çухатман
Пуласлăхри пуян вăхăтсене?
Е иртнĕ ĕмĕр пулăмне тытма
Кӳлсе тухатăр шухăшăрсене?

Пĕлӳçĕсем, эсир пĕлмен, паллах,
Мухтавлă ятсемпе пурнан тĕнче
Тата кама кăларнине мала
Малашлăхăн кăвак черетĕнчен.

Грек йăхĕ харпăр хăй вырăнĕнче:
Тăпса юпи, ăс-хакăл тыткăчи.
Вĕри те вăйлă шухăш хумĕнче
Епле тăрать сар Азин сар ачи!

Нумай выртсан та сӗм аваллӑхра
Тӗксӗмленмеççӗ ылтӑн пӗрчисем.
Пӑлхавлӑ вӑхӑтра та халӑхра
Пӗлӳçӗ йӑхӗ пынӑ ӗрчесех.

Мӗн чул ӑсчах ӳстернӗ Атӑлçи
Çемçе çаранлӑ анлӑ сӑпкинче.
Ӑс-хакӑла ытла та хапӑл çын
Пулать-и чунсӑр сӑвӑ пахчинче?

Таçтан, таçтан тухаççӗ вӗçтерсе
Пегас çинче мухтавлӑ этемсем —
Хӑйсен шӑписемпе килӗштерсе
Пурӑнайман телейлӗ сӑвӑçсем.

Кам асӑрханӑ урхамах вӑйне? —
Малти урисене кайрисенчен
Ирттерейсе чупма пултарнинче
Чӑваш курать ун пурӑнас кунне.

Çапла пурнать этемлӗх авалтан
Сулмаклӑ ӳсӗм чуппине кӗрсе.
Куратӑр-и? Саманаран малта
Утаççӗ пултаруллӑ шӑллӑрсем.

Ан тив, кунсем, çулсем те черетпе
Тумлаччӑр канлӗ манӑç тӗнчине,
Пӗлӳçӗсем, эсир çут çӑлтӑр пек, —
Сире курса тухатпӑр çул çине.

Эй, ăсчахсем, çулти калаçăва
Хавхалатса мĕн калăр, мĕн сăмах?
Истори тиесе тăран лава
Тапса туртать халь вăхăт-урхамах.

Çур шывĕ пек çырансăр юхакан
Çĕр çитмĕл çичĕ тĕрлĕ самана,
Шухăшласассăн, хурĕ мĕн хака
Ăспа, ĕçпе палăрайман çынна?

Шăпа çак вăхăта ваклană май
Тивĕçлипе валеçнĕ-и кун-çул? –
Кам пурăннă философ пек нумай,
Кам пурăннă поэт пек çирĕм çул.

Тем çухатни те пулнă хыçалта.
Тен, çав хĕсет хăш чух этем чунне?
Анчах трофейшăн çунакан салтак
Çитсе ÿкеймĕ çĕнтерÿ кунне...

Хальхаççăн çирĕпленнĕ йăлара:
Вак-тĕвексем ĕçлетпĕр вĕççĕрех.
Тÿрре тухасшăн калаçан вара,
Вак укçасем те кирлĕ кĕсйере...

Пуçăмăрта ăс-хакăл пур чухне
Хĕвел пĕлтерĕшлĕ ĕç пуçлама
Пирте вăй-хал та ĕнтĕ тем чухлех,
Хăюлăх, тен, çитмест ăрăвăма?

Çунатлă юрă, çивĕч ăс, тӳпе –
Çак пилшĕн тав атте-аннемĕре.
Вышкайсăр çитĕнĕвĕн çутипе
Kaçасчĕ çирĕм пĕрмĕш ĕмĕре.

Еплеваскать çак вăхăт-урхамах!
Карăнтарсан, кăрт пулчĕ тилхепе.
Элле ӳксе юлатпăр хамăрах
Kaç еннелле ӳкейнĕ мĕлке пек?

Пĕлӳçĕсем, эпир те ахрăм мар,
Килейменĕпĕр кайсассăн çаврăнса.
Малашлăх ачисемшĕн чĕр тымар
Пулса юлар... сасартăк чарăнса.

*1980 ç.*

## ПĔРРЕМĔШ ЮР КАÇĔ

Лăпкăн юр çурĕ, чӳхенчĕ
Çутă тĕнчемĕр хуллен.
Аслă тасалăх çĕкленчĕ
Çĕнĕ, хаваслă хĕлле.

Пĕтĕм суялăхăм çунчĕ,
Тĕрĕс марри — çук пачах.
Эпĕ унччен — çук чунччĕ,
Халь — тин çуралнă ача.

Янкăр кăвак тĕс витĕр
Тăсăлнă çутă тĕссем.
Шурă юр мар чӳхенет-тĕр —
Çĕн ĕмĕтсен мĕлкисем.

*1980 ç.*

* * *

Çаврӑнать пӗрремӗш юр тӑманӗ.
Юлашки çулçа вӗçтерчӗ çил.
Акӑ вӑл тӑнлав шуратаканӗ —
Шурӑ юр — çӗн çулӑн йыхравçи.

Эй васкать кун-çулӑмӑр пӗр вӗççӗр!
Эдуард[*] каларӗш, тӗппипе
Юратса та çывӑрса пӗтмесӗр
Çамрӑк вӑхӑт иртрӗ сиккипе.

Вӗлтӗртетрӗ çулçӑ, хавасланчӗ
Юлашки вӗçевӗн чиккинче...
Çаврӑн, çаврӑн, тахçанхи ман шанчӑк,
Çак пӗрремӗш юрӑн сӑпкинче

*1980 ç.*

[*] Эдуард Багрицкий.

* * *

*В. Федоров майлă*

Ĕçлейместĕп. Тунсăх муритлерĕ.
Те циссе туссем çав ман терте
Çул çине тухса çÿре кăшт терĕç,
Çул çинче вăл тунсăх йăлт иртет.

Акă эпĕ çул çинче, туссемĕр:
Патăрьел, Чурачăк та Канаш...
Çырас шухăш ун пулман ан тейĕр –
Аллăмра ман шĕвĕр кăранташ.

Çитмен вырăн хăварман та ĕнтĕ,
Пултăм ялăмра та çула май.
Улшăну кунта нумай иккен те,
Асилÿллĕ вырăн та нумай.

Шухăшсем, пулассипе çырлахăр,
Ан хускатăр иртнине питех...
Каялла килме те вăхăт, ахăр –
Тунсăхлаççĕ, тен, кĕтеç килте.

Шухăшлатăп, тусăмсем, мĕн-ма-ши
Тунсăх сирĕлмерĕ умăмран?
Иртнĕ кун калла таврăнманран-ши
Е çулсем калла çаврăннăран...

*1981 ç.*

## СĂРТ ÇИНЧЕ

Вăй-халлă сисĕм пур-ха халлĕхе.
Çак сăрт — çар пуçĕн вырăнĕ, туятăп:
Йĕритавралăхри илемлĕхе
Куçпа эп çавăрса тытса тăратăп.

Апла эп çĕнтерӳçĕ паянтан,
Апла Парнас çинче эп — савăк сăвăç.
Çĕнтерӳçе хĕç витмĕ нихăçан,
Поэт ĕçне яланлăх сума сăвĕç.

Эй, чăнлăхăм, ултав алăкĕнчен
Кĕрсе тухан та урăхла килетĕн:
Çак кăшăл пек хитрелĕх ункинчен
Тухаймăп хăтăлса эп ниепле те.

Апла çав çĕнтерӳçĕ тыткăнра,
Апла эп читлĕхе вĕреннĕ кайăк? —
Турилкке пек çавра уçланкăран
Пуянлăха епле илсе тухайăп?

Эй, тусăмсем! Пурнас чух савăнса
Кулянмалли те тупăнать арçыншăн:
Тăратăп халсăр кнеç пек шутласа —
Хитрелĕхĕн хуçи-ши эп, тарçи-ши?..

*1981 ç.*

## ÇĂВА ТУХНИ

Урпа акма та вăхăт çитрĕ ахăр:
Кӳпчекленсех пырать çырма-çатра,
Араб саспаллисем пек кукăр-макăр
Йĕрсем хăварнă ăмансем садра.

Таçта йăвашшăн аслати кĕрлерĕ...
Ачалăха аса илсе пĕрре
Выртса йăваланар-и, вĕçтерер-и
Çул иртнĕçем чĕрре кĕрен чире.

Çăва тухса та кайрăмăр — сисмерĕм.
Пульницăран тин тухнă пек киле,
Ан тив, сар чечекпе ешертĕр эрĕм —
Пурне те лăпкăн ачашлас килет.

Иртейнĕ асапсемшĕн халь — телейĕ.
Тĕнче анчах тĕк тăтăр, ерипе.
Такмакласа сăвай çапатпăр тейĕн,
Ĕçлес килет çак пурнăç юррипе.

Çынна тĕлĕнтермелĕх çук хăватăм,
Кайса ӳкмелĕх ĕç те тăвайман,
Унта-и пурнăç тупсăмĕ? Ав, ватă
Картиш шăлать, çĕре йĕрлет ăман.

Çерçи вăл шăпчăк мар, ача та чухлĕ,
Анчах та чухăн унсăрăн тĕнче.

Кама мĕн чухлĕ панă, çавăн чухлĕ
Сумпа ларар кунçул кĕрекинче.

Мĕскершĕн кĕвĕçес? Калам сăнарлăн:
Никам та çырмĕ ман сăввăмсене.
Апла пулсан, кам тăхăнĕ ман тарлă,
Ман пĕчĕкçеççĕ лавр кăшăлне?

Виçесĕр тĕнчере пур япалан та
Хăй вырăнĕ, хăй вăхăчĕ иккен.
Çерем çинче выртса эп йăвалантăм:
Сыв пултăр хăй хакне ĕненекен,
Хăй вырăнне тӳре пек пĕлекен.

*1981 ç.*

## КАÇАЛĂК

*Каçалăк тухас чух юлашки ывăçпа путене тытăнать, теççĕ. Кам çав путенене тытать, вăл телейлĕ пулать.*

Халăх сăмахĕ

Хĕвел те тухман-ха Хырай хыçĕнчен,
Саркайăк анчах сас парать хушăран.
Ыраш пуссипе сивĕ сывлăм çинче
Пыратпăр эпир васкаса çаруран.

Кашнийĕн пуçне виçĕ утăм виççе,
Анне чик сукмакĕ тухать таптаса.
Вара, сарă тăм кăкшăмран шыв ĕçсе,
Каçалăк пуçлать, пучаха чуптуса.

Эпир, шкул çулне те çитмен ачасем,
Ĕçе хăнăхса ӳснĕ мĕн пĕчĕкрен:
Кашни ывăçпа малалла куçнăçем
Вырма тăрăшатпăр тасан та тĕпрен.

Выртаççĕ куçа илĕртсе вĕççĕрех
Майра кӳлепи пек ыраш кĕлтисем.
Ӳксе пуççапмалăх пурах çав Çĕре —
Кăçал пушă пулмĕç ампар-кĕлетсем.

Каçпа та ирпе тĕрлĕрен кăмăлпа
Ыраш пуссипе эп мĕн чухлĕ утман!
Пиçен хупласа илнĕ кив хăмăлпа
Мĕн чухлĕ тата урана амантман?

Хĕвел тахçанах аннă Шетмĕ енне.
Каç сулхăнĕнче кăшт ĕçлер-ха тесе
Хăй ывăннине палăртмасăр анне
Пиреваскатать илĕртсе, хистесе:

«Паян тумасан паянхи кун ĕçне,
Усал тĕлĕксем курăн эсĕ ирччен.
Тухасчĕ паян çак каçалăк вĕçне
Çурла тӳртĕшсем курăнми пуличчен.

Пĕлтик путене сар телей, тет, иккен,
Ик ывăçупа, ыльăм, тыт эс ăна».
Вара вылятап аллăма килекен
Ятран илсе панă çап-çут çурлана.

Каçалăк вĕçленчĕ, ăçта путени?
Ăçта вăл, ăçта мана пӳрнĕ телей?
Ялан ĕç кăна-и килет ман тĕле,
Е тĕрĕс те мар халăх тĕрĕс тени?

Е эпĕ вĕçертрĕм ăна, е вăл çук?..
Анне, шахвăртса: «Тепринче тытăн», — тет.
Çапах та каçпа килелле кайнă чух
Каçалăк пĕтнишĕн ман чун хĕпĕртет.

Эй, пурнăç анийĕ, эпир халиччен
Мĕн чухлĕ вырман сан сап-сар тырруна!
Телейĕ вара пĕр каçалăкĕнчен
Куçать теприне, йыхăрать ырана.

Çапла пулмалла тен çак пурнăç йĕрки?
Çапла, — евитлет ăна сăвă йĕрки.

*1981 ç.*

## ЮМАН ВУТТИ

Юман вутти ҫунать кӑмакара
Епле вӑл хӗрхенмест хӑй хӗрӳне.
Куҫра выляв, ыр канлӗх шӑмшакра.
Тата мӗн кирлӗ-ха ҫулҫӳрене?

Кӑвак та симӗс, хӗрлӗ, сар тӗссем
Пире парать халь авалхи юман —
Ҫут тӗнчере нумай ҫулсем ӳссе
Тӗнче тӗсне илмесӗр вӑл юлман.

Тавлашнӑ вӑл шур юрлӑ тӑманпа
Кӗрешӳре тухасшӑн ҫиеле —
Сар ҫулӑм пӗккисем, тен, ҫавӑнпа
Пӑлхавлӑн хӑпараҫҫӗ ҫӳлелле.

Уяр кунсем-и тӑнӑ ҫунтарса?
Е муритленӗ-и йӗпе-сапа —
Пӗр витӗр хӗрелсе, пӗр хуралса
Юман вутти кӑвар шевле сапать.

Ларатӑп шухӑшра вут умӗнче:
Пирте мӗскер сыхланӗ иртнинчен?
Атте-анне йӑли-йӗркисенчен
Юлайӗ-ши чӑвашлӑх чунсенче?

Йӑлтах калла эп парӑп илнине,
Пӗр ҫын пулсан та туйтӑр ӑшшине.
Анчах хам пурӑннин хакне татни
Пурӑнни мар — кивҫен илсе пани.

Сахал илсен те памалла нумай.
Çапла анчах тĕнче утать мала.
Тавах, юман. Кунта эп çула май –
Кăшт ăшăнсан, каллех ман утмалла.

*1981 ç.*

* * *

Çула хĕл лайăх, тетĕп,
Хĕлле мухтап çăва.
Салху чухне кĕтетĕп
Хавас калаçăва.

Çумрах пулсан сăнамăп,
Хурланăп – çухатсан.
Пĕчченлĕх пулĕ тамăк,
Ялан пĕччен пулсан.

Ытла телейлĕ теççĕ
Кĕтме пĕлекенсем.
Анчах мĕн-ма йĕреççĕ
Кĕтсе илсен вĕсем?

Ниме те пăхăнмасăр
Ĕçле, юлташ, ĕçле.
Хирĕçлине пăхмасăр
Пĕр пулĕ хирĕçлев.

*1981 ç.*

* * *

Каçар, каçар. Çавна эп пĕлеймерĕм:
Çут çăлтăрла, таса шур çурталла
Çĕрле кăна çутатмалла пуль терĕм –
Тăр-кăнтăрла та мĕн çутатмалла.

Тен, тепĕр чух сăмахăма тытмарăм,
Тӳрккес те пултăм-и тен тепĕр чух?..
Анчах чуна сутмарăм эпĕ, арăм,
Ун пек йăла ăратнере те çук.

Туспа эп тус, тăван эп хам тăваншăн, –
Кашни хăйсен вырăнĕнче вĕсем.
Эс ăшă, ăшă кил хĕвелĕ маншăн,
Эс ман çырас хĕрӳллĕ сăвăсем.

Эс пулмасан çумра, мĕне пĕлтерĕ
Чап, пурлăх, хаклă шурă кĕленче.
Эс пулмасан, мана татса пĕтерĕ
Ытла хаяр, ытла хитре тĕнче.

Сар ылтăн сулă – çамрăклăх ытамĕ
Епле илемлетет аллусене.
Юр лекнĕ пуçăма пырса таям-и
Кĕрен чечеклĕ минтерӳ çине...

*1981 ç.*

* * *

Çу вĕçленчĕ, кĕркунне пуçланчĕ, —
Сисеймерĕм эпĕ чиккине.
Чăнахах та, кам ăна ăнланчĕ,
«Чи хакли яш ĕмĕр иккенне».

Çĕн куна кĕтсе илет те ĕмĕт,
Асилӳ яланлăх ăсатать.
Те юхать çут уйăх, те шур пĕлĕт?
Ĕнтĕ тем каять те тем юлать...

Витĕр хĕрлĕ палана та авă
Юмăç пек куратпăр витĕрех.
Йӳçĕ пултăр — пурпĕрех таса вăл,
Йӳçĕ пултăр — усăллă пĕрех.

Шур çурта лап сӳннĕ пек сасартăк
Чун кĕртен хавхалану пĕтсен,
Малалла чĕнейччĕр татăк-татăк
Пĕчĕк ялавсем пек ĕмĕтсем.

Тунсăхпа тусан пулатпăр, тусăм,
Хуйхăрса хуратăпăр сăна,
Мĕн калам-ши лайăххи пĕр усăм,
Мĕн сĕнем-ши, тантăшăм, сана?

Тепĕр чух туссем те манса кайĕç,
Тепĕр чух пулан-и çын хурри —
Илеме савма манса ан кай эс,
Пĕртăван, теç, илемпе ырри.

Ыратсан та эс шӳтле, юлташăм, —
Кĕвĕççе тăрайччăр пĕлĕшсем.
Такăнса ан тăтăр юрă-ташă,
Сар кĕпе юхайтăр вĕлкĕшсе.

Унчченхи пек Атăлăн хумханччăр
Чăнкă кăкăр евĕр хумĕсем.
Чунсене савни пек çупăрлаччăр
«Шупашкарăн лăпкă каçĕсем».

Унччэнхи пек çавтăнса тухар-и
Пĕвеленĕ Атăл хĕррине.
Çĕнĕлле ура тапса юрлар-и —
Пӳлейми чун-кăмăл юррине.

Çул иртсен те, чунупа ан улшăн:
Савăнса çӳре те, савнă тус,
Ыранхи телейшĕн, тепĕр çулшăн
Атăла пăрах эс пилĕк пус.

Эс мĕнле те — эпĕ улшăнаймăп:
Вĕçертмесĕр йывăç карлăка
Куç хупса пусатăп эпĕ хамăн
Илĕртӳллĕ паллăмарлăха.

*1981 ç.*

* * *

Çăтмах çинчи пек шухăшсăр ачалăх,
Тĕтре пек сирĕлсе пĕтичченех —
Кам хушнипе? — касса уçатăп алăк,
Хаяр та илĕртуллĕ тĕнчене.

Хăй йăвинчен тухса ӳкейнĕ кайăк
Çапла туять-ши çĕмĕрт айĕнче? —
Пĕрре — ытарайми хитре те лайăх,
Тепре — хыпса çăтас пек çут тĕнче.

Анне чĕрçиййĕ мар иккен тавралăх,
Атте пек тимлĕ мар иккен çынсем.
Умра — упа каçман çырма-çатралăх,
Çумра — пĕр палламан çулçӳренсем.

Пулни-иртни пуçтарăннă каçалăк.
Малта мĕн пулĕ, ахăрсамана.
Малашлăха, ытарайми ачалăх,
Йăлтах, йăлтах парса ан яр мана.

*1981 ç.*

* * *

Ёҫченлĕх, тирпейлĕх, сăпайлăх.
Ҫак виҫĕ тĕп никĕс ҫинче
Хисеплĕн тăрать манăн халăх
Ытти халăхсем хушшинче.

Кĕрнеклĕ, мухтавлă хĕр-ывăл
Ёҫрен писмесессĕн, вара
Татса татăлми эпир сывă
Салтса салтайми сыпăра.

Хăй евĕр хитре тăван енĕм,
Йăмралăхăн сиплĕ шăрши.
Ёҫченлĕх пире парнеленĕ
Йăва пек типтерлĕ Ҫĕршыв.

Ăна упрамашкăн тирпейлĕх
Пилленĕ маттур халăха.
Тирпейлĕ пулать-и тӳр пилĕк?
Пĕлет-и тытма пурлăха?

Сана ҫын тесе кам хисеплĕ
Хăвна хисепе хумасан?
Тăван сăмаху сан сипетлĕ,
Юрру ҫăл юррийĕ пек сан.

Ăс-хакăл, пӳ-си те пит лайăх,
Чыс – космос таран, тӳперен.
Пур чух килĕшет вăл сăпайлăх,
Ҫук чух та вăл кирлĕ пире.

Хăна-мĕн килсессĕн, чăвашшăн
Уяв çитнĕнех темелле:
Юрлать тайăлса вăл тăваншăн:
«Çукки — çурмалла, пур — пĕрле».

Мĕн чухлĕ хăватлă çĕн туртăм,
Мĕн чухлĕ вăй-хал халăхра.
Чăвашăн пуласлăхне куртăм
Союзăмăрта — туслăхра.

Сăпайлăх, тирпейлĕх, ĕçченлĕх.
Тата мĕн сĕнес халăха?
Тĕреклĕ çак виçĕ кĕтеслĕх
Упратăр талантлă йăха.

*1982 ç.*

## ÇУЛÇӲРЕНСЕМ

Кивçен илсессĕн, памаллах, пĕлетпĕр.
Килтен кайсан, килех-мĕн килмелле.
Çулçӳренсем, çак тĕнчене килетпĕр
Телей те ырлăх шырама элле?

Телей тени... Эй, ватăсем, тархасшăн,
Каçарăр та, калаймăр вăл мĕнне.
Ача, те ăнкарсах, куçпа курасшăн
Кайăкне мар — ун савăк çеммине.

Пуçлатпăр пурăнма ансат та ассăр,
Вĕçне тухатпăр ăс пухса çитсен.
Кам пурнăçĕ пĕр шухăша каймасăр,
Пĕр шутламасăр иртнĕ халиччен?

Лавккасене укçасăр кĕнĕ евĕр,
Талантсăрах кĕретпĕр тĕнчене.
Хăçан татса пĕтерĕпĕр? — Çак ĕмĕр
Пире мĕн чухлĕ кĕртнĕ кивçене.

Этемĕн ун нихçан та кăмăл тулмĕ:
Ик ĕмĕр пурнасла илет, тиркет.
Тав куркине алран ярасшăн пулмĕ,
Анчах çул куркине ĕçмех лекет.

Мĕскер яланлăх тĕнчере, мĕн капăр,
Мĕн ĕмĕр кивелми юлать ларса?

Çулçӳренсем, киле ак таврăнатпăр
Калла çулта та савнăç шыраса.

Пиртен килмест тĕнче йĕркийĕ-карчĕ,
Каяс чухне мĕскер-ши хăварам?
Усалсене усаллăх парас марччĕ,
Çынна телей хăй шырĕччĕ вара.

Пĕлетĕп эп, салхулăха сивлеççĕ,
Савăнăçа саваççĕ ĕмĕртен,
Анчах та чăнлăха чунпах сисеççĕ.
Туссем, туссем! Кăшт шутласа илсен,
Çак сăвăшăн мана каçарăр, тен...

*1982 ç.*

# ЧЎРЕЧЕ ÇИНЧИ ХĔЛ ЭРЕШĔСЕМ

Йăмрасем шап-шурă пас тăкаççĕ,
Кĕмĕл уйăх сарнă çунатне.
Калăн, юмахри Диканька каçĕ
Аннă Аслă Арапуç садне.

Шухăшра кăна вĕçсе çитейĕн
Ĕлĕкхи ытарлă кун умне.
Шур илсе, тен, суккăрланнă тейĕн
Хурал пўрчĕ кантăкĕн куçне.

Темиçе мĕльюн çулхи аваллăх
Лăпсăркка упасарри пулса
Чул çинчи хитре гравюра майлăн
Кĕленче çине ўкет шурса.

Ак ăçта вăл кивĕ мезолитăн
Сăнĕ-ĕмĕлки шуса иртет.
Иртнĕ вăхăт, чухласа эс илтĕн,
Çапăнса, юлайнă вăл пиртех.

Кăткăс япалашăн тĕлĕнетĕн,
Савăнан ансатшăн темĕн чул.
Тен, этемлĕх аталанăвне те
Кĕскетсе утса эп тухнă пуль?

Авалран кунта çитсе ўкме-мĕн
Чăнлăх илнĕ юмахран тумне.
Эй, мĕн чухлĕ вăрттăнлăх тĕнчемĕн —
Тупайса пĕтер-ха тупсăмне.

*1982 ç.*

* * *

Çулçӳрекен хӑрать-и сӗм-çӗрле?
Чикан лаша илет-и тӳлесе?..
Ахах пухмашкӑн чӑмрӑм пуçхӗрлех
Хӑватлӑ та асамлӑ тинӗсе.

Кунта пачах та урӑхла çӗршыв,
Кунта, тен, пӗтӗмпех суя тӗнче? —
Мӗскершӗн сарӑ çавӑ тӗссӗр шыв
Куçа уçсассӑн тинӗс тӗпӗнче?

Телей ванчӑкӗсем пек ялтраса
Выртаççӗ ахахсем унта-кунта.
Мехел çитсессӗн — пурнӑп савӑнсах,
Меслет пулсассӑн — юлӑп çавӑнтах.

Ӗненмелле-ши çак ӑраскала?
Ак ывӑçӑм тулли ахах, мерчен.
Анчах епле ишсе тухам калла
Пӗр çаврӑм юлнӑ сывлӑш пӗтиччен...

*1982 ç.*

* * *

Каллех эп сан ытамунта,
Кивелнĕ садăм, савнă садăм.
Телейлĕ пулнă вырăнта
Каллех эп шухăшлăн сывлатăп.

Ун чух сар çӳçĕме тивсе
Май çилĕ выляса иртетчĕ,
Улмуççисен тураттисем
Шап-шур сулмаклă чечекреччĕ.

Çĕмрен пекехчĕ ĕмĕтсем,
Таса та çылăхсăрччĕ ятăм.
Пĕр юрă çаврăмне кĕтсе
Теприн çинчен манса каяттăм.

Сире-сире çав кунсене
Нумай-и ылтăн вăхăт иртрĕ?
Паян хăшпĕр ĕмĕтсене —
Вĕçмен хăлат чĕпписене —
Кунтах тупса пӳспе эп витрĕм.

*1982 ç.*

* * *

Çĕр — чăнлăх калăпĕ те, ун виçи те, —
Çапла каланă халăх ĕмĕртен.
Хура Çĕртен пылакĕ те, йӳççи те,
Çич тĕслĕ чĕр чечек хура Çĕртен.

Сан тупсăмна тупасшăн çĕр çĕрлерĕм,
Эй, Çĕр-анне, эй, пурăнăç чĕрки.
Сан кăкăрна чечексемпе тĕрлерĕ
Асамлă йĕп пек çутă пайăрки.

Илтетĕр-и? — çав чечексем юрлаççĕ
Илемлĕ, çичĕ тĕрлĕ сасăпа...
Хĕвел ятне хăватлă гимн хураççĕ,
Çĕр ячĕпе тăваççĕ, тен, тупа...

Илемлĕхе илемлĕхпе виçер-и,
Чĕрĕлĕхе чĕрĕлĕхпе виçер.
Хĕвелĕмĕр, эс аслăрах-и, Çĕр-и?
Хĕвелĕмер, эс хаклăрах е Çĕр?

Ахаль-и çĕр çыртса тупа тăватпăр
Этем чысне юнпа сыхлас чухне?
Ахаль-и Хĕвеле пăхса калатпăр
Салтакăн тӳрĕ, чăнлăх сăмахне?

Ача пек киленсе сĕткен ĕметпĕр
Юратнă Çĕр-анне кăкăрĕнчен,
Хăват илсе çич тĕслĕн ешеретпĕр
Хĕвеллĕ самана ытамĕнче.

Апла епле тав тумăн тараватшăн
Хура çĕре — ырми аннемĕре,
Апла епле тав тумăн вăй-хăватшăн
Саманана, хĕвеллĕ ĕмĕре —
Атте пек çитĕнтернĕшĕн пире.

*1982 ç.*

## СĂВĂ ЙĔРКИНЧИ ПАЛЛĂСЕМ

«Ялав» ани пек хĕсĕк мар вăл пурнăç, —
Мĕскер çырни йăлтах пичетленет.
Пĕр шутласассăн, ĕнтĕ тем те курнă,
Малашĕ, ав, татах курма чĕнет.

Хĕрӳ ĕçре те, савăк ĕçкĕре те
Эп юрăсем юрланă савăнма.
Халь ак ларсах ват çын пек тишкеретĕп
Паян кунччен хайланă сăввăма.

Йĕрке çине йĕрке. Вара тĕп шухăш
Вĕçленнĕ çыпăçуллă рифмăпа, —
Хăш чух çапла екки ярать-мĕн шухă
Хăй çулĕпе кăна çӳрен шăпа.

Чĕлхе çинче — калас текен сăмахăм,
Анчах çемме килмест, такăнтарать, —
Ытлаванах юртатчĕ-çке ку яхăн
Юпах тиха пек пурнăç — халь ... тăрать.

Вара хушма сӑмах илсе каланӑ
Çав çемӗрен тухса йӑнӑшасран, —
Хӑçан-ха вӑл? — пӗр тӗлсӗр утӑм тунӑ.
Е вӑл та кирлӗ-и? — каймасть асран.

Ыйту палли кунта, ав, хивреленнӗ, —
Тем паллӑ мар халхавлӑ мал енче.
Мӗн пулчӗ, тусӑм? — пурнӑçун йӗвенӗ
Алран ӳкмерӗ пуль те çул çинчех?..

Те шухӑшӑм пӗтмен? Ак виçӗ пӑнчӑ,
Те калама та ку юраманни...
Пӗтӗмӗшпе илсен, ман пурнӑç ӑнчӗ.
Çавна анчах кӗртет «Ялав» ани.

Такмак çырма та хӑй йӗркийӗ пур-тӑр:
Çемми, састашӗ, тӗрлӗ паллӑсем...
Пурнас кунра мӗн пулмаллийӗ пултӑр,
Пӗрмайлӑн шӗкӗлченччӗр сӑвӑсем.

*1982 ç.*

## УТĂ ÇИНЧЕ

Çуллахи кун хаклă:
Иртенпех хĕрсе,
Ыткăнса сулмаклăн
Ут çулаç хĕрсем.

Ĕнтĕ кассăн-кассăн
Йăванать паккус.
Ĕç ăнса пырсассăн,
Савăн, савнă тус.

Кăмăл — аслă улăх,
Савнăç — сăн-питре.
Кĕмĕл саслă кулă
Ăраснах хитре.

Сывлăм сирпĕнет те
Йĕпенет саппун.
Темшĕн çут хĕвел те
Çутăрах çак кун.

Вĕл! вĕçет саркайăк,
Вĕлт анать каллех.
Пурте питĕ лайăх,
Пурте йĕркеллех...

Çутă пулнипе-ши
Лап ӳкет мĕлке?
Савнăç хысĕпе-ши
Йăпшăнать инкек?

Ах, мĕн-ма текерлĕк
Вĕçсĕр ĕсĕклет?

Пĕр чăмать пуçхĕрлĕ,
Пĕр вĕçет пӳкле.

Çут тĕнче рехечĕ
Килмĕ ĕретрен:
Пĕрине — сехмечĕ,
Теприне — кĕтрет.

Хăшĕ, тен, суранлă
Савăк сăвăç пек,
Савăнма çуралнă
Ĕмĕр тăршшĕпех.

Хăшĕ — теветкеллĕ
Пулнăран-ши ку? —
Яланах инкеклĕ,
Яланах салху.

И паккус-паккусăн
Курăк йăванать.
Анчах мĕншĕн, тусăм,
Чунăм хурланать?

Чарăнать сасартăк
Шавлă ĕç чуппи:
Касăлнă чун-татăк —
Кайăкăн чĕппи.

Çавасем юрлаççĕ,
Пуçсене чиксе.
Тайăлса юлаççĕ
Хĕрлĕ чечексем.

*1983 ç.*

* * *

Шухăшсем — вĕри-вĕри хумсем
Çаврăнса тухаççĕ катаран.
Вак чулсем — чулланнă пулăмсем,
Эпĕ хам, тен, тутăхнă çыран...

Ай, паян çанталăкĕ тӳлек!
Хускатмасть хăва та çулçине.
Те хĕвел, те пĕр çавра телей
Ӳкнĕ тĕкĕр евĕр шыв çине.

Çывăраççĕ çилхемес хумсем.
Асилӳллĕ шухăш пĕртте çук.
Кам шутлатăр рехетри кунсем
Иртессе тĕнче тĕк тăнă чух.

Ах, тытса тăраймăп ывăçра
Сарă кайăк евĕр савнăçа —
Тăвăл тухрĕ, хум ак хăлаçран
Хăваларĕ кайрĕ канăça.

Хум çапать те çырă çырана
Шăпăрах вĕт-шакă тăкăнать.
Пирчесе çитмен чĕр сурана
Çăваймасть — ыраттарать кăна.

Шутлăр-ха, туссемĕр, хăвăрах:
Савăк кун нумай та пурăнмасть.
Сăлпăран кун, пĕр килсен вара,
Нихăçан иртессĕн туйăнмасть.

Ятсăр сăвăсем пек çак хумсем:
Пĕр пекех те, пурпĕр ăрасна.
Пĕрисем чун çӳллĕш, теприсем,
Хум пулсан та, темшĕн шыв кăна.

Тытăмĕ тĕнчемĕн – кам пĕлет? –
Тăвăлра е тăнăçра анчах.
Тăвăлра вăл пурнăç тет поэт,
Тăчă тăнăçра та, тет, ăсчах.

Тинĕс, тинĕс, канăçсăр шыва
Хăвалан пулсассăн та умран,
Мĕншĕн çак татми тавлашăва
Эс татса парасшăн ман чунра?..

*1983 ç.*

* * *

Кунсем те каҫсем шутласа
эс мĕн чухлĕ ан пурăн,
Пĕлсе пĕтереймĕн пĕрех савнăҫпа хĕн-хура.
Ав, ҫĕмĕрт ҫеҫки те,
шуратнă пир тейĕн, шап-шурă,
Анчах ҫырлисем, ҫырлисем
мĕншĕн йĕпкĕн хура?

Тĕнчемĕр — улшуҫ.
Ылмашаҫҫĕ ҫут тухăҫ, сив анăҫ.
Кам пулĕ тӳре? Улшăну саккунне пăхăнса
Паян тивĕҫпе килмелле пек
шур ҫĕмĕртлĕ савнăҫ,
Анчах хура хуйăх хурах пек тухать шăвăнса.

Шап-шур ҫеҫкерен
шурă-шурă ҫырла, ай, пулмарĕ.
Епле, тутансан, вăл чĕлхе-ҫăвара типĕтет.
Эй, хуйăх,
эс сивĕннĕ савăнăҫ пулăмĕ мар-и? —
Сана астивсен, чун-чĕре хуралса пиҫĕхет.

Хура ҫĕмĕртрен
шур саппунлă ҫеҫке тухса ларĕ.
Ҫак мар-ши улшуҫăн тĕллевĕ тесе сĕмленен.
Эй, савăнăҫ,
эс хура хуйăхăн мăшăрĕ мар-и —

Чĕре суранне,
арăм пек, хăвшăнах, тен, сиплен.

Телей те инкек хушшинче
эс мĕн чухлĕ ан пурăн,
Пĕлсе пĕтереймĕн пĕрех савнăçпа хĕн-хура.
Ав, çĕмĕрт çеçки те,
шуратнă пир тейĕн, шап-шурă,
Анчах çырлисем, çырлисем
мĕншĕн йĕпкĕн хура?

*1983 ç.*

## ВОКЗАЛТА

Килеççĕ те каяççĕ – вокзалта
Ларса юлмасть ĕмĕрлĕхех никам та.
Ватти-вĕтти, хĕрарамĕ, салтак...
Пуриншĕн те вăл тарават та янтă.

Сăнассăм килмесен те куç курать:
Пĕри ялан паврать, теприйĕ чĕмсĕр.
Пĕри ытла та канăçлă – ларать,
Тепри кумать лара-тăра пĕлмесĕр.

Кам маларах каять, кам – каярах.
Кама мĕнле шăпаллă расписани.
Кам ларса çÿрĕ чаплă вакунра,
Кам ытларах пуçтарĕ çул тусанĕ.

Пĕлетпĕр: пурте, пурте çул çинче.
Шлагбаум антарман-ха, – пырăр, иртĕр.
Вокзал пек туйăнать çак çут тĕнче –
Кĕретпĕр те тухатпăр çех ун витĕр.

*1983 ç.*

* * *

Мала утмашкăн малаллах пăхатăн,
Пăхатăн хыçала та вĕçсĕрех.
Çын кунçулне сăнанă пек сăнатăн
Хăв утса тухнă кăткăс çул-йĕре.

Çак тӳпене çитме ансат çул пулнă —
Тумхахлă çул шыранă ман шăпа.
Телей патне çитме пĕр утăм юлнă —
Эп иртсе кайнă урăх сукмакпа.

Е тепĕр чух ак кирлĕ-кирлĕ маршăн
Хыпса çунни те пулнă пурнăçра.
Анчах, хама юратнипе те мар-ши? —
Чик юпине эп çухатман куçран.

Малашлăхпа тӳлетĕн те иртнишĕн
Сисмесĕр кĕскететĕн кунçула.
Пĕр çухату пĕр пĕчĕк çитĕнӳшĕн...
Аталану саккунĕ, тен, çапла?

Куратăр-и, епле ансат ман пурнăç
Хăна пулса кĕреп кашни куна.
Анчах малта те тӳрĕ çул, те пăрнăç,
Тен, утмалли те паяна кăна?

Çухалĕ пурнăç кăсăкĕ те маншăн,
Пĕлсе тăрсан кунçулăн еккине.
Пире уç картсемпе выляттарманшăн
Тавах тĕнчен хăй тĕрлĕ йĕркине.

*1983 ç.*

* * *

Поэт вăл чечек пек — нихçан ватăлмасть,
Поэт вăл чечек пек — хăрать.
Ан калăр ăна сивĕ кун сив сăмах,
Ан пулăр унпа пит кăра.

Ăна кӳрентерĕн эс çур сăмахпах,
Анчах шеллеме тăхтасам:
Поэт тарăхни сăввипе-ши тухать? —
Вăл ĕмĕрĕпех тап-таса.

Хитре сăвăпа шур чечек çурăлать,
Салху сăвăпа — хĕр чĕри.
Юратăр та савăр, хĕрсем, поэта
Çунса каймалла пек вĕри.

Поэзи — саркайăк вĕри вĕçевре,
Ик рифма — пĕр мăшăр çунат.
Телейсĕр пулма пултарать-и поэт?
Вăл хăй çут телей салатать.

Хура пĕлĕтпе хуралать-мĕн Пăла,
Хушка пĕлĕтпе çуталать.
Поэт чун-чĕри! Ак мĕскер улшăнмасть,
Ыттийĕ йăлтах улталать.

*1984ç.*

* * *

Çапла, хисепрен кăларсассăн, манаççĕ.
Истори иккен, çăмăл ăслă пике...
Шап-шурă чиркӳ – иртнĕ вăхăт мăнаçĕ,
Çавра ылтăн купол сар çарăк пекех.

Сӳре шăлĕ евĕр çырулла ун чанĕ
Чĕлхесĕр этем пек кама халь чĕнет?
Ăна тимлесе итлекен-тăнлаканĕ –
Ача пек пĕр айăпсăр куçлă инçет.

Хура чĕкеçсен урлă-пирлĕ вĕçевĕ
Сайра çапкаланă хӳме хушшинче
Хура киçтĕкпе чăр та чар туртнă евĕр
Тĕл-тĕл хуçăлать çунатсен вĕçĕнче.

Çулсем пусарса пĕчĕклетнĕ ват карчăк,
Инкек сусăрланă уксах та чăлах,
Сире килĕртен мĕн амакĕ кăларчĕ?
Е чунăр туртни, е йăпанчăк сăмах?

Алтарь умĕнче пуç пĕксе, пилĕк пуслăх
Çурта çутнипе сăхсăхса каç та ир
Элле чĕререн сăхакан пилĕк пуçлă
Çĕлен пек хуйха çĕнтересшĕн эсир?

Чӳклев йăлипе пуçласассăн та ĕçкĕ,
Чиркӳ йăлипе пуçтарсан та укçа,
Алай та пăлай телейсем хамăрпах-çке?!
Çӳреймĕпĕр çын умĕнче пуç ухса.

Кунта эсĕр пухăннă Çук шырама-тăр? —
Пурнан пурнăçра çитеймен çынлăха?
Анчах та ăна тупайсан та — тупатăр
Пĕрре калаçмалăх, ик-виç кунлăха.

Килти кучченеçĕн сăвапĕ те пур, тен? —
Сăйланăр пыл сĕрнĕ икерчĕсемпе.
Халь хуйхă сире танлаштарнă та — пурте
Çӳретĕр кăвик кăвакарчăнсем пек.

Телей вăл пĕччен çӳрекен япала-çке...
Пĕрре ăнсăртран пуç çине кăшт çусан,
Ăна та пĕр пек пайласа хумалла-çке
Уксах-чăлахсем хушшинче те пулсан.

Пурнан пурнăçра çитмесессĕн те кĕмĕл,
Чун канлĕхĕ çиттĕрччĕ хуть, иçмасса!
Иртет Аслă Вăхăт, юлать Кĕçĕн Кăмăл
Çынра çитеймен çынлăха шырасах...

*1984 ç.*

# ЧĔРКЕМ ÇИНЧЕ ТЕКЕХ ЛАРМАСТЬ САРКАЙĂК

I

Хитрелĕх умĕнче — хисеплĕ парăм.
Хитре юратăва, чăн, тивĕç эс.
Кайран мĕн пулĕ? — шутласа тăмарăм:
Тĕл пултăм та халь уйрăлас килмест.

Сăвва эс лайăх рифма пек кĕретĕн,
Çемми кăна кăштах хĕсет чуна.
Тунсăхлама пĕлнишĕнех пире, тен,
Шăпа хăй парнелет çак ыр куна.

Парне хакне пăхмаççĕ. Кирлĕ маршăн
Çапла хыпса эп çунăп-и вара?
Алла вĕрентеймен саркайăк мар-ши
Çемçен чĕвĕлтетсе ларать умра...

Парр! вĕçсе кайăн та — текех кураймăп,
Чĕркем çинче сана тытса лараймăп.

II

Телейлĕ чух телей çинчен шутламăн:
Кирлех-ши ик хĕвел чечек валли?
Ăсталăх çеç çитмест — чунра халь манăн
Мĕн чухлĕ сасă юрă тумалли.

Анчах телей ку вăхăтлăх, пĕлетĕп, –
Сан чĕрӳнте эп пĕр куна кăна.
Симпыллă кĕреке сыв пултăр тетĕп,
Тепре хăйса килем-и хăнана?

Пĕрпеклĕх çук. Шутлавлă ман ăса та
Сар çутă тивнĕ – хăварман пайран.
Паян хама савакана ăсатăп,
Кама кĕтсе эп илĕп-ши кайран?..

Парр! вĕçсе кайрăн та – тек кураймарăм,
Чĕркем çинче лартса савăнаймарăм.

III

Халь мĕншĕн ирĕк мар тахçан хам савнă
Пĕчченлĕхре? – Вăл маншăн халь инкек.
Иртсе кайсан ӳкет пуль çутă савнăç
Ура айне пĕр тĕссĕр тутăр пек.

Хĕвел анăçалла сулăннăçемĕн
Епле çак вăхăт васкама пуçлать.
Сана ăсатнă чух суйланнă çемĕ
Крещендо пек çӳлте, ак, хуçăлать.

Апла каллех хавхалану пĕтет те
Аманнă кăйкăр евĕр ӳкмелле?
Çухатнине ман тупмаллах, пĕлетĕп,
Ăсатнине кĕтсе ман илмелле.

Парр! вĕçсе кайрăн та текех килмерĕн,
Вĕçме сан хыççăн халăм çитеймерĕ.

IV

Çул уçăлать утакансем валли çеç,
Савсах савма пĕлекене сăвап.
Çак тивĕçе пăхса телей валеçĕç,
Хитре сăнпа та курăн эс асап.

Çур килтĕн те кĕркуннепе ăсантăн, —
Апла çул май эс кĕтĕн ман пата?
Анчах та пурнăçа епле пулсан та,
Çул майăн пурăнаймăн, тупата.

Тĕнче вăл аслă, енĕсем тăваттă,
Хăш еннелле çул тытăн-ши тата?..
Пĕрех сана ӳксе эп тав тăватăп
Хал панăшăн çырма çак сонета.

Пĕр вĕçсе кайрăн та тек кураймарăм,
Тăраниччен сана юратаймарăм.

V

Тул çутăлнă чухне ĕмĕтленеççĕ,
Аса илме пуçлаççĕ каç енне.
Хăçан-ха вăл? — илемлĕ, пĕчĕкçеççĕ
Аллусене чуптунăччĕ санне.

Сана эп шухăшра таçтах çитернĕ,
Халь хăвăнтан хитре вăл, çутăрах.
Çапла, тен, Рафаэль хăех ÿкернĕ
Хĕр умĕнче вăйран кайса тăрать.

Юратăвăн хăйне йĕркийĕ унăн:
Тутли те пур, йÿçси те тем чухлех.
Тĕл пулнă чух ытла хаваслă чунăм
Хĕссе килет уйрăлаяс чухне.

Чĕркем çинче текех лармасть саркайăк,
Кам айăплă? Камах татса калайĕ...

*1984 ç.*

## ГЕТЕ: МАРИЕНБАД ЭЛЕГИЙĔ

Эс тухрăн та, сарă хĕвелĕм,
Ман Мариенбадăм,
Мĕн чухлĕ çут çăлтăр
Сӳнсе ӳкрĕç-ши харăсах.
Ют çын пĕтевне пăхнă евĕр
Сана пăхса тăтăм,
Çунса каясран та
Тăмарăм питех хăраса.

Телей е инкек умăмра?
Ик çулăм, пĕр пуçăм.
Ейӳ янă туйăм хыçра та,
Умра – сĕм вăрман.
Мана хавшатса хăварасшăн
Эс килтĕн-ши, тусăм,
Е çамрăклăха ахрăм пек
Каялла таврăма?..

Усал ересрен урамра
Катăркас ӳстереççĕ,
Анчах утас çулăм
Мĕн-ма уйрăлайрĕ икке?
Хăшне ман суйлас? –
Ăна юмăçсем те пĕлмеççĕ,
Маттур ăсчахсем те
Канаш параймаççĕ иккен.

Сана хĕвĕмре хĕстерсе
Усраймастăп, хĕвелĕм, –
Эс, кăнтăр тĕлне çитнĕскер,

Çунтарăн та ярăн мана.
Анчах сан ăшшусăр
Йӳçсе хăпараймĕ кĕвелĕк,
Ейӳ туйăм чакĕ,
Çухатăп умри вăрмана.

Ун чух, тен, хитре сăвăсем
Хайлама та пăрахăп, –
Ялан вăйпитти
Никамах та юлман çĕр çинче.
Тен, тăрăп пĕр-пĕр кĕтесре
Хăрхăм евĕр хăраххăн,
Анчах халлĕхе эп пурнатăп
Чечек варринче.

Ан тив, ман малашлăх
Пуласлăхсăр, шанчăксăр пултăр,
Ют çын кураймасăр тăни
Ан хускаттăр чуна.
Паян саланас ярмăрккан та
Чĕл техĕмĕ пур-тăр:
Парнелĕх туяннă тавар
Çăмăллаттăр куна.

Тепре тĕл пулса калаçсассăн
Вара, тен, çитет те,
Вара, тен, лăпланăп тесе
Йăпататăп хама.
Мĕн-ма кун иртет те –
Çеçке пек типсе эп çитетĕп,
Мĕн ма каç иртет те –
Пуçлатăп эп тунсăхлама?

Мана шеллеме кирлĕ мар,
Тăхта, ан васка эс –
Поэт вăл чул палăк:
Хӳтлевсĕр, çапах кĕлмĕç мар.
Выртан шăрçана
Ман ура айĕнчен илсе кайĕç,
Çапах та мана
Çур хĕвел, çур телей кирлĕ мар.

Тĕнче йĕркисем пăхăнтарĕç
Вылявлă куна та, –
Ăна пуринчен те аван
Ăнланать пуль ăсчах.
Мĕн-ма юрату пăхăнмасть
Нимĕнле саккуна та? –
Килет те каять вăл,
Юлать чун суранĕ анчах.

*1984 ç.*

* * *

Лаптӑк та лаптӑк ӳсетчӗ улма,
Шурӑ чечекӗччӗ эпӗ.
Лаптӑк та лаптӑк килетчӗ ума,
Савӑнӑç — шурӑ тетте пек.

Хуйӑх та савӑнӑç пӗр шӑпарах...
Çул иртнӗçем пурнӑç терчӗ
Атӑл хӑвийӗ йӗпе-сапара
Пиçнӗн мана пиçӗхтерчӗ.

Çул вӗçӗнче хама хам суям мар:
Пур-и е çук-и çав турӑ, –
Пурпӗр, туссем, телей мар, телей мар –
Хуйӑх манран сӑвӑç турӗ.

Пурпӗр, туссем, сывлӑх-кӗрлӗх пур чух
Çав хуйӑха тав тӑвас кӑмӑл çук.

*1985 ç.*

* * *

Арпашать çут тĕнче: умăмра те тăшман,
Те çăлма тухакан хурăнташ-хунтăш ман...
Саккăрла явăнса çаврăнать çил-тăман,
Вăй та çук, май та çук ăна хирĕç тăма.

Урам урлă йĕркен выртса тухнă кĕртсем —
Картишне кĕреймен вилнĕ шурă хурсем.
...Тен, çапла ир енне майĕпен вăй пĕтсен,
Ӳкĕп те нихăçан та тăраймăп, туссем.

Саккăрла явăнса çаврăнан самана
Унчченхи çул çине кăларать-ши мана?
Шурă-шурă кĕртсем, вилнĕ шурă хурсем —
Сăввăма кĕреймен шурă шухăшăмсем...

*1985 ç.*

## ХУРА ВӐРМАН ÇИНЧЕ

Хура вӑрман çинче епле алхапӑл
Сиксе, сиксе куккукӗ авӑтать.
Те пурӑннӑ кунӑмсене шутлать вӑл,
Те пурӑнас кунӑмсене шутлать.

Ах, кайӑк тунсӑхӗ – ытла та çӑмӑл,
Ах, кайӑк савнӑçӗ – ытла таса...
Тӳре пек хӗрхенӳсӗр вӑхӑт-тӑвӑл
Мана та ёнтӗ кайӗ таптаса.

Çул хӗрринчи çеçкен тӑрса юласчӗ
Сиксе, сиксе иртен кунӑмсенчен.
Кив сӑввӑмсем патне ман таврӑнасчӗ,
Куккукӑм, сан çунаттусем çинче.

Пӳрне хуçса пырас – пӳрне çитеймӗ,
Ытла нумай, тен, авӑтан, куккук?
Пурнас кунра мӗн килӗ, мӗн килеймӗ –
Чикан та каласа параяс çук.

Ир еннелле тӗлленнӗ тӗлӗк пек-и
Е каç юрланӑ çаврӑм çемӗ пек? –
Чӑпар куккукӑн авӑк-авӑк тӗкӗ
Вӗçсе анать уçланкӑ çумӗпе...

*1985 ç.*

* * *

Тен, шухăшран эс чăмăртаннă пулĕ,
Çул çӳресе ĕшеннĕ, ырнă пĕлĕт?
Çил тустарать сана, çил пуçтарать,
Каллех таçта хăваласа ярать.

Çапла пĕччен эп тухиччен ăнран,
Ма çакăнса юлмарăм хурăнран?
Чĕнмест ыйткалакан пек тăлăх пĕлĕт.
Тен, шăплăхран вăл чăмăртаннă пулĕ...

*1985 ç.*

* * *

Санрав* та суккăр-мĕн усал шăпа —
Ни калаçма, ни ӳкĕте кĕртме.
Тăваттăлла ташланă ташăпа
Ăна эп пултараймăп илĕртме.

Инкек çине синкек илсе килсе
Сив кĕл сапсах тăрать ман пуç çине.
Элле пĕлмест вăл, ăссăр, эп вилсен,
Манпа пĕрлех çĕре кĕрессине?..

*1985 ç.*

---

* Санрав — хăлхасăр, илтмен çын.

* * *

Аннеçĕм пилĕ умĕнче шăпах
Хура юпа пулса тăрать шăпа:
Сиксе каçма пултараймарăм, — çук,
Çавра кайса эп тупаймарăм çул.

Çапах та çухатмарăм шанăçа, —
Тăванăмсем, ӳпкев ан тăвăрах:
Усал шăпа паман савăнăça
Шыратăп халь чун савнă сăвăра.

*1985 ç.*

* * *

Катăркаса силлет те çурçĕр çилĕ
Тĕкме хушшисене выртса улать.
Çĕкленчĕ юр хӳме пек çӳлĕ-çӳлĕ,
Хупларĕ, хуйăх пек, утас çула.

Пӳртре те тĕксĕмленчĕ, тăвăрланчĕ.
Уç чӳрече каррисене, аппа.
Хура куçсем шывланчĕç, чун хурланчĕ
Аса илсессĕн иртнĕ асапа.

*1985 ç.*

* * *

Хӑв шӑпуна хӑвах аван пӗлетӗн,
Шур юр пӗрчи — шур хӗлӗн пӗр чӗппи.
Пӗрех ман кантӑк умӗнче ҫӳретӗн,
Каллех вӗҫмешкӗн хӑтланан эппин?

Ах, мӗскӗн юр пӗрчи, ах, манӑн мӗскӗн,
Ӳкетӗн те выртан чӗп-чӗр сӑнпах.
Чун кӗртӗттӗм сана тепре вӗҫмешкӗн,
Вара эп хам та вӗҫӗттӗм санпа.

*1985 ҫ.*

* * *

Хула урамӗнчи вӗрене
Те пурӑнма кӑна вӗренет?
Вӗлтӗр кӑна вӗлтӗр вӑррине —
Сар ҫунатлӑ ылтӑн юррине
Ма вӗҫтерет сивӗ чул ҫине?
Ма пӑрахать таптав ҫул ҫине?

*1985 ҫ.*

* * *

Мана эс «авăнми тĕрек» сунатăн, –
Пĕлместĕн-им эс манăн инкеке?
Вĕçем тесессĕн – хуçăлнă çунатăм,
Тӳсем тесессĕн – вăйăм çук текех.

Вута вутпа сӳнтерейместĕн, тусăм,
Сиреймĕп тунсăхпа тунсăхăма.
Анчах мĕн-ма сан сăввуна пĕр хушă
Вуларăм та – пусартăм ăшăма.

*1985 ç.*

* * *

«Хисеп вăл лаша мар тытса тухма,
Тертпе пĕрле килет вăл – ан чӳкле».
Те ăслă пултăм эпĕ, те ухмах –
Çак сăмаха ĕнентĕм пĕчĕклех.

Тертлентĕм вăйăм-халăм пĕтиччен,
Çăпатана салтми те пуличчен.
Анчах килсе тухмарĕ ман тĕле
Çерçи сăмсиййĕ чухлĕ те телей.

*1985 ç.*

* * *

Çĕршер çулхи аваллăха
                    çунат çине илсе
Çăхан вĕçет, хура мĕлки –
                    ман хулпуççи çинче.
Мухтав утне тăварчĕ-шим? –
                    тăмасть вăл кĕçенсе,
Мĕлкен те йывăрăшĕ пур, –
                    каяймăп эп инçе.

Йывăрланса çитсен тумлам,
                    пусхĕрлĕ ÿкнĕ чух
Кăшт тăхтаса тăрать, аюк... –
                    чĕрвилĕм умĕнче.
Тумлам тумлать.
          Тен, ман куççуль? –
Никамăн та ĕç çук.
Пĕр пăлханмасăр йышăнать
                    улшăнăва тĕнче.

*1985 ç.*

* * *

Çеçке те çыр курăкĕ пултăр
Çырма хĕрринчи улăхра.
Çынра вара çынлăхĕ пултăр, —
Мĕн кирлĕ тата урăхран?

Тӳре айăпланă çынна та
Ан касăр, ан таптăр тӳрех.
Хамра пуррине çех ыйтатăп:
Çынсем, пулăрсамăр сӳрек*.

*1985 ç.*

* * *

Çук, вăхăт мар-мĕн — улшăнать тĕнче.
Тăхта эс, ан васка, пăхса илсем:
Хура пĕлис пек хура çĕр çинче
Хура пилешĕн шурă çеçкисем.

Çук, вăхăт мар — ылмашăнать тĕнче,
Йăлт урăхла кунта, пăхса илсем:
Шур пӳс пек шурă-шурă юр çинче
Хура пилешĕн шăннă çырлисем.

*1985 ç.*

* Сӳрек (*авалхи сăмах*) — çынлăх.

* * *

*Г.И. Безрукова — хунтăшăма, тусăма*

Инкек çукки хăех телей теесçĕ.
Тен, тĕрĕс те çак ăслă сăмахсем...
Пурăнăçне çапла-шим ирттересçĕ
Сăпайлă, çырлахуллă ăсчахсем?

Инкек çукки хăех телей теесçĕ.
Телей çукки поэтшăн — чăн инкек.
Дум спиро сперо![*] ĕмĕт пĕчĕкçессĕ
Вут умĕнче вĕçен сар лĕпĕш пек...

*1985 ç.*

* * *

Шайлаштару йĕрки, тĕнчем, пур сан:
Тăкак мĕн чул — ун чухлĕ перекечĕ.
Çак пурăнăç палан çырли пулсан,
Поэзи — ун ÿсĕртекен шерпечĕ.

Хуйăхăма сиреп ăна сыпса,
Унра хальхаççăн çăлăнăç шыратăп.
Чиркÿ чанне тăваттăлла çапса
Янратнă пек, тăват йĕрке çыратăп.

*1985 ç.*

---

[*] Шухăшлама пултаракан çыннăн малашлăхĕ пур (*лат.*).

*   *   *

Хура каçра çуралнă çăлтăрсем
Тата хитре, тата ялтра иккен.
Халхавлă кун çуралнă сăвăсем
Ян хурçăран та тасарах иккен.

Суранлине хушман суран сунма.
Анчах ĕлĕкренех мĕн-ма, мĕн-ма
Чăн-чăн поэт шăпи пӳкле тухать?
...Е вăл ăна хăй шыраса тупать?..

*1985 ç.*

*   *   *

*Нестер Янкаса*

Юлашкинчен вилмеллипех амантăм.
Асаплă пулчĕ пурнăç, çул – инçе.
Алла çитичченех аван ăнлантăм:
Çитменлĕхĕм – çынна ĕненнинче.

Хăтар тертĕмсенчен часрах, мехелĕм,
Хĕрес çумне Пилат пек пăтала.
...Касса пăрахнă пуç пек чӳк хĕвелĕ,
Ав, кусса ӳкрĕ юнлă Атăла.

*1985 ç.*

* * *

*Хасан Туфана*

Шаккурӑн шап-шур урхамахӗ, тен, иртрӗ,
Ҫуна хыҫӗпе ҫил-тӑман кӑларса? —
Шуратнӑ хӳме пек ҫӗкленчӗ юр, витрӗ,
Утас ҫулӑма картласа хӑварса.

Кӗртсен ҫийӗпе саламат, тен, ташларӗ? —
Темле усал вӑй юпалать пек юра...
Тӗнче те мана хирӗҫле вӑй пуҫларӗ:
Тавралӑх шап-шур та — куҫра сӗм хура.

Шӑпамҫӑм, апла эс мана пӑхӑнтартӑн? —
Гипс хунӑн шуратрӑн поэтӑн сӑнне.
Анчах ҫич юта ахалех савӑнтартӑн:
Эп палӑк пулса тухӑп ҫут ҫуркунне!

*1985 ҫ.*

* * *

Пĕчĕкçеç пахча илемĕ —
Хĕрлĕ пурçăн мăкăнь,
Пурте лайăх чух çурта пек
Ан сӳнсем, ан тăкăн.

Пурăнма кăна пуçлать ав
Пур тавралăх сыввăн.
Анчах мĕншĕн çут куççуль пек
Туйăнчĕ çут сывлăм?

Аслă Атăл юхăмне те
Çавăрма пулать, тен,
Чуххăм пурнăç чуппине çех
Тавăрмашкăн çук, тен...

Вăхăт çитĕ те, ах, мăкăнь,
Тăкăнăн ак эс те.
Ман хăçан çитет черетĕм? —
Çавна çех пĕлместĕп.

*1985 ç.*

## АХРАТ ÇЫРМИ

Ахрат çырми пек умăмри малашлăх
Утмашкăн мар — пăхмашкăн юлчĕ-ши?..
Телейлĕ вăхăт — шухăшсăр ачалăх!
Е вăл та тĕлĕкре çех пулчĕ-ши?

Тăрна сассиллĕ илĕртӳллĕ улăх,
Çавра-çавра çавăрăнан çулсем...
Чуна уçса, тен, калаçаймăп урăх
Сирĕнпеле эп, шăнкăрти çăлсем.

Çурса пăрахнă çырусем пек тĕлсĕр
Вĕçеççĕ сарă-шурă лĕпĕшсем.
Пуçа ыраттарса тăраççĕ тĕссĕр,
Тĕллевсĕр татăк-татăк шухăшсем.

Тантăшăмсем, карталанса ан утăр,
Ан çупăр ала — аллăр ывăнать.
Эп ăнсăртран ӳкертĕм хура тутăр
Ташлас тесе куç хывнă вырăна...

*1985 ç.*

* * *

Ӳсес пулсан ӳсентӗран —
Сирсе тухать тӑва.
Хӑрас пулсан — тымар таран
Хӑрать вӑл, — мӗн тӑван?..

Шӑл ҫӗмӗрсе кӗрет телей
Пӗр килмеллех пулсан.
Ҫитет телей те ман тӗле
Пӗр ҫитмеллех пулсан.

Ҫулать пире, ҫулать «ҫава»,
Каю шӑтать ҫулсан.
Пурнасчӗ-ха, тӑван, ҫавах —
Пурнас кунсем пулсан.

*1985 ҫ.*

* * *

Хĕрлĕ пилеш лартрăм пӳрт умне
Усал-тĕсел килсе ермессе.
Улталантăм, тусăм, — алăк умне
Шăпа килчĕ инкек тиесе.

Йăли-йĕрки халĕ урăхла,
Пĕлсе пĕтереймĕн уçăмне.
Ĕнтĕ те хурлăха, те ырлăха
Хура пилеш лартрăм пӳрт умне.

Пурнăç ытлă-çитлĕ килнĕ чух
Çырлисене татма ан васка:
Хĕрлĕ пилеш йӳçĕ, ай, чăтма çук,
Хура пилеш ытла тăкăска...

*1985 ç.*

* * *

Ах, август уйăхĕ,
Вак çулçă хуйăхĕ,
Ман шухăш юлĕ-ши
Тĕнче пĕтсен?

Кунта юлсассăн та,
Унта кайсассăн та,
Поэт, çут уйăх пек,
Ытла пĕччен.

Этемĕн пурнăçĕ –
Пĕр ăншăрт пăрнăçĕ.
Хальччен мĕн ĕçлени
Харам, харам.

Те чиркĕве каям,
Те чикĕнме каям, –
Çунса тăран чуна
Пăрлантарам.

*1985 ç.*

## КĔВĔÇСЕ МАР КАЛАТĂП

Хапсăнса мар, кĕвĕçсе мар калатăп:
Хăшпĕр çынсен утас çул-йĕрĕсем
Тӳп-тӳрĕ те тумхахсăр. Тăвалла та
Çил юхăмне кĕрсе утаç вĕсем.

Кирлех-ши вăй хума? – кĕтсе тăраççĕ:
Телей хăех шăл çĕмĕрсе кĕрет...
Чечексене те çул май çех татаççĕ,
Яланлăх вырăн та – кĕрекере.

Телей лашисемпе чупаççĕ тейĕн
Çак пурнăçăн хитре катаччине.
Çул айккинчен эп пăрăнса иртейĕп –
Кансĕрлес мар вĕсен савăнăçне.

Кашнийĕн хайĕн çăлтăрĕ, пĕлетĕп.
Анчах пĕр Çĕр çинчех-çке çав çынсем.
Эп пур – кашни çитĕнĕве илетĕп
Салтак пек аманса, ӳксе, çĕнсе.

Парне пекех сайра телейĕм питĕ.
Анчах вăл пурнăç хаклăш, шутласан.
Телейлисем хăйсен телейĕпе те
Ман телее илеймĕç нихăçан.

*1985 ç.*

## АСИЛЎСЕМ

Ман ырӑ тусӑмсем — асилўсем,
Телейлӗ иртнӗ кунӑн мӗлкисем,
Эп аманса йывӑрланса ҫитсен,
Ҫулсен хуралнӑ чатӑрне сирсе

Мана каллех киле илсе каятӑр,
Каллех ачалӑха йӑтса тухатӑр,
Лӑпкатӑр, ачашлатӑр, йӑпататӑр,
Сурансене ҫуса ҫыхса яратӑр, —

Элле сыхласшӑн ман кунҫулӑма
Малашлӑхра каллех асап курма?

Ман ҫӑткӑн тӑшмансем — асилўсем,
Инкеклӗ иртнӗ кунӑн мӗлкисем,
Эп йӑл илсе ураланса ҫитсен,
Ҫулсен шуралнӑ чатӑрне сирсе,

Мана ҫичюталла илсе тухатӑр,
Каллех чӗр-тамӑка тӗртсе яратӑр,
Касатӑр та ваклатӑр, ҫунтаратӑр,
Суран ҫине тӑвар сапсах тӑратӑр, —

Элле варса илесшӗн пурнӑҫа?
Элле тўлевлӗ тунӑ савнӑҫа...

*1985 ҫ.*

* * *

Тинех улăштараймăн пурнăçа,
Вăл вуласа пĕтернĕ кĕнеке пек.
Хупатăп та тĕтреленен куçа
Мĕн пулнине аса илетĕп эпĕ.

Вĕçмесĕр пурнаять-и кайăк хур?
«Шарланкă тăраять-и шавламасăр?»
Вĕçме пĕлменшĕн хамăн айăп пур,
Пупле пĕлменшĕн пултăм пулĕ сусăр.

Теме ĕмĕтленсе те хапсăнса,
Эп пурăнма кăна хатĕрленеттĕм.
Элле çаплах пĕтернĕ пурăнса?
Элле малта йăсăрланать йӳç тĕтĕм?

Хăй паттăрне поэма вĕçĕнче
Поэт хăварнă пек пĕччен, хăраххăн,
Шăпа мана ик йӳплĕ çул çинче
Чи йывăр, тертлĕ вăхăтра пăрахрĕ.

*1985 ç.*

## КУКАÇИ ЮРРИСЕМ

I

Çĕр пĕрмеллĕ сăхман çĕлетрĕм,
Кĕрлĕ-çурлă уртса пĕтертĕм.
Атте-анне панă сывлăха
Пурăнма пĕлмесĕр кĕскетрĕм.

Çурма çула çитсе çул татрăм,
Çур тĕнчене умран çухатрăм.
Элле çапла майпен çул катăп,
Çут тĕнчене йăлтах çухатăп?

Эпĕ кунтан кайсан, тăвансем,
Юлайĕç-ши юррăм-сăввăмсем?
Е вĕсем те пĕтĕç сĕврĕлсе
Чĕлĕм тĕтĕмĕ пек сирĕлсе.

Тăхăнам-ха сарă кĕрĕке,
Сарă кĕве çисе яриччен.
Савса юлам савнă ирĕке
Хура çĕре кĕрсе выртиччен.

II

Шыва ӳкнĕ çунăк-турпассем
Юхăма та хирĕç юхас çук.
Вылянă та кулнă вăхăтсем
Нихăçан та калла килес çук.

Нушаллă кун иртĕ тееттĕм,
Пурăнма çех хатĕрленеттĕм.

Пурнăç иртнĕ иккен сиккипе,
Ларса йĕтĕм телей çуккипе.

Улăх тăрăх пăлан çулĕ пек
Мĕншĕнех те Пăла пăрăнать,
«Чипер арăм» касси çумĕпе
Çаврăм-çаврăм чупса çаврăнать?

Е вăл хăпараймасть тăвалла,
Е вăл сывпулашать манпала?..
Шыва çити хăва авăнать,
Çулçи айĕн куççуль тăкăнать.

III

Ырлăхпала хурлăх хушшинче
Йăнăшма та пулать хушшинчен.
Тĕрĕс пурăнтăм-ши, йăнăш-ши? –
Ял-йыш мĕн каласа юлĕ-ши?

Асапланса, çукран пур туса
Савăнăçа патăм çынсене.
Атте-анне пилне астуса
Çын хуйхине илтĕм хам çине.

Хисеп тесе хыпса çунмарăм,
Тус-тăвана чапшăн сутмарăм.
Чее çынсем хама сутрĕç те
Хăйсем валли ят-чап турĕç, тен...

Хурăнлăхпа хырлăх кутĕнче
Мĕншĕн курăк шăтать пĕр тĕслĕ...

Пур-и, çук-и çавă леш тĕнче? —
Унта анчах пулĕ тĕрĕслĕх.

IV

Хама юман-йывăç тееттĕм,
Нихăçан та ÿкмĕп тееттĕм.
Чăнкăлтатса тăран чун-чĕре
Тумлам чĕркĕмĕлтен тееттĕм.

Йĕп те йывăр теççĕ ывăнсан,
Йывăр пуль çав — йывăр çул пулсан.
Ывăнтăм пуль, тăван, ывăнтăм, —
Пĕчĕк хуйăхпах, ав, авăнтăм.

Апла эпĕ юман-йывăç мар,
Чĕрем чĕрĕ чĕркĕмĕлтен мар.
Мĕскер тăвăн пурнăç ăнмасан,
Пуçăмăрта телей пулмасан...

Хăйсен тĕнчи иккен çăлтăрсен:
Пĕри ÿксен, тепри хăпарать.
Çÿлти сарă хĕвел пĕр сÿнсен
Çак тĕнчене тăлăх хăварать.

V

Ик аллăрта икĕ ылтăн çĕрĕ.
Е татах та пур-и çĕррĕрсем?
Пĕр савнийĕр кÿршĕн сарă хĕрĕ,
Тепри — çумри ялăн хура хĕрĕ, —
Е татах та пур-и хĕрĕрсем?

Ылтăн-кĕмĕл çĕрĕ илеймерĕм,
Илем кӳреймерĕм пӳрнене.
Ик-виç савни туса çӳреймерĕм, —
Пĕр каласан — çӳрес темерĕм,
Саврăм пĕрне — Турă пӳрнине.

Шăрчануй перчетке тăхăнам-и,
Çăварнире çӳрем савăнса.
Савнă хĕрпе çуммăн эп утам-и,
Хапхи умне çити ăсатам-и, —
Ют ял каччи тăтăр ăмсанса.

Хура тупкă кĕрĕк, арки шурă,
Тутри илем кӳрет сăн-пите.
Сиртен телейлисем çукчĕ урăх,
Ма халь юрламастăр савăк юрă? —
Савнийĕрсем суйман пулĕ те?..

Юртать, юртать лаши, вĕтĕ çăлтăр
Ури айĕн пырать сапăнса.
Савас пулсан, туссем, хытă савăр,
Савас пулсан, туссем, пĕрне савăр, —
Тăванăрсем тăччăр савăнса.

VI

Тен, çапла, çĕр ишĕлсе ансассăн,
Пушă-пушă шăплăх пуçланать...
Сывлаcа илетĕп те эп ассăн,
Хура хуйăх иртнĕн туйăнать.

Сахал мар сана эп хуйăх кӳнĕ,
Сахал мар татман пуль ĕмĕтне.
Тĕнчере çук пысăк хуйăх кунĕ
Хуратса шуратрĕ сăн-питне.

Нихăçан та усалпа ан асăн,
Чунăмçăм, савниçĕм, эс мана.
Эп кайсан, сана аван пулсассăн,
Кайма хатĕр эпĕ паянах.

Эсĕ кăмăллана тунсăх сассăм
Аташса çӳретĕр ахрăмра.
Ыр кунсем Ырсем* пек таврăнсассăн,
Тепĕр хут çуралăп туххăмра.

...Тен, çапла, çĕр ишĕлсе ансассăн,
Пушă-пушă шăплăх пуçланать.
Сывласа илетĕн те эс ассăн,
Иртнĕ хуйăх вăрттăн таврăнать.

VII

И лапка та лапка юр çăвать,
Аппан пĕчĕк сатне шуратать.
Шур юр мар вĕлкĕшсе-мĕн анать —
Улмуççин шур çеçки тăкăнать.

И юртать те юртать тур лаши,
Юртса пынă чухнех такăнать.

* Ырсем — пирĕштисем, ангелсем.

Харпăр хăйĕн иртми хăй нуши —
Çеçке мар пуль, куççуль тăкăнать.

Ак каллех ăсататăн мана,
Чăтаймасăр çыртан тутуна.
Эс пĕлен, самани йывăр чух
Каялла эп часах килес çук.

Тухнă çулăм ытла та инçе,
Курасси, тен, нумай ун çинче.
Вăйăм çитĕ тӳсме вĕсене
Шанчăк чĕрĕ те сывă чухне.

Хура куç куççульпе сĕврĕлет,
Шур саппун майĕпен йĕпенет.
Уйрăлатпăр. Ан йĕр, ан çунсам...
Такăр çул, ырă вăхăт сунсам.

## VIII

Майпен çуна-çуна
Анать хĕвел.
Эпир каяс çула
Шур юр хĕвет.

Тĕнче тени пĕрре,
Çул ăрасна.
Пӳрмен иккен пире
Çут ăраскал.

Ĕнтĕ шур ут юртать,
Шур ут юртать.

Эп ăсансан юта
Юррăм юлать.

Савни, саппун çине
Чун йăпатма
Хĕл каçиччен тĕрле
Çак юррăма:

Майпен çуна-çуна
Сӳнет хĕвел.
Эпир каяс çула
Шур юр хĕвет...

*1985 ç.*

* * *

*Аттене асăнса*

Кўтнĕ чуна çутатса ăшăтасшăн
Татăк та татăк çунать тип кăвайт.
Çĕр тĕпĕнчи сасăпа чан çапсассăн,
Чул хĕреспе çĕкленет Бухенвальд.

Мĕншĕн паян уяртмарĕ çанталăк?
Вĕт çумăрпа татăлса вăл йĕрет.
Иртнĕ асап кунсене асăнмалăх
Палăк пек лартнă юпа пĕр ĕрет.

Кайăк вĕçсе иртеймен лагерь çийĕн,
Чунсăр чулсем те аманнă кунта.
Сўннĕ те сивĕннĕ вилĕм лаççийĕ
Халь те çунать пек пăхсан умăнта.

Гётепе Шиллер çĕрне чыссăрланă
Çынçиене, ахăр, çын çуратман.
Мĕншĕн, фашист, сана çын ятне панă?
Мĕншĕн сана тăруках çĕр çăтман!

Манăн аттем те çухалнă хыпарсăр.
Тен, Бухенвальд çăтса янă ăна?
Эй, тавăру, сан таса çулăмусăр
Эпĕ сиплеймĕп чунри сурана.

Халĕ манра — тĕрлĕ çыннăн асапĕ,
Куç умĕнче — вилтăпри те мăян.
Çын инкекне çывăх туйрăм та эпĕ
Савнă аттем çулне çитрĕм паян.

Çутă малашлăх ятне ĕмĕр-ĕмĕр
Пурăнăр, пурăнăр, иртнĕ кунсем.
Эй, ан çухалăр, маттур салтаксемĕр,
Лĕпĕш пулса вĕçсе иртĕр, чунсем.

Сирĕн суранăрсене çыхса ярăп
Атăл çинчи акăш тĕкĕпеле.
Кĕллĕ çĕре тĕрлесе эп хăварăп
Тухăç пек хĕрлĕ чечексемпеле.

Çук! Çынлăхран кăларан сĕм тискерлĕх
Ан килтĕрех пуç çине нихăçан.
Йĕтĕр ыр çын çухалнишĕн текерлĕк,
Вĕçтĕр тискер этем çийĕн çăхан.

Чĕрĕлĕх, ирĕклĕх, пурнăç кĕрлевĕ
Сăввăмсенче ĕмĕр тăтăр çунса.
Савнă аттем калайман сăмах евĕр
Тухчăр вĕри сăмахсем çапăнса.

*1985 ç., Бухенвальд*

* * *

Пĕр иртнĕ вăхăт çаврăнаймĕ урăх.
Шур юр кайсан, çанталăк ăшăтсан,
Ытла таса та симĕс-симĕс курăк
Кив çулçă айĕнчен тухать шăтса.

Чи илемли, чи çамрăкки çур кунĕ
Ылмашăнан кунсен ĕретĕнче.
Сыв пултăр çак аталану саккунĕ,
Хăй тĕллĕн улшăнса пыран тĕнче!

Кам алă пачĕ, кам, ав, алă сулчĕ, —
Çапла çанталăк вĕçсĕр тупăшать.
Пĕрре те тунсăх çукчĕ — кивĕ çулçă
Хускатрĕ те шуйхатрĕ шухăша.

Ан тарăх, ан шелле, ан çун, ан тăвăн —
Черет арпашăнман-ха пусĕпех.
Йĕрки çапла-çке пурнăçăн, мĕн тăвăн? —
Çул çитнĕ ватă кайĕ çулçă пек.

Пĕр иртнĕ вăхăт çаврăнаймĕ урăх —
Аттеçĕм сукка ĕнтĕ тахçанах.
Иртет иккен те ырлăх, иртмĕ хурлăх —
Тухса йĕретĕп вăрттăн пахчана.

Вĕсем туса ĕлкĕреймен уявăн
Пыл сăрине ĕçетпĕр ку таран.
Явса пĕтерейммен сӳсмен пăявĕ
Вĕçне тухман кунсем пек пăтара...

*1985 ç.*

## ВИКТОР ГЮГО ТУНСĂХĔ

Çĕршывăм!
Курайăп-ши сана эп урăхран?..
Йĕри-тавра хăватлă тинĕс, тинĕс, —
Ах, аякран пăхмашкăн çеç вăл тикĕс,
Ах, тикĕс мар, кунçул пек, çывăхран.

Таçтан килеç те пухăнса хумсем
Ура айнех чупа-чупа тухаççĕ, —
Хисеп ятне, тен, реверанс тăваççĕ?
Салам илсе килеççĕ, тен, вĕсем?

Çĕр аршăнлă утрав тыткăнĕнче
Çĕршыв тени халь уншăн çак-им ĕнтĕ?
Утравĕ чăн-чăнах акăлчансен те,
Анчах та Çурçĕр тинĕсĕ — тĕнчен.

Пăлхаварлă хушка хумсем çинче
Чарлан вĕçет çуйхавлăн, урлă-пирлĕ.
Çак пурнăçран ăна тата мĕн кирлĕ?
Çĕршывĕ унăн — ик çунаттинче.

Юрать-ха, кайăка вĕçме чарман,
Анчах çил хирĕç тепĕр чух ăна та.
Чарлан, чарлан! Эс канăçсăр ытла та,
Эс чун пулса вĕçместĕн-и, чарлан?..

*1985 ç.*

## ХАСАН ТУФАНА

*20 çула яхăн совет лагерĕнче*
*irrтернĕ тутар поэтне*

Пулнă, пулнă... Туфан, ун чухне
Тӳперен сăнчăрланă та çакнă
Магометăн çинçе уйăхне
Çурçĕрте вăранса эс пуççапнă.

Лăпланас тенĕ пулĕ, анчах
Асилӳ пек качаллă та çӳллĕ
Çурçĕр çăлтăрĕ — Тимĕр шалча*
Чĕрӳне тăрăнса ларнă пулĕ.

Эй, Туфан, эй, мухтавлă Туфан**!
Ярăм-ярăм сăвву сан кĕлленнĕ
Савнăçран çаврăнса вăл тухман —
Тăвăлпа тăвăлса тĕвĕленнĕ.

Вылянать хĕмлене-хĕмлене
Кевер чулăн сип-сивĕ кăварĕ.
Маларах вăл суран пулнине
Мансăр кам каласа-ши хăварĕ?

Пулнă, пулнă... Туфан, ун чухне,
Шатра питлĕ Сахья*** саламачĕ,
Выляна-выляна тем чухлех,
Ман чунра саккăрла йĕр хăварчĕ.

---

* Тутарсем çурçĕр çăлтăрне «Тимĕр шалча» теççĕ.
** Туфан — чăвашла «тăвăл».
*** Сахьянова — Атăл тăрăхĕнче репресси пуçлаканĕ.

Çут тĕнче – тăп-тăваткăл кĕтес,
Пур кĕтесĕ те – катăлнă кайрос.*
Тăвăл пек унта килтĕн те эс
Çуталан çăлтăр пек тухса кайрăн...

*1985 ç.*

* * *

Санран ман каçару ыйтмашкăн
Вăй-хал та, совеç те çитмест.
Ыйтсассăн та, таса юласшăн,
Мана нихçан каçармăн эс.

Эп айăплă. Тӳрре тухмастăп.
Хура хĕвел хăпариччен –
Мĕн пуласса курса тăрас-тăк! –
Çуралманни аванччĕ, тен...

Юлать-и парăмра хĕрарăм? –
Шухăшламан эп ун çинчен.
Анчах ма хуçăк йĕп курмарăм
Эс панă çăкăр таткинче?

Тата мĕн чухлĕ эпĕ утăп
Йăтса тур панă хĕресе:
Çын панă хамăн айăпа та,
Сан айăпна та çĕклесе?

*1985 ç.*

---

* Кайрос – телейлĕ шут.

* * *

Шур чечек — савнăçа, сар чечек — ултава,
Кăвакки тунсăха пуль тееççĕ.
Кĕренни — кĕтрете, çут хĕрли — мухтава,
Сенкерри синкере пуль тееççĕ.

Тĕлĕнме кирлĕ мар, савăнма кирлĕ мар, —
Тĕм-хура чечексем те эп курнă.
Суйласа вĕсене уйрăм-уйрăммăн мар —
Çыххипех парнелерĕ-çке пурнăç.

Парнене кăларса пăрахма йăла çук —
Юлтăрах ыранхи кун валли... калаçу.

*1985 ç.*

* * *

Ура айне ўксе чăлханчĕ касĕ,
Сўнет кĕрен чечеклĕ вĕлтĕрен.
Шур чечексем пуçне чиксе лараççĕ,
Шур тутăр çакнă тейĕн пĕкĕрен.

Мана ўкĕтлесе-ши ўхĕ йĕчĕ
Пăрах эс ĕненме çынна тесе.
Пĕрех эп утрăм, пуçтахскер, пĕр пĕчĕк
Ĕненĕве ялав пек çĕклесе!

*1985 ç.*

* * *

*«...йăнăш пулчĕ-шим ĕнтĕ?»*

Кĕçтентти Ивановăн вилес умĕнхи юлашки сăмахĕ

Хальччен тăрăшни, çунтарни чĕрене
Элле йăнăш пулчĕ, тăванăм?
Апла-тăк мĕскершĕн çак çут тĕнчене
Хăйса килмелле пулнă манăн...

Телейсĕр этем яланах ытлашши,
Ăна кĕлĕре те манаççĕ.
Мĕн-ма çĕр çинче эпĕ çеç ытлашши, —
Шăпа хăвалать пĕр мана çеç.

Юхать васкаса шăнкăр-шăнкăр Пăла,
Юхать те — юлать чĕлĕм чулĕ.
Чулпа чул çапса, типĕ ăвăпала
Чуна тивертсе янă пулĕ.

Хăçан эп ыр курнă, кала-ха, поэт,
Хăçан чĕптĕм савăнăç курнă?
Асаплăх иртет те, асаплăх килет, —
Çаплах иртсе кайĕ-шим пурнăç?..

Паян эп — тин çеç тĕрмерен тухнă пек:
Ни арăм, ни тăхăм, ни çуртăм.
Пушар хыççăнхи кăмрăка пăхнă пек
Хура чăнлăха эпĕ куртăм.

Мункун çывхарать улача кĕпепе.
Каллех улача кĕпепе-çке!
Ватта сулăнсассăн тĕне кĕнĕ пек
Йăлтах, йăлт мантартăрччĕ ĕçкĕ.

Пирус тĕтĕмпе курăни-курăнми
Те явăнчĕ măйкăч, те чĕнтĕр...
Тăванăм, тăванăм, хальччен пурăнни
Элле йăнăш пулчĕ-шим ĕнтĕ?

*1985 ç.*

## ВĂЙĂ УÇЛАНКИНЧЕ

Кунта эп халĕ тин — хăна кăна...
Мĕскер курма çавра уçланкăна
Кĕпĕрленсе тухаççĕ чечексем —
Пĕлĕтпеле вăрман хĕрачисем?

Астăвăмăр, ах тур, ытла кĕске, —
Ара, паян хĕвеллĕ çимĕк-çке!..
Вăй картине яш-кĕрĕм тухмалла,
Çут çăлтăр юррине юрламалла.

Куçран пăхать, пăхать кăвак çеçке,
Мана мĕскер каласшăн вăл, мĕскер?
Çур ахрăм пĕр каять те пĕр килет,
Ăна пĕччен итлетĕп эп — поэт.

Чун юхăмĕ пулса хускалнă çил
Уçса пăхать çăка çулçисене:
Мĕн каласа ытарлăн çырнă-ши
Чăваш шăпи пирки вĕсем çине?..

*1986 ç.*

* * *

Поэзире мĕскер тупса эп калăп
Нихçан никам та каламаннине?
Састаш валли те пур иккен кив калăп,
Тухма юрамĕ пĕртте айккине.

Йăлтах каланă: пурăнăç çинчен те,
Юратупа сар чечексем çинчен.
Хитре танлаштару тупаймăп ĕнтĕ
Тесе пăшăрханатăп халиччен.

Юпах Пегас юртса-ши такăрлатнă
Хĕвел ўкейнĕ сăвă уй-хирне.
Шăтать-и те шăтмасть-и? — вăрлăх акнă,
Шур хурăн лартнă лаптăк уй хĕрне.

Татсах кам калĕ: пурăнăç пĕр енĕ
Çап-çут, теприйĕ хуп-хура тесе?
Темиçе хут каланă сăмахсенĕн
Сĕтекĕ пур-и, сăвăç тетесем?

Поэзи вăйĕ пурнăçпа пĕр тан-тăр:
Чул шăтарса тухан ўсентăран
Сăмсийĕ евĕр çĕн сăнар тупан та
Ун умĕнче ăнтан кайса тăран.

Апла пĕтмен иккен-ха ман мехелĕм.
Ан тив, кашни кун мар та, хушăран
Ăсчах курмалăх, сăвăç кĕвĕçмелĕх
Çĕн сăнарпа танлаштару шырам.

*1986 ç.*

* * *

Левитан ӳкерчӗкне
Тăлпаланă пек
Пирӗн ял хурăнлăхне
Çил туларӗ тек.

Çутă кантăка юри
Çӗмӗрнӗн çапса
Сарă кайăкăн юрри
Ӳкрӗ вакланса.

Çитрӗ тейӗн ахăрса
Ахăрсамана —
Тутарла ура хурса
Ӳкерет мана.

Хаш сывланăн, виререн
Çил лăпланчӗ те,
Çумăр çурӗ витререн
Тăкнă пек-и тен...

*1986 ç.*

* * *

Хĕлле... Вĕлтĕртетсе анаççĕ
Юр пĕрчисем çине-çинех,
Катан пирпе витсе хураççĕ
Хура çырма хĕррисене.

Хĕлле. Ача-пăча анчах-и —
Мĕнпур тавралăх хĕпĕртет.
Савни сăмахĕ пек саламлăн
Чакак вĕл-вĕл вĕççе иртет.

Епле пулма пĕлет çанталăк!
Пăхса тăрсан вăрах-вăрах,
Тĕнче те аслăрах пек, кун та
Чӳклевлĕрех, тухатлăрах.

Тахçантанпах сывмар çынсем те
Паян сывлаççĕ çăмăлрах.
Ӳпкелешӳ те, кӳренӳ те
Тамалнă ĕнтĕ кăмăлра.

Хĕлле... Вĕр-çĕнĕрен çуралнăн
Туятăп эпĕ те хама.
Утма пуçланă пек, хăратăп
Вĕр-çĕнĕ шухăш калама.

*1986 ç.*

* * *

Ялан çапла: питех те кĕтнĕ чух
Кая юлса килет туссен канашĕ.
Кĕтсе илеймесессĕн, кӳтнĕ чун
Хавасланать пĕр палламан хăнашăн.

Мĕн-ма ялан кĕтетпĕр лайăха? —
Инкек килет те хуçăлать-çке кăмăл.
Кĕтсех, тен, тăмалла хуйха-суйха —
Вара ăна чăтса ирттерĕн çăмăл.

*1986 ç.*

* * *

*А.Г. Григорьев профессора*

Утмăл çулта утамана тухар-и —
Утмаçулта çул уçăлать кăна!
Ыталанса кĕтсе илме тухар-и
Тухатлă Тухăçран килес куна.

Пĕр аллуна кăпăкланан сăра тыт,
Тыт тепĕр аллуна таса эрех.
Тавсси, тăванăмсем, ĕçсе паратăп
Мĕн каласа юлсассăн та пĕрех.

Çамка çинчи пĕр-ик пĕрме мĕскер вăл!
Мĕскер вăл çырă çӳç кăвакарни!
Художник чунĕнче паян вылять ав
Шевлеллĕ, йĕс шăнкравлă çăварни.

Тĕссен янравĕ, сасăсен вĕçевĕ
Çавран-çавран ÿкет те пир çине
Чунра вара ялти пек ырă, евĕк,
Асилÿсем те çивĕч, вĕр-çĕнех.

Çапла иккен искусствăн вăйĕ-халĕ:
Инçи те çывăх, çывăххи – инçе.
Ан шырăр кĕтрете, кĕтрет вăл халĕ
Григорьевăн сăр киçтĕкĕ çинче!

Искусство пахчинче, ĕçтешĕм, эпĕ
Сан чухлĕ ÿстерейменĕп те улма,
Çапах философа поэт хисепĕ, –
Курнăçланмастăп, – ытлашши пулман.

Çакна кăна, çакна ĕмĕтленетĕп:
Сан пек пуласчĕ – сумлă та таркач.
Çул май кăна пурăнас марччĕ тетĕп
Кунсемĕр шутлине пĕле тăркач.

Художник ĕçĕ – ĕмĕрлĕх, пĕлетпĕр,
Ăсчах сăмахĕ – арчари укçа.
Çÿрер-и, Алексей Григорич, тепĕр
Çур ĕмĕр ытларах пуçа ухса!

*1986 ç.*

* * *

*Георгий Иванович Безрукова*
*Геннадий Александрович Петрова*

Ман пуç тăрринче аслати авăнса авăтсассăн,
Хĕçсем хуçăлса ӳкнĕ евĕр çут çиçĕм çиçсен,
Ача пек эп сан ытамна пырса ӳкрĕм, — тархасшăн,
Анне пек ăнлан та мана, уншăн ан çилленсем.

Сăваплă та Хĕрлĕ хула* халиччен эп курманччĕ:
Саламлă сăмах пек кунта витĕр хĕрлĕ пилеш.
Эп ун йӳççине кăшт тутантăм та — чунăм хурланчĕ,
Анчах вăл сипетлĕ çырла иккенне те пĕлес.

Рехмет те тавах — усалсен вăййине эс кĕмерĕн,
Йышран уйăрмарăн мана эс, усрав ывăлна.
Хура Атăл урлă хитре асаматăн кĕперĕ
Çĕкленчĕ те — патăн мана пĕр турам раскална.

Пĕлменччĕ: çăлсем Марире мариллех-çке юрлаççĕ,
Ай шăнкăр та шăнкăр çăл евĕр пуплет-çке мари.
Çак килĕшӳре, ахăртнех, сăвăçсем çуралаççĕ,
Çак килĕшӳре пурăнать-мĕн поэзи турри.

Пĕр евĕр шăпаллă çынсем пĕр-пĕрне сума сăвĕç,
Сăмахсăр ăнланĕç вĕсем пĕр-пĕрин туйăмне.
Эп, Çеçпĕл çĕршывĕн хĕрхӳ эмелне сыпнă сăвăç,
Виç çеçпĕл, ик эккĕл** хуратăп Чавайн умне.

---

* Йошкар-Ола — Хĕрлĕ хула тени пулать.
** Эккĕл — чечек ячĕ.

Тĕрленĕ кĕпер умĕнче чарăнатăп та акă
Улма та чăпар утăма эп ярап тăварса.
Тĕне кĕртнĕ пек чӳхесе кăларать те Кокшага
Тăшман туртса илнĕ вăя та парать таварса.

Мари-турекпе кӳршĕлле килекен Килемары,
Кунтан эп калла кайиччен çут Пăла хĕррине
Сире асăнмалăх çырса хăварма кирлĕ мар-и
Пĕр-икĕ çавра анатри чăвашсен юррине? –

Уртăш йывăççи, уртăш йывăççи
Туй пĕкки тума аванччĕ.
Ырă утсене ытла йывăр-шим? –
Хăмăт тивнипе аманчĕç...

*1987 ç.*

## САЛАМ, АРАПУÇ!

Çулсем урапа кустăрми пек пуçламăшсăр, вĕççĕр, —
Ура утнă чух каялла таврăнаççĕ пĕрех.
Салам, тăван енĕм! Сан çийĕн саркайăкăм вĕçтĕр:
Килетĕп киле, тăвансемĕр, тен, ĕмĕрлĕхех...

Салам, Арапуçăм, чи хаклă пĕр татăк çĕршывăм,
Аннем сывă чух тăван килĕм те пур ман, — тавах.
Суранлă пулсан та, куратăр-и? — сăввăм ман сывă,
Ютсем кĕвĕçме саплаштартăр вăл çухатăва.

Ăçта ĕлĕкхи тусăмсем? Тен, вĕсем те, мăнтарăн,
Манса кайрĕç пулĕ йăлтах çулçӳрен çăрхана.
Пăлаçăм, мана эсĕ çех юррунтан кăлармарăн, —
Каллех васкаса чупса тухрăн кĕтме ывăлна.

Пĕлетĕп, хăмла çырлисем иртерех хĕрелеççĕ
Йĕпхӳ çумăр хыççăн, хĕвел чуптуса иртнĕçем.
Анчах улăхри чечексем мĕншĕн хăвăрт ӳсеççĕ?
Тен, ман асилӳ ăшшине кăшт туяççĕ вĕсем...

Салху сăввăмсем çаврăнаççĕ ялан çичĕ çаврăм.
Элле çитмĕл çул пурăнатăп? Çапла пултăрах.
Тăван ялăма чирлесе ӳкиччен эпĕ саврăм,
Юратрăм, каçарăр та, Шупашкартан ытларах.

Çулсен вĕçĕ çуккă. Çулсем урапа кустăрми пек.
Ан çаврăнччăр — ывăнтăм эп ют çĕрте çӳресе.
Мана утьăкка сиктерсе вĕçтерейнĕ чĕрçи те,
Ман ĕмĕрлĕх çакнă сăпкам та, хура çĕр, эсех.

*1987 ç.*

## АСТĂВĂМ

I

Ир еннелле çил-тăман чарăнсан,
Каç Вăхăтран юлчĕ-ши татăлса? –
Кивĕ масар шурă пир пек тасан
Шăплăх çинче, ав, выртать тăсăлса.

Сарă çурта пек тăрать тирĕнсе
Тӳрĕ тирек пĕр чартак тĕлĕнче.
Шур хурăнсем, тунсăхпа пĕркенсе,
Тăлăх хĕрсем пек тăраç кĕрт çинче.

Эй, чĕркуçленĕр, çынсем, – çут тĕнче
Халь асăнать ырă несĕлсене.
Хаш сывласа асилӳ çутинче
Килччĕр вĕсем чĕрĕлсе çĕр çине.

Килччĕр те курччăр хальхи саманан
Савăнăçне те хуйхи-суйхине,
Шыв пек юхса-çухалса пыракан
Ырă аваллăх йăли-йĕркине.

II

Ун чух эп виç çулхи айван ачаччĕ.
Мĕскер ăнланнă-ши вăл пусăмра?
Анчах пичет çапса хăварнăн юлчĕ
Ĕмĕрлĕхех çав вăхăт асăмра.

Тĕнче вăрçи тин пĕтнĕччĕ, çапах та
Нуши пĕтсех пĕтменччĕ вăрçăпа.
Юмахсемпе эп çыврăрса кайсан та
Çĕрле сиксе тăраттăм выçăпа.

Те çил-тăман, те шур шуйттан асатчĕ –
Юр тултаратчĕ хӳмесем таран.
Вут-шанкине тупма ытла асапчĕ,
Сӳтсе илетчĕç вĕрлĕк картаран.

Ир еннелле кăшт уяртсан çанталăк,
Сăн палăрмалăх кăвак çут килсен,
Шăн кантăка вĕрсе пĕр пĕчĕк «алăк»
Уçатчĕç хăй çутмасăр аннесем:

Кам мăрйинчен йăсăрланать-ши тĕтĕм?
Вут амăш кам кăмакине савать?
Хивреленсе иртет те юр пĕр-пĕтĕм
Шухăшсене тӳреммĕн тĕв тăвать.

Кăвар илме васкамалла-çке. Сивĕ
Упаленсе кĕретчĕ кĕпĕрех.
Юратнă аттесем хăварнă кивĕ
Чаппан ăшăтаймастчĕ çав пире.

Кашни килтен, сăмахламасăр, харăс, –
Чунпа туйса-ши пĕрлĕх хăватне? –
Сукмак хывма тухатчĕ кӳрĕш-арăш
Пуссем патне те пĕр-пĕрин патне.

Эй, ирсерен йĕрленĕ урлă-пирлĕ
Чĕре тымарĕсем пек сукмаксем!

Пурăнăçа тытса тăран чи кирлĕ
Халал пулман-и эсĕр, çав кунсем?

Пире шур юр пек шухăш хуплаймарĕ.
Тăм чӳлмекри шар кăварпа пĕрле
Ун чух чун ăшшине çӳретнĕ мар-и
Сукмаксемпе утса килтен киле.

*1987 ç.*

* * *

Мана Митта тăванĕ теççĕ,
Çапла, Митта тăванĕ эп.
Анчах та пулнă-и илесшĕн
Ун ячĕпе хисеп эп чыс.

Эп хам поэт пулса çуралнă,
Ман хамăн тивĕçлĕ тӳпе.
Эсир вара йӳççе хăпарнă
Мухтавлă аçăр ячĕпе.

Поэзире ĕмпӳ пулас пек
Çӳретĕр тек вĕркĕшĕнсе,
Анчах та аллăрта турпас пек
Пĕр кĕнеке çеç, мĕскĕнсем.

Пиçен чиксе курман шуранкă
Эрне çуман урăрсемпе
Таптасшăн хăтланатăр акă
Поэт чунне хурахсемпе.

Мана Митта тăванĕ, теççĕ.
Тен, хăй килет вăл тăвана*.
Ун чысĕ мар — ун, мур илесшĕ,
Шăпи анчах лекет мана.

*1987 ç.*

## УЙĂП ЧУНĔ

Эпĕ çамрăк чухне
Пурччĕ çут çăлкуççем
Улăхра, сăвăра.
Мĕншĕн халĕ вĕсем
Шăтса юхнă куççем
Пулса юлчĕç вара?

Тĕкме çумĕн ӳксе
Тĕршĕнсе ӳсекен
Хĕрлĕ-хĕрлĕ чечек
Имлĕ-çамлă çисе
Асаппа вилекен
Уйăпсен чунĕ пек.

Ĕмĕрхи çут хĕвел,
Атăл урлă каçса,
Хупса анчĕ куна.
Урлă-пирлĕ вĕçсе,
Чарлатаç чĕкеççем
Чиркӳ çийĕн кăна.

---

* «Несĕлсен тымарĕнче» ăнлантарни пур.

Çухалаççĕ майпен
Хĕвеланăç енчен
Ӳкекен мĕлкесем.
Çухатаç техĕмне
Калас тенĕ чухне
Калайман сăмахсем.

Çентерӳçĕ çынсем,
Мĕншĕн мантăр эсир
Çылăх текеннине?
Ма кĕртмен халиччен
ÇЫНЛĂХА, ЧУНЛĂХА
«Хĕрлĕ кĕнекене»?!

*1987 ç.*

* * *

Халăхăм манăн, тен, тĕрĕс каланă:
«Пурнăç камит вăл» тесе?
Мĕн авалтан пĕри савăк вылянă,
Йĕнĕ тепри ӳлесе.

Халь вылякан çыннисем çавах мар-и?
Шилĕк[*] те — çавă тĕнчех.
Чăнлăх суеçĕ тумне пăрахмарĕ,
Кĕвĕçлĕх — хăй ролĕнчех.

Авă, ухмах ăслăрах курăнасшăн
Вĕççĕр ваклать сăмаха.
Авă, ăсчах пĕр шайра пурăнасшăн
Вĕçĕм перет ухмаха.

Çимĕк çитсен, йĕркешер-йĕркешерĕн
Хуçнă черчен хурăна.
Ман, камитле выляма пĕлменскерĕн,
Манăн мĕнле пурăнас...

*1987 ç.*

---

[*] Шилĕк — сцена.

* * *

Шăпамçăм чăркăш поэтпа пĕрех:
Çырать-çырать те çырнине чĕрет,
Вара çилпе пĕр шелсĕр вĕçтерет.

Çав татăк-татăк хут пек кунсене
Вăл пуçтараймĕ, пуçтарас та çук:
Поэт мăнаç — шăпи мăнаçлă чух.

Мĕн-ма чĕрет пĕр тиркемесĕрех? —
Пăрахăç шăтăкне йăлтах шăлать.
Е лайăхрах çырассине шанать...

Пĕрпеклĕх çук. Анчах та пурнăçра
Пĕрпеклĕх туртăмĕ пурах иккен:
Телей шырать кунта кам килекен.

Пĕрпеклĕх пур. Катса, хушса шăпа
Епле çак пурнăçа шайлаштарать!
Мана анчах пайран вăл хăварать.

*1987 ç.*

* * *

Хăрушă тĕлĕке татса вăраннăн,
Сасартăк тухнăн çутă чăнлăха,
Шарт сикрĕм эпĕ çак хура вăрманăн
Ёлккенлĕхне курсассăн тăруках.

Элле унччен те кайăксем юрланă,
Мухта-мухта эп пурăннă куна?
Мĕнле курман эп халиччен сăрланă
Ӳкерчĕк пек çавра уçланкăна?

Элле унччен те пулнă çакă симĕс
Чаппанлă чăрăш, шупăрлă çăка?
Шур çеçкерен тĕвленнĕ тутă çимĕç
Эп астивмен те — юлнă пусăха.

Хĕвел хĕртсе ирĕлтерсе пĕтернĕн
Чăт-чăтлăхри вунçич çулхи юра,
Таптаннă шухăша паян эп сиртĕм, —
Ан чăлхантартăр вăл текех юрра.

Пин сасă вăрманта. Вĕçсе хăпартăр
Тата пĕр сасă — юрă пуласси.
Мана ятарласа савăнтарма-тăр
Кĕрлет, янрать хаваслăх пăласси.

Калас текен сăмахăм пур-ха манăн,
Итлекенсем те пулĕç кăмăлтан.
Вăрантăм, тăвансем, — хура вăрманăн
Юрри пулса юлам-и паянтан...

*1987 ç.*

## ТАТĂК ÇĂКĂР

Кам хăйнă кашкăрла туртса илмешкĕн
Ун çăкăрне тăр-кăнтăр кунĕнче? –
Пуçа чиксе эп тăтăм çавă мĕскĕн
Ыйткалакан инкекĕ умĕнче.

Тантăшăмсем те сумлă кӳршĕ-аршă,
Çапла эп мĕскĕн тăнине курса:
«Мĕн таталатăн, – терĕç, – кирлĕ маршăн?»
Вара мăраннăн утрĕç çаврăнса.

Каçхи апат валли хăварнă çыртăм
Улма хушса пĕçернĕ çăкăра
Илсе эп килтĕм те ăна тыттартăм
Тата кăшт патăм тутлă сухăра.

Ыр тунине вăл тавăрмашкăн тивĕç
Ыр тунипе тесе шухăшламан.
Атте-анне ĕçрен килсен мĕн çийĕç
Тесе кăна хăрарăм эп, айван.

Кашнин чĕри туртса сурмалла мар-и,
Умрах выçса вилет пулсассăн çын?
Тавах! Тете усал куçпа пăхмарĕ,
Аппа та пулчĕ ним сăнаманçи.

«Çын хуйăхне эс ăнланма пуçларăн,
Апла çын пултăн», – терĕ те анне –
Те савăнса, те хурланса, мăнтарăн,
Куççулĕпе йĕпетрĕ саппунне.

Унтанпала мĕн чухлĕ вăхăт иртрĕ,
Чул хушшипе шыв юхнăн хĕсĕнсе.
Мухтавсăр пуçăма кăвак кĕл витрĕ,
Куçра тăмасть малашлăх хĕвĕнсе.

Çут ĕмĕтсем çунса пĕтсен, йӳç тĕтĕм
Сарăхтарать улма пек сăнсене.
Пĕрех вăйсăррисен хутне эп кĕтĕм,
Пĕрех шеллерĕм мĕскĕн çынсене.

Ман пурнăçа манран туртса илесшĕн
Тăшман çава тытса сулсассăнах,
Çав мĕскĕнсем мана кăшт хӳтĕлесшĕн
Хута кĕрсе каларĕç-и сăмах?..

Çапла иккĕленсе сывлатăп ассăн:
Элле тӳрккеслĕх ĕмĕрĕ çитет?
Çын хуйхине çын ăнланми пулсассăн,
Тĕнче вара пĕтмеллипех пĕтет.

Çук, çук! Çынра çунса кайман-ха çынлăх, —
Пĕр виçепе виçес-и эртеле!
Мана çăлакансем, сире çĕр çуллăх
Хам сывлăхран катса парам телей.

Пĕрре эп савăнтăм, тепре хурлантăм —
Чăна эп хутăм чăнлăх йĕннине.
Анне, аннеçĕм, халĕ тин ăнлантăм
Ун чух эс мĕншĕн, мĕншĕн йĕнине.

*1988 ç.*

# КĂСĂЯ

*Поэма*

I

Эс манран мĕскер ыйтасшăн,
Мĕн каласшăн, кăсăя?
Шак шаккатăн, ачапча пек,
Пирĕн сăрлă кусуя.

Айккăн-майккăн пăхкалатăн,
Сиккелетĕн, хĕпĕртен.
Хăнана кĕрес килмест-и? —
Алăк уçăп, кĕр пӳрте.

Эс пĕлетĕн, тарават эп
Кайăк-кĕшĕк таврашне.
Тĕпретсе ак парăп çăкăр,
Хурăп кăшт тата ашне.

Çын тенин пурăнмалла-çке
Çутçанталăкпа тату.
Çи-ха, çи эс, кăсăяçăм,
Тутлă пултăр апату.

Эсĕ çинĕ чух хуллен çеç
Пăрахам та ал ĕçне
Ӳкерсе илем сана эп
Сăркăчпа шур хут çине.

Пуçăнта тутар парни-ши —
Хура пархăт тюбетей?

Чалăшрах лартсан, сана вăл
Килĕшет-çке питĕ те.

Анатьен сăхманĕ майлă
Тĕрĕллĕ çунаттусем.
Туриен хĕрĕсенни пек
Тăла сырнă урусем.

Пĕсехӳ сан – сарă-сарă
Çуллахи сар хĕвелтен.
Юрруна çурхи тумламăн
Сассинчен ӳкернĕ, тен...

Савăнсах савăннăран-и
Е кăштах хăв шухăран
Чи те чи тесе илетĕн,
Шăхăратăн хушăран.

Ан çухат эс, кайăк тусăм,
Лайăх кăмăл еккине.
Эпĕ та вара кăшт илĕп
Санăн чĕвĕл чĕлхӳне.

Ак каллех шак-шак шаккатăн
Эсĕ ман чӳречене.
Чим-ха, чим! Мĕн-ма сасартăк
Шарт сиктертĕн чĕрене?

Асилӳ вĕл вĕçрĕ, ларчĕ
Çывăхри хурăнлăха.
Хурăн тăрринчен пăхам-и
Хурлăрах ачалăха?

II

Ун чухне те çав хĕвелччĕ,
Çак тавралăх, çак вăрман.
Улăм витнĕ кил-çуртсем те
Халиччен асран кайман.

Чӳрече çине сив хĕлĕ
Чăнласах-ши е юри
Пит илемлĕн ӳкеретчĕ
Хĕр тĕрри, автан хӳри.

Çил-тăман çавăрттаратчĕ
Арманти пек, ай тур-тур.
Çук çав, шурă çăнăх марччĕ —
Пăтранатчĕ шурă юр.

Кашкăрсем ялах кĕретчĕç
Çавăн пек тăманлă каç.
Хăраса, тен, тĕршĕнетчĕ
Тĕкме çумĕн катăркас.

Эп вара имшер чĕпкуçĕн
Мĕлтĕр-мĕлтĕр çутипе
«Буря мглою небо кроет»
Вĕренеттĕм çĕрĕпе.

Пĕринче çапла тăманлă
Каç кукленнĕччĕ анчах —
Кусуйран шак-шак шаккарĕ
Ман çулхи ырхан ача.

Аллинче патакчĕ унăн,
Саплăк-саплăк пир хутаç.
Тумтиррийĕ тумтир марччĕ
Çӳремешкĕн хĕл хута.

«Пуçтарса çӳретĕп те эп –
Памăр-ши мĕн те пулсан?» –
Терĕ çав ача ват çын пек,
Хăй çине хĕрес хурса.

Каç енне епле-ха кĕртмĕн
Çулçӳрен çынна киле?
Йăлисем те пирĕн лайăх,
Кăмăл та ĕлĕкхиллех.

Эй-ей-ей, тĕнче ачийĕ,
Эй, хĕрхӳ кунçул пепки,
Сахал мар ун чух çӳретчĕ,
Тăлăхскерĕм, сан пекки.

Ăвăс пуслăх пек тиеннĕ
Йывăрлăх пуççем çине –
Авнă, хуçнă, муталанă
Вăрçă хыççăнхисене.

«Хăççанччен çапла хĕн-хурлăх
Чăтмалла-ши çакнашкал?
Ирт-ха, мĕскĕн, çăкăр çук та,
Пур чĕре сури – яшка.

Ак тĕпленĕ шур кăçатă –
Ăшă кăмака çинчен.

Хӗл хута ăçта каятăн?
Пурăн кун таврăниччен», —

Çаплалла хуллен пупленӗн
Ман аннеçӗм пӗр кана
Лăпкаса апатлантарчӗ
Пӗчӗк ыйткалакана.

## III

Вăрçăн тӳрленми суранӗ,
Халь те умăмра тăран.
Мӗншӗн кăшт та манăçмастăн,
Мӗншӗн халӗ те суран?

Тен, шăпи пӳкле ун тухрӗ? —
Кам пӗлет ăна?.. Анчах
Нумаях пурăнаймарӗ
Çав ыйткалакан ача.

Ӳпкине илтернӗ терӗç,
Çуккă терӗç сиплеме.
Эй, мӗн чухлӗ эп ун хыççăн
Ылханман пуль вилӗме!

Хам айван ăспа шутлаттăм
Кунӗн-çӗрӗн миçе хут:
Ма килмен пирӗн пата вăл
Маларах кăшт пӗреххут.

Икçӗр киллӗ, виççӗр киллӗ
Ялсене çите-çите,

Тупӑнман-шим ман анне пек
Ырӑ кӑмӑллӑ этем?

Теприсем, ав, айӗн-ҫийӗн
Ҫавӑрттарнӑ чух тӑман
Пирӗн пек ҫӑкӑр-тӑварсӑр,
Вутӑ-шанкӑсӑр тӑман...

Ҫынпа ҫын пурӑнмалла-ҫке
Йывӑр чух тата тату.
... Ҫи-ха, ҫи эс, кӑсӑяҫӑм,
Тутлӑ пултӑр апату.

Уй-хирсем те, вӑрмансем те
Ҫулсерен юрпа тулсан,
Вӗл вӗҫсе кил ман пата эс,
Ача чунӗ пек пулса.

IV

Камӑн чунӗ хӗпӗртемӗ
Шурӑ ҫӗлӗклӗ сӑртсен
Тӑррисем хуралнӑҫемӗн
Ҫуркунне килсе ҫитсен.

Ҫутҫанталӑкӑн рехечӗ
Ма хитре-ши ытлашши?
Пирӗн пӗчӗк пахчара та
Пуҫланать хӗвел ташши.

Кӑчӑкӑ тухсан, сар чӗнтӗр
Тутӑр пек ҫырма хӗрри.

Пăчăкă хăйранă евĕр
Савăк кăсăя юрри.

Юнтапа енче тĕл-тĕллĕн
Юр кайса пĕтмен хирсем
Мĕншĕн манăн саплăк-саплăк
Кив сăхманăм пек вĕсем?

Сарă куншăн ак пĕр хушă
Савăнатпăр та, анчах
Лутака сĕтел те пушă,
Тĕпсакай та пуш-пушах.

Ирĕксĕр вара каятăн
Кăнтăрла-и е çĕрле
Çĕрнĕ çĕрулми пухмашкăн
Аслисемпеле пĕрле.

Карта айĕн чăкăт курăк,
Тĕкме çумĕн вĕлтĕрен
Ун чухне пире, тăванăм,
Çăлнă мар-и вилĕмрен?

Çаплалла, терте пăхмасăр,
Пăхăнмасăр чир-чире,
Урамри ӳсентăран пек
Ӳснĕ эпĕр тĕнчере.

Пыл та çу пулаймасан та,
Ман ачалăхăм умра
Хам выляна шур тетте пек
Ĕмĕр юлчĕ асăмра.

Çуркунне ытла вăтанчăк:
Шăнкăр-шăнкăр шывĕпе
Вăрмана кĕрсе пытанчĕ
Аслă улăх çумĕпе.

Кам ăнланĕ каламасăр
Çиччĕри ача чунне?
Выляса тăранаймасăр
Иртрĕ кайрĕ çуркунне.

V

Пушă уйăх, ака уйăх,
Çу та, утă та, çĕртме...
Ма чакса пырать çут уйăх?
Тен, каллех тулса çитме?..

Акă уйăх та çурла пек
Касса тухрĕ вăхăта.
Сăхманпа ăна хупла та
Илсе ан вырма кунта.

Ĕмĕр çĕнĕ, ĕмĕр кивĕ
Ĕç юрри, мĕн каласси...
Янăратрĕ хурçă кĕвĕ
Тайлăк тимĕрçĕ лаççи.

Тин те тин! Хĕрарăм ватă
Çурлине шăллатарать.
Тен, паян ман кăсăя та
Юррине улăштарать...

Тин те тин! Нухрат ӳкернĕн
Сас тăкать вăл вăрмана.
Çу кĕвелĕкне кĕвернĕ —
Тухмалла халь вырмана.

Хĕвелпе тан вăранатпăр
Пыл пек тутлă ыйхăран.
Çӳçенсе вара танккатпăр
Сывлăм тăрăх çаруран.

Парр та парр! вĕçет саркайăк
Пĕчĕк çул ик айкиппе.
Ĕнтĕ пурнăç пытăр лайăх
Хăйĕн çулĕн еккипе.

Сулахай енче — мăн улăх,
Сылтăмра — çап-çут Пăла.
Çитмен пурăнăç та тулăх
Анне пур-тăк манпала.

Хăй каçалăкне тирпейлĕн
Пăхса илчĕ те анне
Сар çеçке çине тӳнтерлĕн
Сарчĕ сарă саппунне.

Кукленсе çĕре чуптурĕ,
Тем каларĕ кĕвĕлле.
Çурлипе çур кăшăл турĕ,
Çавăрса сар хĕвелле.

Майĕпен эп тавçăратăп:
Сарă çăкăр — çур хĕвел.

Тен, вăл, тен, вăл çавăнпа та
Ăшăтать чуна, хĕве?

Ахаль мар ăна пӳкленĕ
Шупкарах сурпан çине,
Шăрччануй çиппе тĕрленĕ
Сылтăмри кĕтессине.

VI

Эй, йăли-йĕрки чăвашăн, —
Манаймасть хăй авалне:
Сăмахпах вăл çавăрасшăн
Çутçанталăк кăмăлне.

«Мĕн çĕрме пуян та мăнтăр
Тăп-тăваткăл тĕнчере?
— Сар Хĕвел-Аттемĕр ырă, —
Ĕрехмет Аттемĕре.

Ан çиллентĕр Çĕр, ан мантăр
Пирĕн пек хресченсене.
Кăçалхи пек тырă ăнтăр
Тата тепĕр çулхине.

Çут Хĕвел ан тĕксĕмлентĕр
Янкăр тăрă тӳпере.
Ырлăх-сывлăх парнелетĕр
Ӳркенменсене — пире.

Çутçанталăк памасассăн
Тырра кирлĕ пек куна,

Ларас çук эпир йăвашшăн,
Ассăн сывласа кăна.

Астусам: тăрсассăн шăрăх,
Çĕтĕк çăпата çине
Турăшна лартса кас тăрăх
Сĕтĕрсе çӳренине.

Пăхаттир картне хумалăх
Пулмасассăн та питех,
Пур-ха пирĕн пăхăнманлăх,
Пур виçеллĕ тивĕç те.

Çук тесе пуçа усмастпăр,
Кĕлмĕç пек, çĕр тĕпнелле,
Пур тесе пуçа хумастпăр
Аслă Хĕвелтен çӳле».

Çаплалла чӳк-кĕлĕ тунăн,
Вĕçлесе хăй сăмахне,
Ман анне хуçа пек сумлăн
Пуçăнать каçалăкне.

Пурнăçпа пĕрле сыхланнă
Ĕлĕкхи чăваш чӳкне
Ачапча мĕскер ăнланнă,
Мĕн чухланă ун чухне?

Пурпĕрех вырма тухаслăх
Вăхăта, аннеçĕм пек,
Чи хисеплĕ те чи аслă
Ĕç тесе шутлатăп эп.

Çирĕм утăмлă каçалăк —
Йӳç Шăхаль çырми таран!
Çирĕм кун ытла вырмалăх
Çитĕ ку тесе тăран.

Куç хăрать та — алă паттăр,
Хăрамасть иккен ĕçрен.
Шикленсе-туса тăмастпăр
Кушăркана пиçенрен.

Вырмалла васкавлăн, хăвăрт
Тыр тĕшши тăкăниччен.
Кăчăрт-кăчăрт, кăчăрт-кăчăрт
Хир юрлать пек мĕн каçчен.

Тусанпа кăштах хуралнă
Аçлăк хунă пир кĕпе,
Пăлана чиксе кăларнăн,
Çурăм тăрăх йĕп-йĕпе.

Çăкăр, çăкăр! Ӳркенмесĕр
Пуç тавра шухăшласан,
Тен, тата та тутлă эсĕ
Тарпала тăварлансан?

Çынпа тан тапса çыхатпăр
Хамăр пысăкăш кĕлте:
Пултăр тетпĕр тутлă, капăр
Çавра çăкăр тĕпелте.

Кĕрхинчен хумашкăн меллĕ
Тăп-тăваткăл сар сурат.

Çуртринчен вара хĕвеллĕ
Çӳл çĕмел тума юрать.

Сĕлĕрен çĕклетпĕр селĕм
Кăтра пуçлă «майрапуç»:
Ĕлĕкрен раштав кĕселĕ
Кăмăллană Арапуç.

VII

Авăтма пуçлать те карăш,
Савăнать сар путене.
Пришвин савнă сулхăн варкăш
Уçăлтарчĕ кăшт тинех.

Инçе мар пĕр ăслă кайăк
Вĕрентсе е шӳтлесе,
Юррине тăсать пĕр майăн —
Итлесемĕр тимлесе:

«Ĕçле, ĕçле, ĕçле — çи,
Ĕçлемесен — хывăх çи».

Ĕнтĕ тулнă еккĕм кăмăл:
Пухса кĕртнĕ тырпула!
Йытпыршийĕ сăрнă хăмăл
Тĕлĕ-тĕлĕпе ула.

Хӳмесем çине тăратнă
Пуса-кантăр си те си.
Ывçăн-ывçăн ясмăк сапнăн
Ун çинче вĕçет çерçи.

Ку — кĕрхи уяв кĕрлевĕ —
Кайăк-кĕшĕк, хĕпĕрте.
Кăсăя сар çиçĕм евĕр
Вĕлт те вĕлт вĕçсе иртет.

Эп илтсеччĕ пĕр чӳклевçĕ
Каласа кăтартнине:
Ырă çын вилсен, ун ĕçĕ
Ĕмĕрех упраннине,

Пурăнмасăр юлнă кунĕ
Çынсенче пурăннине,
Чĕринчен тухсассăн чунĕ,
Кайăк пулнă тенине.

Ват çынна çак калаçушăн
Ан вăрçсамăр. Ку — суя.
Пурпĕрех ман вилнĕ тусăн
Чунĕ пултăр кăсăя.

Халь ман ĕçĕм, кăсăяçăм,
Шухăша сăвăласси.
Асилсен сана пĕр асăм,
Пулмĕ тетĕп ытлашши.

Мĕн эс пит асăрханулла?
Хăрамашкăн кирлĕ мар —
Чӳрече çине хăюллăн
Хам юлташ пек кил те лар.

Хăналам сана — ак сухăр,
Чĕлхӳне çăтса яран.

Акă тутлă-тутлă çăкăр
Кăçалхи çĕн тырăран.

Ан тусам мана эс айăп, —
Пĕлĕп-ши ăста ĕçне?
Эсĕ çинĕ чух сана эп
Лартăп кăранташ вĕçне.

Тăхăнтартăп ак алхапăл
Хура пархăт тюбетей.
Чалăшрах лартсан, сана вăл
Килĕшет-çке питĕ те.

Уруна тăла сыртарăп —
Шăнмалла ан пултăр тек.
Çу валли тата тыттарăп
Симĕс тĕрĕллĕ итэк.

Хурапа туртса хуратăп
Çивчĕ çунатту вĕçне...
Хут çинче сана хăварăп
Ĕмĕр-ĕмĕрлĕх вĕçме.

*1988 ç.*

## КĂМĂЛ-ТУРАМ

### I

Пĕр пĕчĕк телее уяв тăвам-и:
Вĕр-çĕнĕ шур кĕпе эп тăхăнам.
Васка-васка çырам йыхрав саламĕ,
Юрла-юрла çавра сĕтел лартам.

Пĕр пĕчĕк телее уяв тăвам-и:
Тус-йышăм килтĕр, ыр сунан тăван.
Сăйлантăр савăнса туссен тăванĕ,
Иртен-çӳренсене хăна тăвам.

Пĕр пĕчĕк телее уяв тăвам-и:
Чĕл-чĕл пайланă пек сар çăкăра
Пуриншĕн те пĕрер кăмăл турамĕ
Унран тухайтăр кăмăла кура.

Микротĕнче йĕрки-ши чун-чĕремĕн? —
Саккунĕсем ун урăхла пачах:
Телейĕме çынпа пайланăçемĕн
Пĕчекленмест вăл — ӳсĕнет анчах.

### II

Ума тăрук инкек-синкек тухсассăн,
Шур кĕпе мар, хура сăхман уртам.
Пĕччен чухне сывлам эп асссăн-ассăн,
Ял-йышăмпа пĕрле пӳрт хăпартам.

Ума тăрук инкек-синкек тухсассăн,
Юратнă ĕç ан ÿктĕр аларан.
Ăш вăркасан та лăпкă пултăр сассăм,
Юрлас тени ан тухтăр йăларан.

Ума тăрук инкек-синкек тухсассăн,
Шăла çыртса чăтам-тÿсем ăна.
Тус-тăвансем вара, килес пулсассăн,
Чĕнмесĕр килччĕр — хаклă çав кăна.

Чун хушшинче йăл илнĕ чун-чĕремĕн
Саккунĕсем урăхла мар иккен:
Çынпа чуна уçса калаçнăçемĕн
Ман хуйхăм та иртсе пырать майпен.

*1987 ç.*

## ВĔÇЛЕНМЕН ПОЭМА

*Ура — Атăлта,*
*Улăп сăрчĕ — пуçелĕк.*

Энтип Ваççи

### I

Пуçелĕкĕм манăн чечеклĕ çак сăрт,
Тӳшекĕм — çемçе симĕс улăх.
Выртса вуламашкăн ак пуç вĕçĕнче
Хунар вырăнне çутă уйăх.

Хитре тĕнчене хăйĕнчен те хитре
Çырса кăтартаймăн — пĕлетĕп.
Мана çырлахтарĕ ăна чăвашла
Талантлăн пăхса вулани те.

Чăваш сывлăхне сыхласа тăракан
Тавралăх, санран эп писеп-и?
Пăлан тутăх тăмлă çыранĕ те ав
Чăвашăн янах шăммисем пек.

Вăтам ĕмĕрти ялавсем пек вĕçет
Хăва тăрринчи сӳс, темтепĕр.
Шыв-шур тайăлсассăн, çырма-çатрасем
Агеев* ӳкерчĕкĕ евĕр.

Ик аркăллă симĕс кĕпеллĕ йăмра,
Анат чăвашсен кинĕ майлă,
Ытти йывăççен-курăксен хушшинче
Хăй евĕрлĕ лăпкă, сăпайлă.

---

* Агеев — чăвашсен паллă художникĕ.

Сӗтел пек Сител те Юпа-Юнтапа,
Арпуҫ Арапуҫӗ те Атӑк...
Эсир пулмасан, ытарми ялӑмсем,
Этемлӗх историйӗ катӑк.

Санрав пӑхаттир пек сар сӑрт умӗнче
Кукленнӗ ача пек тӑратӑп.
Эй, ӑсӑмпа мар — авалхи сисӗмпе
Таҫти ӗмӗре таврӑнатӑп.

Вӗри сывлӑшпа ҫил сывлать кӳ те кӳ,
Юлать тайӑлса кӗлчечекӗ.
Кам чӗртнӗ кунта несӗлсен чечекне?
Е вӑл ырӑ тӑхӑм пӳлекӗ?*

Пӑлхар хулисен ишӗлчӗкӗсем пек
Юхса тӑракан пӗлӗт айӗн
Мӗн-ма ӗсӗклет пӗр текерлӗк ялан
Калла та малла вӗҫнӗ майӗн?

Мӗскер эс ҫухатрӑн, мӗскер эс шыран,
Кама пытаратӑн, текерлӗк?
Чечек тӗнчене куҫӗнчен пӑхнӑ чух
Ума шӑвӑнать пек синкерлӗх.

Е эсӗ тӗпри несӗлсен ыйхине
Сирме йыхӑратан, чӗнетӗн?
Е ҫул иртнӗҫем мӑкалса пыракан
Астӑвӑм хӗҫне ҫиҫӗмлетӗн?

* Пулек — вилтӑпри ҫине асӑнса хунӑ парне.

Кĕве ҫинĕ евĕр ҫырулла чулсем
Эс йĕнĕ саспа вăранаҫҫĕ.
Ҫичют-тăшмана паттăрла хирнине
Чĕлхесĕр уйсем астăваҫҫĕ.

Пуҫ хунă ҫынсен кăтрисем пек умра
Кĕл тĕслĕ кăлкан хумханать-и,
Е ҫил, тутăхан ҫĕрĕ пек, ҫаврăнса
Ҫулсен тусанне юпалать-и,

Е путăк та шăтăк мурьям* ҫийĕнче
Ҫĕлен ҫĕкленсе шăхăрать-и —
Кашни хускану чулланан чунсенчен
Таҫти ĕмĕре кăларатĕ.

Эпир — иртнĕ вăхăтăн пулăмĕсем:
Пăлхар-сăварсен юн тымарĕ,
Пĕрре уйрăлса та тепре пĕрлешсе,
Чĕремĕрсене килет мар-и?

Текерлĕк, текерлĕк, пӳкле ан вĕҫсем, —
Юрру сан астăвăм уҫҫийĕ...
Мухтавлă кунсен асаилĕвĕ пек
Мĕлкӳ шуса иртрĕ пуҫ ҫийĕн.

II

Тĕнче те тăваткăл, те ҫап-ҫавракā, —
Анчах тăван ен — ун тĕпелĕ.
Пĕрре татăлса та тепре сыпăнса
Те вăхăт шăвать, те шур пĕлĕт.

---

* Мурьям — выльăх масарĕ.

Тӳшекӗ мӑн улӑх, пуҫелӗкӗ сӑрт, —
Канать пек кунта аслӑ улӑп.
Элчелӗм ҫитсессӗн, тӑрук чун тухсан,
Е эп те ҫапла выртса юлӑп...

Телейлӗ тееҫҫӗ ҫынна, — тӑхӑмсем
Ялан ырӑпа асӑнсассӑн.
Телейлӗ эп пулӑттӑм ахрӑм ҫулне
Кӗрсе ҫаврӑнсассӑн ман сассӑм.

Юхать-и Пӑла ҫаврӑна-ҫаврӑна,
Кашни ҫаврӑмра кӗмӗл сулӑ.
Таҫтан авалран-и е чун тӗпӗнчен
Тухать тухатуллӑ салхулӑх:

«Алран кайми аки-сухи,
Асран кайми атте-анне.
Аки-сухине хӑварас ҫук,
Атте-аннене, ай, манас ҫук...»

Сире эп, асран тухайми несӗлсем,
Хура вӑрманта та, уйра та
Кӑвак пӗлӗте перӗнсе утакан
Кӗрнек улӑпсем пек куратӑп.

Куптак сухапуҫ хыҫӗпе майӗпен
Эсир ӗмӗре туртса пынӑ.
Ҫук, ҫук, — хыҫӑрта ҫӑпата йӗрӗ мар —
Истори хӑех выртса юлнӑ.

Савман самана парайман телее
Тиек-улпутсем те илеймӗҫ.

Эсир, несĕлсемĕр, шăпа умĕнче
Нихçан та пулман хăрхăм-кĕлмĕç.

Апшур йĕрĕхе, этеме пусса мар,
Автан юнĕпех тивĕçтернĕ.
Салху вăхăта васкатасшăн ĕçпе
Асамçăсем пек ăс çитернĕ.

Ирттернĕ çапла пурăнан пурнăçа
Пĕр чĕптĕм те канлĕх курмасăр.
Элчелĕр çитсен, шур пӳспе чĕркесе
Пытарнă сире хурăнташăр.

Ăçта халь выртаç шăммăрсем-шаккăрсем,
Ăру пуçĕнчи улăпсемĕр?..
...Шăпа виçсе панă каçалăк çинче
Ӳксе çухалать-шим çак ĕмĕр?

III

Ак тухĕ ирпе яланхи йĕркепе
Пушар пек чӳклевçĕ хĕвелĕ.
Мăнаçлă ларан сăрт çамки майĕпен
Юн пĕрĕхнĕ евĕр хĕрелĕ.

Умри утма çул улăп çулĕ пулсан,
Çумри сукмаксем ăна пӳлмĕç.
Эпир улăпсен вăй-хăват тӳпине
Те çитĕпĕр, те çитсе пулмĕ...

Виç аршăнлă пусăм, яланлăх ĕçсем
Чăн-чăн улăпла, — кам тавлашĕ!

Анчах улăпла-ши чунри туйăмсем,
Еткерĕмĕрсем чăвашла-ши?

Тăванлăх та пĕрлĕх пире çич ютран
Пĕтев-хурткуççи пек сыхланă,
Тăванлăх та пĕрлĕх мĕнпур инкеке
Чăтса ирттермешкĕн вăй панă.

Таптать тепĕр чух ак чăваш чăваша,
Чунне хавшатать кĕвĕçӳлĕх.
Элле айккинчен хĕтĕртсе тăнипе
Çухалĕ умран улăп çулĕ?

Элле несĕлсен пархатарлă пилне
Эпир манса кайрăмăр ĕнтĕ? –
Çапла шутласа, чĕрене çунтарса,
Эп сăвă çырмашкăн вĕрентĕм.

Пуçламăшĕнче йĕркеленнĕ сассем
Чан çапнă саспа янăраччăр.
Ăру пуçĕнчен сулăмпа тухнăскер,
Эп – сирĕн, поэт чунлă ачăр.

Атте-аннесен сăввисен-юррисен
Ситреннĕ вĕçне тухас марччĕ.
Ахаль-и тин çеç шур хур тĕкĕ çине
Саркайăк вĕçсе килсе ларчĕ.

Парне пек кунсем те ялан ăшă мар, –
Чечек улăхне те тăм тивĕ.
Пĕрех упраясчĕ таса чĕлхĕре,
Пĕрех пулаяс сире тивĕç.

Мĕн тăван? — паян та ума самана
Пылпа юнашар хучĕ эрĕм.
Хĕрхӳ кунсене эп тутантăм тем чул —
Пылне астивме пĕлеймерĕм.

Аттесĕр эп ӳсрĕм, çапах чунăмра
Упранчĕ сăмахăн хăвачĕ.
Ик çыншăн та йывăрлăх тӳснĕ анне
Ик çыншăн та çепĕçлĕх пачĕ.

Калас сăмахсем аçа-çиçĕм пулса
Чула та касма пултарсассăн,
Анне юррисем чун эмелĕ пулса
Суран сиплеме пултарсассăн,

Илсе иксĕлми ытарми пурнăçра
Эпир ĕмĕр-ĕмĕрлĕх чĕрĕ...
Çӳлте çутатать улăп чĕртнĕ хунар,
Ура айĕнче — улăп çĕрĕ.

*1987 ç.*

* * *

Эй мĕн чухлĕ чечек çĕр çинче,
Эй, мĕн чухлĕ чечек!
Инçетри çăлтăрсен тĕнчинчен
Çимĕке аннă пек.

Уйăрса тăрам мар вĕсене —
Савăнса çех тăрам.
Уйăрса эп парам кашнине
Ăшă кăмăл-турам.

Тусăмсем, килĕр, иртĕр мала,
Юрлăр чун каниччен.
Тăвансем пурте тан пулмалла
Мĕн çĕре кĕриччен.

Улăхăм — тĕс кайман улача,
Тĕррисем — хантăсла.
...Ĕнтĕ çимĕк пĕрле те, анчах
Ăраскал ăрасна.

*1988 ç.*

## КĂВАЙТ УМĔНЧЕ

Е ку тĕлĕкре? Хĕм сапса вирхĕнеççĕ
Пăлхар уххисен пăхăртан сăннисем.
Хăлха янăранăн сассем çинçелеççĕ
Хĕвеллĕ кунсем тайăлса пынăçем.

Аваллăх! Каçхи улăх тăрăх саланнă
Шур ут кĕтӳне пуçтараймăн тинех.
Аса илӳсем çеç ача пек пăлханнă:
Каллех пухăнасшăн кăвайт хӳттине.

Ăшра, çапăçу хирĕнчи пек, пит тавлăн
Хĕрет калаçу, чĕм кĕртет чĕлхене.
Ялав пек çĕкленчĕ те çулăм, пăлхавлă
Йыхрав пек, хура сĕмлĕхре чӳхенет.

Апла эп сире сăвăра пуçтарам-и,
Историн çухалнă тĕпренчĕкĕсем.
Чул крепăç умра! Ритм пултăр таранĕ,
Састашĕ вара — йĕкĕреш йĕтресем.

Мала, пăлхарсем! Тĕссĕр манăçлăх çулĕн
Йĕрне шухăшпа та пулсассăн пӳлер.
Мала, тăвансем! Исмаэлĕн Миккулĕ
Малта çеç шантарĕ вĕр çĕнĕ Пӳлер.

Поэт халь çарпуçĕ. Пăхатăп пăлхавлăн:
Ăçта чаплă çар, çĕнтерме пулнăскер.
Ăçта ирĕке савнă халăхăм манăн?
Акшар тăвĕ пек чăнкă кăкăрлăскер?

Ăçта ирĕке савнă халăхăм манăн?
Ăçта Атăл урлă куç ывăтнă çын?
Ыр ăрăмçăсен йăлине те йăлт маннă
Куккук кунçулна шутлă авăтнă-шим...

Ăçта çимĕкри чăвашла юрă-кĕвĕ?
Саркайăк ăçта савăнмашкăн анать?..
Пуç уснă ыйту паллисен уйĕ евĕр
Шур çӳçлĕ кăлкан çеç ӳксе хумханать.

Хыçра сурат мар — çухату хирĕ пулĕ,
Умра ыраш мар — ырату хирĕ, тен?
Эпир шутламашкăн ăста та — кам тӳлĕ,
Мĕнпур çухатушăн кам тӳлĕ пиртен?

Эпир-им паян çав мăнаçлă пăлхарăн
Мăнаçлă, анчах шуранка пепкисем?
Эпир-им паян çав мухтавлă пăлхарăн
Мухтанчăк, анчах халсăр тăхăмĕсем?

Эпир-им паян пурнăçа хак хумашкăн
Вĕреннĕ çынсем — пасарти сутăçсем? —
Çынран ирттерсе икĕ ĕмĕр пурнасшăн
Тусна та сутма хапăл пулнă çынсем?

Шерпет иксĕлсен, мĕн çинчен-ши калаçĕç...
Ай, пурнăç иртет те, ай, кăмăл юлать.
Мĕн-ма Атăл мар, ăшăхланнă Пăла çеç
Паян чăвашла шăнкăр-шăнкăр юрлать?..

Ăçта эсĕ пулнă, ман халăхăм, аслă
Пăлхар ирĕкне сыхлама тухакан

Каç кӳлĕм кичем те, ир кӳлĕм хаваслă
Поэтăн пуçне каснă чух ятаган? *

Сана илтĕнмест-им шап-шур Шупашкарăн
Юнран тасатса хунă пĕр çуртĕнчен
Митта ахлатни те, асапçă хаяррăн
Ăна кăшкăрса хĕнени ӳкиччен?

Мĕскер вăл тĕнчешĕн Янкасăн асапĕ, —
Çырма хĕрринчи аçа çапнă палан.
Ак çитрĕ самант! — кĕсйери вак укçа пек,
Йӳнелнĕ укçа пек эс юлтăн паян.

Тăрлавсăр йышпа танлаштармăп сана эп,
Анчах та, ман халăхăм, сан ятупа
Санах пĕтермен-и? ...Тем йывăрăш айăп
Санра та паян, ав, историк тупать.

Пĕлетĕп, эс халĕ те сыхă: пуканшăн
Элек вĕçтерсен пĕр панккав ян та ян,
Мана çула май хытăрах тапайманшăн,
Чулпа çапайманшăн чунтан кулянан.

Тĕнчи çаплалла йĕркеленнĕ пуль кутăн:
Ырсемĕ пулсассăн, Усалĕ пулать.
Христос çумĕнче çӳремен-и Иуда,
Пăлат хĕçпеле сых пулман-и Пилат?

Пӳрмен телее Пӳлерте те илеймĕн,
Мĕн тăвăн? Халь ĕнтĕ Пӳлерĕ те çук.

---

* Ятаган — кукăр кинжал.

Çапла калаçсах пăхăнманлăх илемĕ
Çухалнă санра, тĕссĕрленнĕ куçу.

Курмастăн эс халь сарă куçлă çӳлевçĕ
Мăнаçлăн çĕмел тăрринче каннă пек,
Чун тăнăçлăхне тăхаланă чӳклевçĕ
Хĕвелĕ çунса тăнине кунĕпех.

Мĕнпе, саманташăм, тӳрре тухăн эсĕ,
Хăравçă салтак çапăçу хирĕнчен
Тарса ӳкнĕ пек, пурăнса пĕтермесĕр
Тухсассăн историн çурма çулĕнчен?

Эп таркăн ачи пулас çук! Пăхăр, эпĕ —
Пăлхар-несĕлсен карăнтарнă уххин
Яла вăратса вирхĕнен пĕр йĕппи пек
Чарусăр мăнукĕн чарусăр тăтхи.

Хальччен тайăлман тусене эпĕ тайăп
Тесе ыткăнатăп эп сăвăлăха.
Умра ак чулланнă чун-крепăç! Унта эп
Пĕрре çапăнса аманманччĕ-и-ха?..

*1987 ç.*

# ВĔРИ ПĂР

*(трагеди)*

Çутçанталăк ирĕкĕ: малтан ал арманĕпе авăртса тунă кĕрпе пек пăтăр-пăтăр юр вĕçтерчĕ, ир еннелле вара тăруках уяртрĕ, сивĕтрĕ. Кĕрхи тумхахлă çул тикĕсленмерĕ пулсан та, тавралăха йăлтах хĕл сăнĕ çапрĕ, тĕнче аслăланнă пек туйăнчĕ. Ĕнтĕ сӳтсе пăрахнă кивĕ кĕпер майлă урлă-пирлĕ выртакан улма аври те хуралса тăмасть текех. Хӳмесем çине тăратнă кантăр пусине пас тытнă. Ĕнер кăна унта, ывçăн-ывçăн ясмăк сапнă евĕр, çерçи ушкăнĕ пĕр çĕкленсе, пĕр анса ларатчĕ, халь акă кăсăя кăна сайра хутра вĕлт те вĕлт вĕçсе иртет.

Чунра ăнлантарса памалла мар çĕнĕлĕх: мункунра çĕнĕ кĕпе-йĕм тăхăннă пек, анчах вăл вараланасран шикленесси-тăвасси çук, уявĕ иртессине те асра тытмастăн...

Вырсарникун – кĕтнĕ кун. Паян шкула каймалла мар, урокĕсене те ĕнерех алхапăл туса пăрахнă, – иртен пуçласа каçчен ирĕк кун пултăр, арифметики кăмăла шăрпăк пек тăрăнса ан тăтăр. Тăраниччен çывăр, тăрсан – умăнта яшка, чуна уçса яран уйран. Тĕнче рехечĕ! Çак вăхăта эрнипех ĕмĕтленет Энтри, анчах мĕн тăвăн? – ялан çапла: ирĕклĕх савăнăçĕ ăна ирех вăратать. Ытти кунсенче, шкула каймалла чух, каçхине çывăрас килмест, ирхине вырăн çинчен тăрасси асап.

– Çывăрас килмесен тăр, Энтри. Йăраланса выртни çынна пăлахая кăна ярать, – терĕ ăна вут уççинче сӳс арласа ларакан амăшĕ. – Улми те сивĕнсе каять. Хăвăн ĕçӳсене тукала.

Энтри хăйĕн амăшне тĕнчери чи ырă çын тесе шутлать. Ывăлне темле ăрасна, шеллевлĕ туйăмпа юратать

Марье аппа, ача чунӗ ӑна каламасӑрах сисет. Энтрие амӑшӗ халиччен ятламан мар, анчах нихӑҫан та алӑ хуман ун ҫине вӑл. Пӑтара салтак пиҫиххийӗ те ҫук вӗсен – ашшӗ вӑрҫӑран таврӑнайман... ав, хыҫалти касри Сулахай Ванюкнех илер. Амӑшӗ ӑна ачашлать, тепӗр чух чуптуса та илет, кӑшт айӑпа кӗрсенех, ҫурӑмран аяларах вырӑнтан ашшӗн пиҫиххипе тӑрӑшсах тапаттарса илет.

Ирех Энтри аслашшӗ ҫитрӗ. Сакӑрвунӑ ҫула ҫитнӗ сар сухаллӑ мучи вӑл. Тӗп килте юлнӑ кӗҫӗн ывӑлӗн ҫемйипе пурӑнать, анчах вӑталӑх кинӗ патне сывлӑх пӗлмелле килсех ҫӳрет. Кашнинчех вара Энтри валли вӗр-ҫӗнӗ пӗрер пус укҫа илсе килет. Ӑҫтан тупать-ши вӑл вӗсене? «Ҫак укҫа пек ҫутӑ та вырӑс пек сарӑ пул, мӑнукӑм», – тесе тыттарать ӑна вӑл Энтрие. Анчах мӑнукӗ пӗрре те аслашшӗне хуман, пачах урӑхла: амӑш пек хураскер те чакӑр куҫлӑ, сӑмаха пусса калаҫать. «И-и, хура курак чӗппи, – текелет тепӗр чухне вӑл мӑнукне, – пӗрех хамӑр йӑх, сывлӑху кӑна пултӑр».

– Мӗнле ҫӗр каҫрӑр, кин? Кирук арӑмӗпе иксӗр пек кӑмака ир хутса кӑларакан ҫын ялта та ҫук. Чӗлхӗрсем те ҫивӗч, хӑвӑр та маттур ӗнтӗ, – кӗххӗм-кӗххӗм туса вучах енне кӑштӑртатрӗ аслашшӗ. Патушаланнӑ аллипе кӑвар туртса илчӗ те васкамасӑр чӗлӗмӗ ҫине хучӗ. Качи-мӑчи чулне тытса ҫавӑркаласа савӑнать тейӗн!

– Кӑварӗ мӗнле пӗҫертмест-ха пӳрнисене? – кашнинчех тӗлӗнет Энтри.

– Нумай ҫывӑрса пысӑклансах кайнӑ эсӗ. Капла часах аҫуна хӑваласа ҫитӗн, виҫмешкӗн алӑк сули те лутра пулӗ-ха акӑ, – терӗ вӑл, чӗлӗмне паклаттарса. – Ҫерукка Петюкӗсем Пӑлана анчӗҫ унта, хоккей-моккейла вылясшӑн пулас.

– Пӑҫӑкка Колипе Пӗчӗк Фомин пурччӗ-и? – вас-

каса ыйтрĕ Энтри. Хӑй вара, аслашшĕ хуравне итлемесĕрех, хыпаланса тумланма пуҫларĕ. Ара, ӑҫта кайччӑр вĕсем, паллах, пӑр ҫине! Пиншакне ҫула май утсачупса тенĕ пекех тӑхӑнса ячĕ арҫын ача. Пĕр ури пӳртре, тепри — урамра. Апатланса тӑма вӑхӑт ҫук — халиччен юлташĕсем шӑпа ярса выляма та пуҫларĕҫ пуль.

– Хырӑмĕ выҫсан, выльӑх та киле килет. Чарса ан тӑр, вĕҫтертĕр, — мӑнукĕн хутне кĕрсе юлчĕ аслашшĕ. Тутарсем ҫиес килмесĕр нихӑҫан та ҫимеҫҫĕ, хырӑм выҫсан кӑна усӑллӑ вӑл ҫӑкӑр-тӑвар. Кӑпчанкӑран авса тунӑ кукӑр патакне парасшӑнччĕ вӑл Энтрие, анчах, эй, каяннӑй, – каллех манса кайнӑ, тепрехинче парĕ ĕнтĕ...

Нӑтӑр-нӑтӑр, нӑтӑр-нӑтӑр тӑвать шурӑ юр ҫӑпата айĕнче. «Йĕпреҫрен илсе килнĕ сахӑр ҫапла шурӑ», – аса илчĕ амӑш сӑмахне Энтри. Тен, пылак хутӑштарсан, юртан та сахӑр тума пулать? Мĕн чухлĕ сахӑр пулĕччĕ! «Нивушлĕ никам та шухӑшласа пӑхман ун ҫинчен?» – вĕлт вĕҫсе иртрĕ ҫак шухӑш Энтри пуҫĕнче.

Акӑ савнӑ Пӑла! Ҫӑва тухсан, шывĕпе савӑнтарать вӑл ачасене. Ҫимĕк ҫитиччен ҫичĕ хутчен шыва кĕмеллех, атту чир-чĕртен тасалаймастӑн, кĕсен-ҫӑпан ерме пултарать. Ҫапла ĕнентерне ĕлĕкрен, ҫак йӑлана салтак ҫулне ҫитнĕ йĕкĕтсем те ҫирĕп тытса пынӑ. Кĕлементей авӑрĕнче икĕ хутчен те путма пуҫланӑ Энтри, ҫапах та Пӑларан сивĕнмен. Хĕлле ҫутӑ пӑрĕпе савӑнтарать ҫырма вĕт-шакӑра. Акӑ паян та вӑл ачасене хӑнана чĕннĕ.

– Энтри, эс пирĕн май выля. Ҫитӑр Кĕверкийĕ енче ахаль те пиллĕкĕн, тата, ҫитменнине, Кусла Валери пирĕнтен виҫĕ ҫул аслӑрах. Пĕчĕк Фомин, эс вӑйӑран тух, выляма пĕлместĕн, ура айĕнче чӑрмантарса кӑна ҫӳрен, – Энтрие курнӑ-курман хавасланса хӑлаҫланчĕ Пӑҫӑкка Коли. – Эсир ҫапса кĕртни шутланмасть, халь

Энтри килчĕ, çĕнĕрен пуçласа вылятпăр, – пурне те пĕлтерчĕ вăл.

– Эпĕ çын вырăнне выляма килмен. Пĕчĕк Фомин вылятăрах, – терĕ Энтри çирĕп сасăпа.

– Апла пулсан, чикĕре тăтăр, хытă сыхла, асту, – тепĕр май çаврăнса та ӳкрĕ Пăçăкка Коли.

Вăйă пуçланчĕ. Шăк та шак тутараççĕ «йыттине» – йĕлме шакмакне, унталла та кунталла хăвалаççĕ ăна. Тепĕр чухне, пĕр вырăнта кĕпĕрленсе-тĕркĕшсе, «ача купи» те пулса каять. Хĕрсе вылянă чух хырăм выçнине те туймастăн, вăхăт иртни те сисĕнмест.

– Пире ку чикĕ алă май мар. Çавăнпа та эпир пĕр шут кая юлса пыратпăр. Мирун Çерушĕ те (ку ĕнтĕ чикĕре тăракан тепĕр сыхлавçă) мăран пирĕн. Чикĕсене улăштарма вăхăт, – терĕ Çитăр Кĕверки, хырăмне сăтăркаласа. Кĕверки пысăк кӳмерккеллĕ, пуринчен те вăйлăскер. Аллисем темĕнле килĕшӳсĕр кĕске, пуçĕ хуран пек пысăк. Кĕркуннепе çуркунне сывлăш тухманнипе аптăрать вăл. Тăваттăмĕш класра икĕ çул ларса, Энтрисене «каялла хăваласа» çитрĕ кăçал. Те каçăрăлса çӳренипе, те пуçĕ пысăккипе «çутĕç министрĕ» теççĕ ăна. (Саманипе пĕрле ӳссе каярах чăнах та «çутĕç министрĕ» пулчĕ вăл).

– Кăштах канса илмелле, атту пирĕн пĕчĕк Фомин хурал тăрса халтан кайнă, – килĕшрĕ Пăçăкка Коли.

Тĕркĕшме чарăнчĕç, анчах кашниййĕ тĕрлĕ сăлтавпа кăшт кăна çапса кĕртейменни çинчен пĕрне-пĕри пӳлсе каласа парасшăн пулчĕ. Çав «кăшт кăна» чăрмантарман пулсан, пĕр ушкăнăн ултă шут пулатчĕ, тепĕр ушкăнĕн вара (Çитăр Кĕверки ушкăнĕн ку, паллах) пĕр шут ытларах.

Хĕрсе кайнă калаçу майĕпен сивĕнсе пычĕ, анчах калаçмаллисем пĕтмен-ха ачасен: хăшĕ çывăх вăхăтра

йӗлмерен йӗлтӗр авса тӑвасшӑн, хӑшӗ паянах ӗне «икерчине» сӗрсе шӑн тенкел тӑвассине пӗлтерчӗ.

– Вова, сана анне халех апат ҫиме килтӗр терӗ, – илтӗнчӗ ҫыран хӗрринчен.

Иркка килсе тӑнине никам та сисмен. Тен, ачасем мӗн калаҫнине те итлесе тӑнӑ вӑл? Юрать-ха, хӗрачасем ҫинчен сӑмах хускатман – ыранах пӗтӗм шкул пӗлетчӗ вара. Иркка мулкач тирӗнчен ҫӗлетнӗ ҫӗлӗкпе, уринче – шурӑ кӑҫатӑ. Кас ачисем пурте кӑмӑлласҫӗ ӑна. Сӑнӗпе хитре, яланах илемлӗ тӑхӑнса ҫӳрет, лайӑх вӗренет. Тата мӗн кирлӗ? Ашшӗ ун МТС директорӗ, амӑшӗ учительница, вӑл та майралла тӑхӑнса ҫӳрет. Таҫтан Кавалтан куҫса килнӗ теҫҫӗ вӗсене. Иркка Энтри аппӑшӗпе туслӑ, кунне вӑтӑр хутчен те каҫаҫҫӗ пулӗ вӗсем пӗрпӗрин патне. Тен, ҫавӑнпа та Ирккана «Энтри, Энтри» тесе йӗкӗлтеҫҫӗ. Ирккиуншӑн ним чухлӗ те кӳренмест, анчах Энтрие ку вара темшӗн тарӑхтарать.

Иркка аллинче – алсатуль пысӑкӑш кушак ҫури.

– Такам кӑларса пӑрахнӑ ӑна. Анне килӗшетех, вӑл пирӗн пулать, – терӗ Иркка, ачасен куҫӗсем пурин те кушак ҫури ҫине ӳкнине курса. Кушак ҫури, чӑнах та хитре ӗнтӗ: кантӑр вӑрри тӗслӗ хӑй, ури лапписем сакӑлталлӑ шурӑ, куҫ шӑрҫисем темле сапаланарах, кишӗр варри пек, чалтӑртатса тӑраҫҫӗ. Сухалӗ вара, хӑй пӗчӗккӗ пулсан та, вӑрӑм. Мӗн тери илемлӗ чӗрчун! Ҫутҫанталӑк ӑна ятарласах ҫынсене савӑнтарма туса янӑ тейӗн. Энтрисен хӑйсен те кушак пур, анчах вӑл ватӑла пуҫланӑ, халь ӑслая персе пурӑнать. Ку, пӑхсах паллӑ, выляма юратаканни. «Тепӗр тесен, пӗчӗк чухне пурин те выляс шухӑш кӑна пуҫра», – шухӑшлать Энтри. Мӗнпе уйрӑлса тӑрать-ха ҫав кушак ҫури пиртен, ачасенчен? Калаҫма ҫеҫ чӗлхи ҫук ун, килӗ-ҫурчӗ ҫук, йӗритавралӑха, тен, пиртен те лайӑх ӑнланать. Ав, епле куҫран пӑхать вӑл.

Кушак çури çапла тӳрех пăхнине Энтри астусах каймасть, йытă куçран пăхнине вара татсах калама пултарать.

Кушак çури алăран алла кайрĕ. Пĕчĕк Фоминран Çитăр Кĕверкийĕ туртса илесшĕн ăна, анчах ун патне каясшăн мар кушак çури: те хăй пек пĕчĕк Фомина килĕштерех парать вăл, те Кĕверкин хытă чун-чĕрине сисет. Элле, чĕрчун аякранах туять усала? Чăнах та, Кĕверкинчен пурте хăраççĕ. Çул кĕскетсе, шкултан пахчасем урлă киле килнĕ чух кӳршĕ автанĕсем унран çур çухрăмранах тараççĕ. Йытăсене хĕнеме юрататъ вăл. Хăйне те леккелесех тăрать ăна, кашни айăпа кĕмессерен ал айне мĕн килнĕ çавăнпа хĕнеççĕ килĕнче. Пĕррехинче çапла, килтисем тыр вырма кайсан, Кĕверкине сысна çитерме каласа хăварнă пулнă. Вăйăпа каçăхса мансах кайнă вăл сыснисем çинчен, лешсем вара, хăлăхсăрскерсем, Тимушкасен улмине çур пахча таран «сухаласа» тухма ĕлкĕрнĕ. Витене хупсах хĕненĕччĕ Кĕверкине ун чухне аслă аппăшĕ, хаяр Санюк. Çавăн хыççăн ĕнтĕ Кĕверки тытăнчăклăн калаçма пуçларĕ. «Мĕнле-ха вăл, — тĕлĕнетчĕ Энтри, — хăвăн ыратнине туян пулсан, пур чĕрĕ чунăн та çавăн пекех ыратассине пĕлмеллеçке». Кĕверки вара хăйне кашни хĕнемессерен хаярлансах пырать. Каснă-лартнă Санюках пулать çав ача теççĕ кӳршĕсем. Энтри шеллетчĕ Кĕверкине, ун хутне сахал мар кĕнĕ вăл, тепĕр чух ăна çăлас тесе суйни те пулнă, хăй те тӳснĕ. Пĕлтĕр, çуркунне-ха вăл, пăр та кайса пĕтменччĕ Пăлара, Кĕверкисен пусма ларман хурĕсем Атăк енне каçса кайнă та тин юртан тасалнă калча çинче тайкаланса утса çӳреççĕ. Юрать-ха пулевăй (хир хуралçи ĕнтĕ ку) чĕлхесĕр Ярахви курса ĕлкĕреймен вĕсене — тытса кайсан, каллех витене хупса хĕнетчĕç юлташне. Энтрипе Кĕверки хăвăрт салтăнчĕç, пăрлă шыв урлă ишсе каçрĕç... Энтри вара ун хыççăн йывăр чирлесе

ӳкрĕ, шыҫӑнса кайрĕ, аран хӑтарса хӑварчĕҫ ӑна шурӑ халатлисем.

— К-ку-кур-ха эс, эс ӑна, епле м-ман па-пата к-кки-килес-есшĕн ммар, ш-шуйт-тан ҫ-ҫу-ҫури, — вӑйпах ҫатӑртаттарса илчĕ кушак ҫурине Кĕверки, — пĕ-пĕчĕк ҫеҫ хӑ-хӑй, ч-чĕ-рмелет та-тата!

— Кĕверки, ан асаплантар ӑна, сан аллунта тӑрасшӑн мар вӑл, пар Иркkана каялла, — терĕ Энтри, кушак ҫӳрине илесшĕн пулса.

— Вӑл халлĕхе никамӑн та мар, мĕн Иркку хутне кĕрсе тӑратӑн эс, — Энтри аллине патаккипе сирчĕ Малля. — Кушак ҫури ҫын мар вĕт вӑл, мĕн шеллемелли пур ӑна. Пĕлтĕр ҫулла пирĕн кушак чӳлмеке кĕрсе ӳксе мĕн чухлĕ сĕте сая ячĕ, — ҫаплах хӑлаҫланчĕ Малля.

— Тавай кушака, эп киле каятӑп. Сана аннене каласа паратӑп-ха, — ҫиллессĕн пӑхрĕ Иркка, Кĕверкипе тетĕшĕ еннелле ҫаврӑнса.

— Эп мĕн? Эп асаплантармастӑп вĕт ӑна. Хĕнесе ярĕҫ ак хӑвна, чуп киле, — те Малляна юрасшӑн, те Энтрие хирĕҫ тӑрасшӑн йӑмӑкне хӑмсарчĕ Вова.

Ушкӑн умне Пĕчĕк Фомин тухса тӑчĕ.

— Мĕн тума сӑмсинчен ҫапатӑн, пĕчĕккĕ вĕт вӑл, сана ним те туман вĕт вӑл. Пирĕн Эскам урине те эсех ҫапса хуҫнӑ виҫĕмкун. Мурккана вĕлерекенни те эсех пулнӑ, Якку курнӑ, — пĕчĕккĕ пулсан та, Кĕверки патнелле хӑюллӑн пĕр утӑм турĕ вӑл.

Пуҫланчĕ вара тавлашу. Ушкӑн виҫĕ пая уйрӑлчĕ: пĕр енче — Малляпа Ҫитӑр Кĕверки майлисем, тепĕр енче — Энтри, Пĕчĕк Фомин тата кушак ҫури, виҫҫĕмĕш пайĕ — унталла та, кунталла та ҫаптаракансем. «Кантӑр мĕлкисем» тет ун пеккисене Энтри. Ҫил ӑҫтан вĕрет, ҫавӑнталла сулӑнаҫҫĕ вĕсем. Сӑмах май каласан, Энтри каланӑ сӑмах ҫын ҫумне сухӑр пек ҫыпҫӑнса

ларать, ун чĕлхинчен пĕтĕм шкул хăраса тăрать. «Чĕлхӳ йĕркесĕр ҫивĕч пулмасан, круглăй отличник пулмалла сан, Васильев Андрей. Ай-яй йывăр килет сана пурнăҫра ҫавăн пек поведенипе, – тет ăна Клавчи Алексеевна – Энтрисен класс руководителĕ. Чăнах та ҫав, Энтри калас сăмаха тӳрех калать. Вĕренекенĕн сăн-питне, тум-тирне, ашшĕ-амăшĕсене пăхса ун пĕлĕвне хакланишĕн Клавчи Алексеевнăна та вăл юратсах каймасть... Иркка – ун юратнă вĕренекенĕ. Ухмах мар Иркка, ҫапах та Энтри темшĕн килĕштерсех пĕтермест ăна. Ҫитĕнсе ҫитсен, класс руководителĕ пек пулассăн туйăнать вăл ăна. «Тĕрĕслĕхрен ан пăрăн, ҫынна ан парăн», – вĕрентет Энтрие аслашшĕ. Ҫук, аслашшĕ сăмахне итлесе-астуса та мар, таҫта шалта, чун-чĕре тĕпĕнче, парăнмалăхăн ирĕк кайăкĕ ларать пек Энтрире. Халĕ те ҫав кайăк вĕҫсе тухас пек. Хӳтлевсĕр чуна сан умăнтах кӳрентерни ҫав кайăка асаплантарни мар-и вара вăл?

Кам пуҫне малтан пырса кĕчĕ ҫав тискер шухăш? – Энтри ăна астумасть. Анчах Кĕверки кушак ҫурине йăтса вак патне утнине курчĕ те чунĕ сӳлетсе кайрĕ.

– Эс мĕн хăтланатăн, чунилли? Хăв мĕн тунине ăнланатăн-и эс?! – кăшкăрчĕ Энтри, Кĕверкине хăваласа ҫитсе.

– Эс хăв вăйлипе мухтанасшăн-и? Кĕверкине пĕрре кăна ҫап, вара лайăх патак ҫитеретĕп сана, – сиксе те пычĕ Энтри патне Малля. Ура хучĕ те ялтах ывтăнтарса ячĕ ăна. – Кушак ҫури сан мар, апла, сан ĕҫӳ те ҫук унта, – терĕ вăл ҫĕнтерӳҫĕ пек мăнкăмăллăн.

Ыратни-мĕнне туймарĕ Энтри, сиксе тăчĕ те Кĕверки еннелле ыткăнчĕ. Малтан кушак ҫурине тăпăлтарса илмелле. Малляна пурпĕрех ҫапăҫса ҫĕнтерейĕмĕн.

– Ан ҫапăҫăр кушак ҫуришĕн, чарăнăр, – Кĕверкипе Энтри хушшине кĕрсе тăчĕ Пăҫăкка Коли. Паллах,

малтан Энтрие аллинчен тытрĕ: ара, вăл-çке-ха Кĕверки çине кĕрекенни!

Епле сыхă пулаймарĕ-ха Энтри? Тахăш вăхăтра Малля хыçалтан ярса илчĕ те ăна пăр çине ÿкерсе пусса та выртрĕ. Акă вак та пĕр хăлаçра çех. Кĕверки кушак çурине унта печĕ, лешĕ ирĕке тухасшăн кармашать, пĕчĕк тяпписемпе пăра чĕрмелет, анчах Кĕверки ăна пăр айне ярасшăн патаккипе кашнинчех тĕртсе антарса ярать.

Ыттисем ăçта? Килĕсене тарса пĕтрĕç-шим пурте? Е камит курма килнĕ пек, мĕнпе вĕçленет-ха ку япала тесе пăхса тăраççĕ? Çук, пурте кунтах, пурте кушак çури асапланнине пăхса тăраççĕ. Иркка кăна, вĕлерен вĕт Энтрие, ухмах тесе, йĕре-йĕре Малляна уринчен сĕтĕрет.

— Мĕнле çынсем эсир? Мĕн туса тăратăр? Кушак çурине путарса вĕлерет вĕт, чарăр çав чуниллине. Е эсир пурте чунсăр-и, чунсăр-им эсир пурте? Пăçăкка, тăмсай, мĕн туса тăран? Путарма ан пар. Пăçăкка, эп сана уншăн паянах асаттен кортикне парăп, — йăлăнса ĕç тухманнине туйса, чееленме шутларĕ Энтри.

— Мана паратăн-и? Вара çăлатăп кушак çурине. Тулькке, чеснăй слово те. Паратăн-и?

Малля сăмахне каласа пĕтеричченех васкасах икĕ хутчен: «Паратăп, паратăп», — терĕ Энтри. Вара иккĕш те сиксе тăчĕç те Кĕверки патне ыткăнчĕç. Малля маларах чупса çитрĕ вак патне. Пĕррех кĕрĕслеттерчĕ вăл Кĕверкине янахĕнчен. Лешĕ тайăлса кайрĕ, пăр çине лаплатса ÿкрĕ. Ăçта кушак çури? Энтри йăлтах ăнланса илчĕ. Вара, чĕркуç çине кукленчĕ те юхăм май упаленчĕ. Акă пăр айĕпе пĕчĕк мĕлке юхса пырать. Кушак çури урисене хускаткалать-ха. Шыва хирĕç ишме тăрăшать хăй, апла тăнне çухатса ĕлкĕреймен. Темĕн татăлса анчĕ Энтри чун-чĕринче. Ăшчикре çеç мар, йĕритавралăхра та пушăлăх

пуçланчĕ. Ниçта та тĕрев тупаймарĕ вăл çав пушăлăхра, пăр çине тĕшĕрĕлсе анчĕ те ĕсĕклесе йĕрсе ячĕ.

Нумайччен выртрĕ вăл çапла сив пăра ыталаса. Пăр та вĕри пек туйăнчĕ ăна.

– Шăнса пăсăлатăн, тăр, Энтри, – лăплантарчĕ ăна Пăçăкка Коли.

– Энтри, ан йĕр, халь тин нимĕнле те çăлаймăн ăна. Энтри, Энтри, – хулпуççинчен лăпкарĕ ăна Иркка.

Анчах Энтри хăлхине кĕмерĕç вĕсен сăмахĕсем. «Мĕншĕн, мĕншĕн?» – вĕçĕмсĕр ыйтрĕ вăл çав пушăлăхран. Мĕншĕн чи айăпсăр чунсен маларах вилмелле-ха çĕр çинче? Кама мĕн айăп тунă пурăнса та ĕлкĕреймен кушак çури? «Çын хушшинче чунсăрсем пайтах, анчах çутçанталăкăн пысăк чунĕ пур, çав çăлса пурăнать этемлĕхе», – тет асатте. Тĕрĕс-ши ку? Апла пулсан, мĕншĕн çăтса ячĕ-ха вăл çав хӳтлевсĕрскерне. Çук, çук! Кунта çутçанталăкăн айăпĕ çук, асатте тĕрĕс калать. Çитăр Кĕверкисем, Маллясем курмаççĕ çутçанталăкăн пысăк чунне, мĕншĕн тесен вĕсем чунсăр-çке. Ӳссе çитĕнсен, ашшĕ пек çӳллĕ те вăйлă пулсан, пĕр чĕрчуна та кӳрентерме памĕччĕ Энтри. Е яланах, пурнăç тăршшĕпех, унран вăйлисем – Çитăр Кĕверкисемпе Маллясем тупăнса пырĕç-ши? Паллах, Кĕверкине пĕччен чухне вĕтсе илет-ха вăл çак тискер ĕçшĕн. Анчах çăвар карса пăхса тăракансене мĕн тумалла? Вĕсем нумайăн-çке çĕр çинче! Юрать. Пăçăкка Колине арифметикăпа çырса илме памĕ вăл текех, Сетияновĕпе те туслă пулмĕ, Вова хутне те кĕмĕ, – ан тив, Нямакка ун çĕлĕкне çын картишне ывăтса ятăр. Е каçарĕ-ши Энтри вĕсене? Тупа сăмахне тытаймасан, каллех, кушак çури мар пулсан та, ун вырăнне урăх чун тупăнĕ, Кĕверки ăна каллех пăр айне ярса вĕлерĕ, Пăçăкка Колисем пăхса тăрĕç...

Энтри майĕпен ура çине тăчĕ, шакканчĕ. Никам

çине те пăхмарĕ вăл, ачасем калаçнине те илтмĕш пулчĕ. Мĕн усси халĕ тин Кĕверкине кашни пыра-пыра çупса янинчен! Салтак пек çирĕп утса хăпарчĕ вăл çырмаран — мĕскĕннĕн курăнса, мĕскĕнсене савăнтарас мар.

— Энтри, — терĕ ун хыççăн аран ĕлкĕрсе пыракан Иркка. — Энтри, эс вĕсемпе питех ан выля. Ан тарăх текех, ан кулян, эпĕ сана урăх кушак çури тупса паратăп. Килсĕр кушак çури сахал мар халь ялта.

Нимĕн те чĕнмерĕ Энтри Ирккана хирĕç, куçĕсем çеç унчченхинчен те салхуллă пулса кайрĕç. Вара хăвăрттăн çаврăнчĕ те урам тепĕр енĕпе васкаса утрĕ. Иркка ним ăнланмасăр пĕр вырăнта шанк хытса тăрса юлчĕ.

Энтри килне çитсе пынă чух калинккерен аслашшĕпе Пĕчĕк Фомин тухатчĕç. Пăлари вăйă мĕнпе вĕçленнине ача уттинченех ăнланчĕç вĕсем, пулăшу çитсе ĕлкĕреймерĕ апла.

— Юлташу маттур. Пĕчĕккĕ пулсан та, Фомин ыттисенчен пысăкрах. Леш каяннăйсене çунтарса илетĕп-ха çак кăпчанкă патакпала. Çапла, ачамсем, пурнăç вăл çĕрпе пĕлĕт хушшинче иртсе пырать, — те мăнукне йăпатса, те тўссе курнине тĕвĕлесе шухăшлăн аларĕ аслашшĕ.

Картишне пусă тараси тăрринче ларакан чакак вĕлкĕшсе анчĕ. Сывлăша касса пыракан пĕсехи шурă унăн, çунаттисем хура.

Хĕл кунĕнче тĕнче чăнахах та аслăланнă, анчах мĕншĕн тўпе аяларах аннă пек?

*1987ç.*

# ТУПМАЛЛИ

Поэт хӑй ҫинчен ........ 5

***1954-1960 ҫҫ.***

Пурнӑҫ чаплӑ иккен ........ 17
Лупасай ҫумне хальхаҫҫӑн ........ 18
Хӗвеланӑҫ хапхи хӗрлӗпе хӗрелсен ........ 19
Аслӑ ҫӗрӗн тӑван илемне сӗртӗнсе ........ 20
Калӑн, канӑҫсӑр стихия ........ 21
Хуран ҫийӗ — вӑрӑ каҫӗ ........ 22
Чӗнтӗрленӗ ҫӗн кӗпер ........ 23
Шар ҫутӑ сӳнчӗ. Хӗвӗшсе ........ 24
Хӑҫан та пулсассӑн ........ 24
Пуҫҫаптармӑш пур иккен сирте те ........ 25
Ҫутаяк пулли пек ........ 25
Ман пекех, атте, эс хӑш чухне ........ 26
Ҫамрӑк хурӑна ҫил тайса вӗрет ........ 28
Тухӑҫран пуҫласа анӑҫа ҫитиччен ........ 29
Ӗлӗкхи сӑмахӑн чӑнӗ пур ........ 29
Асаттен аслашшӗ тунӑ ........ 30
Сивӗ-ҫке. Хыткан кӗрт тӑрӑх ........ 30
Хӗвел ансан ........ 31
Ҫӑлтӑр куҫлӑ чечексем ........ 32
Ҫумӑр хыҫҫӑн ........ 33
Тепӗр чух ман пурнӑҫ темшӗн ........ 34
Хӗрлӗ астра ........ 35
Хӗвел, йӑмӑхтарса куҫа ........ 35
Мӗскер вӑл юрату? Ун ячӗпе ........ 36
Пуҫ янӑ кукаҫин ҫырӑвӗ ........ 37
Наполеон ........ 39
Ҫил-тӑман хускатнӑ шухӑш ........ 41
Ак каллех хӗл ҫитрӗ ҫаврӑнса ........ 43
Утрӑм эпӗ ютесе ........ 44
Ҫак салхуллӑ сехетре ........ 45
Пӗчченех пӳлӗмре. Сарлака кӑмака ........ 47
Эп парӑмлӑ ҫак вӑхӑт умӗнче ........ 48
Ҫуралнӑ ял — сӑваплӑ ҫӗр кӗтесӗ ........ 49
Мӗскершӗн, кӳршӗ пахчинчи шур хурӑн ........ 50
Ҫӗнӗ ҫӗрте ҫӗн ҫын. Мӗнех ........ 51
Вӗсем те ҫуркуннесӗр ҫурӑлмаҫҫӗ ........ 52
Пурнӑҫа поэт пулса ........ 53

Мĕскер çырам, хаваслăх уйĕ ........................ 54
Ах, ăçта-ши çухалчĕ çав ырă самант? ........................ 55
Борзяра пулнă юлташăмсене ........................ 56
Çырури сăмахсем ........................ 58
Пĕрремĕш лĕпĕш ........................ 59
Ирхине ........................ 60
Хырай вăрманĕ ........................ 61
Кĕрхи илем ........................ 63
Тем кĕтетпĕр, тем туса çӳретпĕр ........................ 64
Аттене ........................ 65
Аннем пилĕ çитĕ ........................ 66
Черкес çĕрĕнче ........................ 68
Шупашкара килни ........................ 71
Çĕршывăма ........................ 72

***1961-1977 çç.***

«Чипер арăм» касси ........................ 74
Самани те кăмăл та аван ........................ 75
Шупашкар çăкисем ........................ 76
Кĕр пасарĕ ........................ 76
Çил асать, вĕçет вĕт çулçă ........................ 77
Ах, гитара, çичĕ чĕлĕх эсĕ ........................ 78
Хĕвеллĕ çил ........................ 79
Çерем çинче ........................ 80
Хуратнă кĕмĕл ........................ 81
Кĕрхи уçланкăра ........................ 82
Ах, ыйхă вĕçрĕ ман. Çутăласса кĕтсе ........................ 83
Çырмастăн та... ........................ 83
Кăвак чечекĕм ........................ 84
Çулсем çаврăнса тухчăр сан патна ........................ 85
Пĕр хуçăлать, пĕр сыпăнать çунатăм ........................ 86
Хум пĕччен тухмасть, пĕлетĕн ........................ 86
«Кăмăлтан» кĕнеке упранать кăмăлра ........................ 87
Çамрăклăх, ытла ан ашкăн ........................ 88
Шутланăччĕ: сĕткенсĕр йывăç типĕ ........................ 89
Чунăма, ах, кичем-çке ытла та ........................ 89
Тап-такăр çул çинчех хура та тарăн ........................ 90
Сăвă çырăнман чух ........................ 91
Çулçă айăн пĕрлĕхен ........................ 92
Ирхи ўкерчĕк ........................ 94
Кĕрхи туй ........................ 95
Савни, эп таврăнтăм киле ........................ 97

Çыран çине сике-сике ........ 98
Тăван кĕтес ........ 99
Сарă кайăк тĕкĕ... ........ 101
Асамат кĕперĕ ........ 102
Май уйăхĕ ........ 106
Вунтăваттă çапсан ........ 107
Чечекĕмсем ........ 108
Тăван яла килнĕ чух ........ 110
Аслă Арапуç пасарĕнче ........ 117
Сăртсем ........ 120
Хĕрлĕ мăкăньсем, хĕрлĕ мăкăньсем ........ 120
Тĕрĕс мара чунпа тÿссе ........ 121
Кĕрхи шухăш ........ 123
Тăмха ........ 125
Юратăва çарпуçĕ пăхăнать ........ 126
Сар çăка хăйех ÿкерчĕк ........ 127
Кĕрхи илем – хавхалану саманчĕ ........ 128
Çĕнĕ кун ........ 129
Асăма ан килтĕр терĕм ........ 130
Вешникрен шыв кайнă евĕр ........ 131
Кĕркунне! Пĕр пĕтĕм ........ 132
Ăнман кунсем ман çулсене ........ 133
Пульницăра ........ 134
Эс кайрăн та палата пуш-пушах ........ 135
Валакра – хĕвеллĕ тĕрĕ ........ 136
Мĕскер çинчен юрлатăн эс, пике? ........ 137
Элеги пек салху эс яланах ........ 138
Вăл вăхăтра – мĕн калăн? – çамрăк пулнă ........ 139
Салам, Мускав çынни ........ 140

***1978-1987 çç.***

Этемлĕхĕн пуçламăшĕ – танмарлăх ........ 144
Кĕвĕçсе тăрсан та, эсĕ ........ 145
Те мансах пыратăн эс те ........ 146
Паян телейлĕ эсĕ çав тĕрлех ........ 147
Тĕттĕм каç хăрушă ........ 148
Тек кураймăп. Ăсатрăм сана ал тытса ........ 149
Эй, ăсчахсем ........ 150
Пĕрремĕш юр каçĕ ........ 154
Çаврăнать пĕрремĕш юр тăманĕ ........ 155
Ĕçлейместĕп. Тунсăх муритлерĕ ........ 156
Сăрт çинче ........ 157

Çăва тухни .................................................... 158
Каçалăк ........................................................ 160
Юман вутти ..................................................... 162
Çула хĕл лайăх, тетĕп ........................................ 163
Каçар, каçар. Çавна эп пĕлеймерĕм .......................... 164
Çу вĕçленчĕ, кĕркунне пуçланчĕ .............................. 165
Çăтмах çинчи пек шухăшсăр ачалăх ......................... 167
Ĕçченлĕх, тирпейлĕх, сăпайлăх ................................ 168
Çулçӳренсем .................................................... 170
Чӳрече çинчи хĕл эрешĕсем ................................... 172
Çулçӳрекен хăрать-и сĕм-çĕрле? .............................. 173
Каллех эп сан ытамунта ....................................... 174
Çĕр — чăнлăх калăпĕ те, ун виçи те ......................... 175
Сăвă йĕркинчи паллăсем ...................................... 176
Утă çинче ........................................................ 178
Шухăшсем — вĕри-вĕри хумсем ............................... 180
Кунсем те каççем шутласа ..................................... 182
Вокзалта .......................................................... 184
Мала утмашкăн малаллах пăхатăн ............................ 185
Поэт вăл чечек пек — нихçан ватăлмасть .................. 186
Çапла, хисепрен кăларсассăн, манаççĕ ...................... 187
Чĕркем çинче текех лармасть саркайăк ..................... 189
Гете: Мариенбад элегийĕ ...................................... 193
Лаптăк та лаптăк ӳсетчĕ улма ................................. 196
Арпашать çут тĕнче: умăмра те тăшман ..................... 197
Хура вăрман çинче ............................................. 198
Тен, шухăшран эс чăмăртаннă пулĕ .......................... 199
Санрав та суккăр-мĕн усал шăпа ............................ 199
Аннеçĕм пилĕ умĕнче шăпах .................................. 200
Катăркаса силлет те çурçĕр çилĕ ............................. 200
Хăв шăпуна хăвах аван пĕлетĕн .............................. 201
Хула урамĕнчи вĕрене ......................................... 201
Мана эс «авăнми тĕрек» сунатăн ............................ 202
Хисеп вăл лаша мар тытса тухма ............................. 202
Çĕршер çулхи аваллăха ........................................ 203
Çеçке те çыр курăкĕ пултăр ................................... 204
Çук, вăхăт мар-мĕн — улшăнать тĕнче ..................... 204
Инкек çукки хăех телей тееççĕ ............................... 205
Шайлаштару йĕрки, тĕнчем, пур сан ......................... 205
Хура каçра çуралнă çăлтăрсем ................................ 206
Юлашкинчен вилмеллипех амантăм ........................... 206

Шаккурӑн шап-шур урхамахӗ, тен, иртрӗ ................ 207
Пӗчӗкҫеҫ пахча илемӗ ................ 208
Ахрат ҫырми ................ 209
Ӳсес пулсан ӳсентӑран ................ 210
Хӗрлӗ пилеш лартрӑм пӳрт умне ................ 211
Ах, август уйӑхӗ ................ 212
Кӗвӗҫсе мар калатӑп ................ 213
Асилӳсем ................ 214
Тинех улӑштараймӑн пурнӑҫа ................ 215
Кукаҫи юррисем ................ 216
Кӳтнӗ чуна ҫутатса ӑшӑтасшӑн ................ 223
Пӗр иртнӗ вӑхӑт ҫаврӑнаймӗ урӑх ................ 225
Ҫӗршывӑм! Курайӑп-ши сана эп урӑхран?.. ................ 226
Хасан Туфана ................ 227
Санран ман каҫару ыйтмашкӑн ................ 228
Шур чечек — савнӑҫа, сар чечек — ултава ................ 229
Ура айне ӳксе чӑлханчӗ каҫӗ ................ 229
Хальччен тӑрӑшни, ҫунтарни чӗрене ................ 230
Вӑйӑ уҫланкинче ................ 232
Поэзире мӗскер тупса эп калӑп ................ 233
Левитан ӳкерчӗкне ................ 234
Хӗлле... Вӗлтӗртетсе анаҫҫӗ ................ 235
Ялан ҫапла: питех те кӗтнӗ чух ................ 236
Утмӑл ҫулта утамана тухар-и... ................ 236
Ман пуҫ тӑрринче аслати авӑнса авӑтсассӑн ................ 238
Салам, Арапуҫ! ................ 240
Астӑвӑм ................ 241
Мана Митта тӑванӗ теҫҫӗ ................ 243
Уйӑп чунӗ ................ 244
Халӑхӑм манӑн, тен, тӗрӗс калану ................ 246
Шӑпамҫӑм чӑркӑш поэтпа пӗрех ................ 247
Хӑрушӑ тӗлӗке татса вӑраннӑн ................ 248
Татӑк ҫӑкӑр ................ 249
Кӑсӑя. *Поэма* ................ 251
Кӑмӑл-турам ................ 266
Вӗҫленмен поэма ................ 268
Эй мӗн чухлӗ чечек ҫӗр ҫинче ................ 275
Кӑвайт умӗнче ................ 276
Вӗри пӑр (*Трагеди*) ................ 280

**Николай ИСМУКОВ**

**СОБРАНИЕ СОЧИНЕНИЙ**

**ÇЫРНИСЕН ПУХХИ**

*Пĕрремĕш том*

Редактор *В. Кервен*
Художественный редактор *А. Кокель*
Компьютерная верстка *Л. Богатеева*

Подписано в печать 30.10.2013. Бумага офсетная.
Формат 84x108 $^1/_{32}$. Гарнитура «Таймс». Печать офсетная.
Усл.-печ. л. 15,54. Тираж 500 экз. Зак. № К-463. Цена свободная.

250: [illegible]